35298

А. С. ОТАЧКИН

ТĂВАН ЧĔЛХЕПЕ ВУЛАМАЛИ КĔНЕКЕ

ХУТ САХАЛ ПĔЛЕКЕНСЕН ШКУЛĔСЕМ ВАҪҪИ

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР ♦ 1935

А. ОТАЧКИН

ТĂВАН ЧĔЛХЕПЕ ВУЛАМАЛИ КĔНЕКЕ

ХУТ САХАЛ ПĔЛЕКЕНСЕН ШКУЛĔСЕМ ВАЉЉИ

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

ЧАССР Халăх çутĕç комиссариачĕ хут сахал пĕлекенсен шкулĕнче усă курма йышăннă

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1935

Ĕлĕк.

Сухапуçне кӳлсе йарса,
Хресчен тухнă сухана.
Хыткан лаши, пуçне усса,
Уткаланă чух кăна.
Тырри пулсан, çурла тытса
Хресчен тухнă уй-хире

Йара куна тар йухтарса,
Авнă, хуçнă пилĕке.
Кĕрхи кунта тăпачсемпе
Çапнă пур-çук тыррине.
Кашни çулах хăй çемйипе
Выçă ларнă çуркунне.

Хаљ.

Сухапуç тĕсне кураймăн,
Плугпа трактăр хаљ ĕçлет.
Йăран шырăн та тупаймăн—
Анасем пурте пĕрле.

Машинпа тырра выратпăр,
Çапасса та машинпа.
Пĕрлешӳлĕ хаљ пурнатпăр—
Ертелпе, коллективпа.

Ĕçлесен хаљ пурнăç тутă,
Мен ĕçлен, çавна илен.
Пурнăç лайăх, пурнăç çутă,—
Ĕçлемешкĕн ан ӳркен.

Уделни хресченĕсем.

Çинçе иртсен ернерен Уххиме карчăк ирпе кĕтӳ хăваласан, тепĕр хут выртса канас тесе, кара тăран шăналăк айне кĕрсе çеç выртнăччĕ.

— Карчăк, ăçта çав есĕ. Аҭа ирхи сулхăнпа ыраш пуссинеле çаврăнса ыраш курса килер!—терĕ Муљан кĕлетрен.

Шап-шур тăхăннă карчăкпа старик иккĕш те хӳме пек ыраш хушшинче савăнса ляппăн шăкăлтатса пыраççĕ.

— Кăçал çул ăнса килчĕ. Пăх-ха, карчăк, пуçахне: пĕр шит ытла тăршшĕ, пĕрчисем те сарă тулă пĕрчи пек.

— Куратăн-и уделни ырашне, пуçне йăтса лараймасҭ?—терĕ Муљан, уделни ырашĕ çинеле кăтартса.

— Вăл лайăх пулмасăр, йалăн мĕн пур тислĕкне çулсерен çавă çăтса тăраҭ те. Ĕçне те йепле ĕçлен, унăн тăпри кăпăк пек пулаҭ.

— Çапла çав, хамăрăн çук çĕре ĕçлеме те алă çитерейместпĕр.

Çапла вĕсем хир курса, пиçиххи çумне виç-тăват пучах хĕстерсе килеле сулăнчĕç.

— Атте, есĕ илтни? Уделни ырашне малтан выртарас сасă пур,—терĕ Йуман апат çисе ларнă чухне.

— Пулĕ, ачам, пулĕ! Халăх çăварне килни пулакан вăл,—терĕ амăшĕ.

Çавăнтан вара виç-тăват кунтан, приказран килсе, уделни ырашне вырса, çапса, кĕлетех тирпейлесе хума хушса хăварчĕç. Ирĕксĕрех уделни тыррине малтан ĕçлемеле пулчĕ. Ăна ĕçлесе ерне те иртрĕ. Хăйсен тырри шăтăртатма та пуçларĕ. Чăвашсем, тырра ана çине хăварас марччĕ тесе, кунне-çĕрне пĕлмесĕр хирте выртса выраççĕ. Ырашĕ те вырса пĕтмен, çуртырри те пулса çитрĕ.

Иленкунĕ ыран тенĕ чухне старăстă патне: Иленкунĕ хире кайма йурамаст, уйав тумала,—тесе хушу килчĕ. Халăх кăна илтсен харăс кăшкăрса пăрахрĕ:

— Вĕсен уйавне тунипе пирĕн хырăм тăранат-им?..

— Вĕсене, пысăк хырăмсене, хушса пултăр!

— Ав, пуп уйав тутăр, унăн ĕçĕ те çав кăна...

Иленкунне те пăхмарĕç, пурте вырма кайрĕç.

Кăнтăрла çитеспе тăвату йуланут хиреле хăпарчĕç. Йуманпа ашшĕ çул хĕрринчех выраççĕ. Çитнĕ-çитмен уретникĕ сиксе анчĕ те, Муљана нухайкипе йунаса пырат.

— Ах, анчăк! Есĕ старăстă пуçупа çапла уйав тăватăн-и? тет. Муљана çапас тесе нухайкине çĕклерĕ.

— Ан тив аттене. Вăл сана нимĕн те туман!—тесе нухайкинчен йарса тытрĕ Йуман. Унччен те пулмарĕ, тепĕр картусĕ кустарса та çитрĕ. Йумана алхурсинчен нухайкапа кастарса та илчĕ. Йуман аллинчен нухайкине пăрахса, çамрăк шĕшкĕ пек авăнса анчĕ.

Хирти пĕтĕм халăха нухайкапа хĕртсе, лашапа таптатса, çурлисене пуха-пуха кайрĕç.

— Çурлăрсемшĕн çурла пуçне 25-шер пус куланайпа пĕрле пухса паратăр!—терĕ тепĕр кунне тийек, çурласене питĕрсе илнĕ кĕлет уççине старăстă çине ывăтса.

Халăх ăшчикки кĕрхи çил мăрйере хайаррăн уланă пек улат, анчах вăл çийеле кăлармаст, шăлне çыртат те тÿсет.

— Ыран уделни сĕллине выратăр, вырса пĕтерсен çапса тирпейлесех хуратăр!—терĕ тийек, урса кайнă куçне-пуçне выљатса.

Тийек кайсан халăх чылайччен шавларĕ, кĕрлерĕ. Хăйĕн çирĕп, тĕреклĕ чăмăрĕпе тийек кайнă çул йенеле йунаса кĕрлерĕ.

Тепĕр кун ирех пĕтĕм йал уделни сĕллине вырма кайрĕ. Ăна вырса, çапса кĕлете хуриччен ерне иртрĕ, хăйсен ырашĕн вăйлă хăмăлĕ çеç йулчĕ.

Уделни çĕрне мĕнле майпа ĕçлеттерсе тăнă?
Тĕн сĕрĕмĕ пирки ĕçхалăх мĕнле мăшкăл тӳснĕ?

Удел хресченсен йурри.

Ăна Самар кĕпернинчи удел чăвашĕсем йурланă.

1. Уделнийĕн, уделнийĕн кантурне
Хĕрлĕ сăрпа, хĕрлĕ сăрпа сăрланă,
Хĕрлĕ сăр мар, ай мĕн те мар,
Хура халăх йунĕ вăл.

2. Удел тырри, удел тырри вырнă чух,
Вĕт-вĕт çăмăр, вĕт-вĕт çăмăр çăвать-çке.
Вĕт çăмăр мар, ай мĕн те мар,
Хура халăх куççуль вăл.

3. Уделнийĕн, уделнийĕн патукне [1]
Маттур утсем, маттур утсем туртаймĕç;
Маттур, маттур çамрăк çынсем
Уделнирен тухаймĕç.

4. Удел тырри, удел тырри çапнă чух,
Вăш-вăш çилсем, вăш-вăш çилсем вĕреççĕ.
Вăш-вăш çил мар, ай мĕн те мар,
Хура халăх сывлăшĕ вăл.

---

1. Кунта хресченсем кам пусмăрне тӳссе пурăннине кăтартнă? Хăш вăхăтри пусмăра кăтартнă?

2. Хресчен пурнăçĕ йăвăр пулни мĕнтен куранать?

3. Йурăра „хура халăх“ тесе кама каланă?

---

[1] Патукне тени „батог“ сăмахран. Патша чухне 15—17-мĕш ĕмĕрсенче Раççейре пысăк вăрăм хулăпă (туйапа) хĕненĕ. Ку йурăпа уделнийĕн асапĕ вĕçĕхĕрисĕррине кăтартнă.

Куланайшӑн.

Ç. В. Елкер.

Çемен Ваççилйевич Елкер паллӑ писатӗлсемпе сӑвӑçсенчен пӗри. Вӑл Йӗпреç районӗнчи Мӑн Упакасси йалӗнче 1894-мӗш çулта çуралнӑ. Пурнӑçра хура-шур нумай тӳссе курнӑ. Вӑл вӑрçӑра та пулнӑ, унтан хӑрах урине амантса тавӑраннӑ. Елкер çырнӑ чи паллӑ произведени „Хӗн-хур айӗнче“ йатлӑ. Елкер кунта ӗлӗкхи пурнӑçра чухӑнсем мӗнле хурлӑх курса пурӑнни çинчен çыраҫ. Çак „Куланайшӑн“ йатлӑ сыпӑка „Хӗн-хур айӗнче“ йатлӑ произведенирен илнӗ.

Пӗрре, çакнашкал, сивӗ кун, хӗлле,
Кӗçӗн Кушлавӑш йалӗ патнеле
Кантур тавражӗ çитет ыткӑнса,
Хурал пӳрт умне пухаҫ халӑха.
Сив куçлӑ бурмис суллаҫ алӑпа,
Пуçлаҫ сӑмахне хулӑм сасӑпа:
— Епӗр çитрӗмӗр, пӗлӗр хӑвӑрах,
Часрах куланай!.. Куланай тавай!
Пӗрре анчах мар, кашни уйӑхрах
Сире кун çинчен калатпӑр нумай.
Саккун хушнине парса татмасан,
Питех те йӑвӑр сире пайантан!
Кам пайан памасҫ—текех каçармасп.
Мӑн парӑмлисене чӗррӗн хӑвармасп.
Бурмис сӑмахӗ халӑх хӑлхине
Вут-хӗм пек вӗрин кӗрет пӗçертсе.
Шикленнӗ хресчен хыçаҫ ӗнсине,
Унӑн пит-куçӗ çунаҫ ӗнӗхсе.
Тийек пикенет йат тӑрӑх чӗнме,

Бурмис пурне те хăтăрса хĕсме.
Хăравçă мужик, йачĕ тухсанах,
Сикет—йăлт! тухат̆ сĕтел патнеле,
Тӳлет парăмне укçи пулсанах,
Тăрат̆ пашкаса хăранипеле.
Тĕрĕслерĕç йат—камăн пур пачĕç.
Кам-кам параймаст̆—тытса хăварчĕç.
Бурмис ак пухха тула кăларат̆,
Тыткăнрисене çаптарма хушат̆.
Ак çамрăк пуçа вырттарчĕç чăсса,
Тумне вашт! хывса пăрахрĕç çумма,
Пилеш хуллисем суйласа тытса
Пуçларĕç ăна вăйпа кастарма.
Ак, çапнă çĕртен шĕв йун пĕрĕхсе
Шур йур çинеле кайат̆ пĕрĕхсе.
Ахлатнă сасă çурат̆ чĕрене.
Ку сас—хайар сас сарлат̆ йал çине...
Ни хурлăхлă сас, ни куççуль, ни йун,
Нимскер хускатмаст̆ шыçмак пуççене.
Упа пек урса, çапла, кĕтмен кун
Йунларĕç пайан пĕчĕк йал питне.

Куланай пуçтарни.

(„Ман пурнăçăн кунĕсем“ çинчен çырнă повĕçĕн сыпăкĕ).

И. Волънăв.

(Хресчен ачи Лаврентйĕв каласа кăтартни).

I.

Йал тăрăх пуçлăхсем куланай пуçтарса çӳренĕ. Вĕсем килĕрен киле кĕрсе намăс сăмахсем каласа вăрçнă. Айакку пĕрчисене сăвăп! Чунна илĕп! Шăлна çĕмĕрĕп! тесе йанăраса вăрçнă. Вĕсем хыçĕнчен медаљ çакнă старшинипе старăсти, пунетейсем çӳренĕ. Унтан хулари мешченсем хăйсен сарлака çунисем çинче пынă.

Кĕлетсенчен пир-авăр, тумтир, сăмавар, сбруй таврашĕ урама илсе тухса тӳрех йур çине пăрахнă. Пĕр виттернĕ тăлăплă хĕрлĕ мешчен çавăнтах çав йапаласене сутăн илнĕ. Снавуйĕ ăна Ваççил Ваççилч тет, хаклă йышши пируссем турттарат. Снавуйĕ хакне хурат. Старшини хресченсене кутăн тăрса килĕшсе пырат. Старăсти нимĕн те чĕнмест. Пунетейсем йăвăррăн сывла-сывла йараççĕ. Ваççил Ваççилч тени илес тенĕ йапалана урипе тĕртсе, хăйĕн тытăннă сассипе: Илетĕп! тет. Тарçисем илнĕ йапалисене çуна çинеле сĕтĕреççĕ. Мешченĕ хĕвĕнчен çур аршăн тăршшĕ сăранланса ларнă укçа хутаççине туртса кăларат те шăннипе хĕрелсе кайнă аллисемпе вак укçа суса парат. Хĕрарăмсем уласа йĕреççĕ. Арçынсем чĕркуççи таран йурне пăхмасăр полицейскисем умне лап та лап ӳксе пуççапаççĕ. Снавуйĕ хăй умĕнче пуççапса выртакан хресчене çурăмĕнчен хĕç вĕçĕпе тĕртсе хăй патĕнчен сирет.

Тупра хыççăн выљăх-чĕрлĕхсем кăларма пуçларĕç. Чăх-чĕпсемпе сысна çурисене сарлака михĕсене чикеççĕ. Сурăхĕсен урисене çыха-çыха тӳрех çыха-çыха пăрахаççĕ. Ĕнисемпе пăрăвĕсене йе турта çумне, йе çуна хыçне кăкараççĕ. Чăххисем кăтăклаççĕ, сысна çурисем, ачи-пăчи, хĕрĕ-хĕрарăмĕ пурте çуйăхаççĕ.

Пирĕн пата та çитрĕç. Пирĕн сутмали нимĕн те çук.

— Пит чухăн пурăнат вĕт, вашĕ благороди. Нимĕн те çук, йачĕ кăна хресчен,—терĕ старăстă çĕлĕкне илсе.

Пунетейсем атте çине пăхаççĕ. Атте кăн-кăвак кăвакарса кайнă.

— Ан хăра, Лавруç. Чĕркуççи çине лар та вĕлерсен те пĕр пус укçам çук тесе йăлăн. Выçлăхпа йăлт сутса çисе йатăмăр те. Ав кĕрĕкӳ те йепле, ала пек,—терĕ пĕр пунетейĕ аттене вăрттăн.

Урамран пăлтăра кĕнĕ чухне снавуйĕ пуçне алăк йанахне çапрĕ те çăлтăрлă çĕлĕкне илсе лайăх кăна вăрçса илчĕ. Полицейскисем уçнă пӳрт алăкĕнчен ăшă персе тухрĕ. Снавуйĕ сăмсине пĕркелесе: Хуçи ăçта?—терĕ.

— Акă епĕр... акă епĕ...—терĕ атте, малала тухса.

— Куланай!

— Çук... выçă... аран çапкаланса пурăнатпăр... кĕтмĕрши?—тесе атте чĕркуççи çине ларчĕ. Хăйĕн йанахĕ чĕтрет. Шурала пуçланă сарлака сухалĕ çилпе вĕçкелет, виç пилĕк пус сарлакĕш кукша пуçĕ çине ӳкнĕ йурсем ирĕлсе пыраççĕ.

Атте чĕркуççи çинче ларнă çĕрте пӳрнисемпе кăкăрне тăрмаласа темĕн мăкăртатат. Епĕ хам пек ачасен ушкăнĕнче тăратăп.

— Сан аçу йĕрет пулас,—тет мана хăлхаран Мимĕч Мишши.

Йапаласене сутса пĕтересрен хăраса хресченсем вĕсене пытарнă. Мишша ашшĕ сысна ашне улăм айне пытарнă, Лавруç сарайĕнче Хушкапуç пăрăва пытарнă.

Ачасем сысна ашне мĕнле пытарса хунине пăхма пырсан, ашне йытăсем çисе тăнине курах кайаççĕ.

II.

Тăвата пысăк йытă улăм ăшне чавса кĕнĕ те сысна ашне çийе параççĕ. Йур çинче йун вырăнĕсем пур. Улăм айĕнчен кăшланă сысна шăмми тăратса тăрат.

— Атте-е!—Атте-е!—тесе кăшкăрса йачĕ Мишша. Кăшкăра-кăшкăра урамала чупрĕ.

— Атте, йытăсем!.. Атте, сыснана!.. Атте, шăммине кăна хăварнă!--тесе Мишша пĕтĕм вăйĕпе çуйăхса чупат.

Крыльца умĕнче тăракан хресченсем пурте çавăрăнса пăхрĕç. Мишша ашшĕ çавăнтах йур çине лапчăнса ларчĕ.

— Мĕн çуйăхатăн есĕ, мур илешшĕ!—терĕ ăна ста рăстă шăпăр йăтса.

— Йытăсем... çисе йанă!—терĕ Мишша аллисене сарса.

— Мĕн сӳтĕлетĕн, ухмаха йертĕни-мĕн,—теме анчах ĕлкĕрчĕ ашшĕ.

— Сысна пĕççисене çисе йанă! Анне каларĕ вĕт сана, шаларах пытар тесе, итлемерĕн ху!—тесе пичĕсене пĕркелесе Мишша йĕрсе йачĕ.

— Ах, телейсĕр пуçăм!—тесе Мишша ашшĕ хăйне хăй çӳçĕнчен йарса илчĕ те куçĕсенчен куççулĕ шăпăр-шăпăр йухса анчĕ.

Чĕтресе кайса, епĕ хам та сисмерĕм, атте çине пăхрăм та йĕтĕм йатăм.

— Пирĕн Хушкапуçа та йытăсем çисе йарĕç!.. Чуп часрах сарайне!..—терĕм.

Пуçлăх сасартăк çавăрăнса пăхрĕ.

— Мĕн терĕн есĕ, ача?—тесе ыйтрĕ вăл Мимĕчрен.

Лешĕ куçĕсене чарса пăрахнă, çăварне карнă та нимĕн чĕнме пĕлмест. Пуçлăх манран: Мĕн пулнă? Кам ачи ес?—тесе ыйтрĕ.

— Хамăрăн терĕм епĕ йĕре-йĕре, Мишшасем сыснине чикнĕ те ăна улăм ури айĕнчен йытăсем кӳпсе кайнă, пирĕн пăру та сарайĕнче... Унтан атте çине пăхса илтĕм те, калама хушманнине аса илтĕм.

— Халех вăл мана хĕнесе амантат!.. Çук пирĕн пăру, сутнă епĕр тесе, уласа йĕрсе йатăм.

Михаља ашшĕ йур çинче сулланса ларат. Ман атте снавуй ури патне чикĕнчĕ. Халăхсем хăраса хытса кайрĕç..

Пуçлăх аллине сулса йарса аттене йанахĕнчен шарт-латтарса илчĕ. Атте алăк уратине çапăнса йăнăшса йачĕ. Пуçлăх аттене урипе хырăмĕнчен тапрĕ, атте йăнăшса хутланса кĕчĕ. Анне мачча çине хăпарса кайрĕ.

Пуçлăхсем кайсан Мишшана урине сиктеричченех çакланчĕ, урине ларттарма хулана каймала пулчĕ. Епĕ те хамăр Хушкапуç пирки ернене йахăн йунпа тула тухса çӳрерĕм.

Ăнлантарса пани.

Снавуй — патша вăхăтĕнчи йалти полицин пуçлăхĕ.

Улпут хресченĕ

Вăл сăмахсăр пулнă та ĕçчен,
Çавăнпа та йачĕ ун хресчен.

Вăл ĕçленĕ кунĕ-çĕрĕпе,
Такама пуйтарнă ĕçĕпе.

Уринче ун пулнă çăпата,
Вăл пуйтарнă выç-куç улпута.

Кунĕпе тарланă тыр вырса,
Ачисем ун ларнă выçăхса.
Вăл улпутшăн тăкнă таршурне,
Унах панă вăл куланайне.
Пӳлминче ун пулнă тап-таса,
Пурнăçĕ ун пулнă пит асап.

Турӑ йачĕпе, патша хушнипе.

Чалӑшса кайнӑ хура пӳртсем. Урамсенче ырханкка йытӑсем çăварĕсене карса хайаррӑн пӑхса выртаççĕ. Йал варринче халӑх кĕрлет, унта арçынсем пуху тӑваççĕ.

Шӑлĕсене шатӑртаттарса, аллисене сулкаласа, курпунрах çын хӑйĕн умĕнче тӑракан çынсене сирсе йарса маларах тухрĕ те: Хура халӑх!—терĕ.

Малтарахрисем шавлама чарӑнса ун çинеле чӑр! пӑхса илчĕç.

— Хура халӑх!—терĕ вӑл вӑйлӑрах сасӑпа.—Мĕн ытлашши калаçса тӑрас. Пупсем чӑвашсенчен мӑшкӑланине, пире пусмӑрласа, самӑрӑлса пурӑннине пĕлетпĕр. Епĕр вырӑс тĕнне йышӑнасшӑн мар, пупсем пире вӑйпах йышӑнтарасшӑн. Пире саламатсемпе тĕне кӳртрĕç. Тĕне кĕменнисен çĕрĕсене туртса илсе, çĕр ĕçĕпе тӑранса пурӑнакан халӑха çĕрсĕр хӑварса пычĕç. Ай, мĕн каласси пур ун çинчен! Пӑрахар пупсене итлеме!

— Пуп таврашсем ан пулччӑр!

— Пĕтерес вĕсене! Хӑваласа йарас! Айтӑр Хĕрлĕ Чутайа. Вӑрӑм çӳçлине туртса кӑларар!

— Пупсене çĕнтереймесен чӑваш йатне йӑтса çӳреме те намӑс!

— Тĕрĕс. Арсупай тĕрĕс калат. Пупсене çĕнтерĕпĕрех!

— Кайар апла пулсан, халӑх! Кайар!—терĕ Арсупай текенни.

Урса кайнӑ кĕтӳ пек кĕрлесе утрĕ халӑх Арсупай хыççăн. Хастарлӑ çамрӑксем малти ушкӑнта пыраççĕ. Ватӑраххисем, пуп шӑршине пĕтерес шухӑшпа, хĕвелпе хытса ларнӑ çул тӑрӑх йӑвӑр пусӑмĕсемпе тӑпӑртаттарса пыраççĕ. Ваттисем çамрӑккисенчен йуласшӑн мар, малалах тапаланаççĕ.

Тепĕр виçĕ кунтан йала касаксем пырса кĕреççĕ. Çĕр касак. Ыйтаççĕ, тĕпчеççĕ, тытса хупаççĕ. Чӑвашсем пуçĕсене уснӑ, куçĕсем—пусма çыхса пӑрахнӑ така куçĕсем пек, таçта инçетеле пӑхаççĕ. Кашни ыйту çинех:

— Курман... илтмен...—теççĕ.

Ампара та хупса пӑхнӑ вĕсене, выçă та усранӑ. Темиçе талӑк шыв ĕçме паман. Салхуланса çитнĕ чӑвашсем. Куçĕсем путса ларнӑ. Шӑммисем çеç палӑраççĕ. Хӑйсем çапах:

— Курман... илтмен... пĕлместпĕр...—теççĕ.

Пуçлăхсем, халăх харсăррине кура, йытă пекех çиленсе çитрĕç. Шăлĕсене кăчăртаттарса, пуп кăтартнă тăрăх, 25 çын суйласа илчĕç те лашисем çине утланса вĕсене хуса кайрĕç.

Сут тапранчĕ. Тӳресем пурте, самăртнă сысна пек, мăнтăррисем пухăннă. Чăвашсем кашни ыйту хыççăнах:

— Нимĕн те пĕлместпĕр. Илтмен те, курман та,—тесе тăраççĕ. Аптăраса çитрĕç тӳресем. Кам айăплине тупаймарĕç. Пригăвăрне çапла çатлаттарса хучĕç:

„Турăпа патшана хирĕç пыракан чăвашсене 25-ĕшне те ĕмĕрлĕхе катăргăна йамала, пурлăхĕсене туртса илмеле".

В. Г. Короленко.

Улпут çыннипе улпутăн йытă çурисем

— Панкратăв улпут çинчен илтни есĕ?—тесе ыйтрĕ лавçă хăй илсе пыракан çынтан.

— Илтсеччĕ. Вăл выљăх-чĕрлĕхе питĕ йуратнă, теççĕ,—тесе сăмах хушрĕ ларса пыракан çын.

— Çапла çав. Тĕлĕнмеле унтан: выљăх-чĕрлĕхе йуратнă,—хăй хресченсене çав тери асаплантарнă. Вăл хресченсене пурăнма йытăсенчен кансĕр турĕ. Пурччĕ унăн вунă йуратнă йытă ами. Калăпăр—çăвăрласа параççĕ ăна вĕсем—Панкратăв йытă çурисене çав куннех крепăсла хресчен хĕрарăмĕсем патне леçтерет. Кам ача çуратнă, камăн кăкăрĕ сĕт антарать—йытă пăхакансем улпут йытă çурине туххăмах çав хĕрарăмсем патне пăхса ӳстерме леçсе параççĕ.

Çапла унăн пĕр Лекçей йатлă крепăсла хресчен пулнă. Хитре те маттур, пĕтĕм йалĕпе ун пек маттурри пулман. Унăн çамрăк арăмĕ пулнă. Хăй вăл илемлĕ те кӳрнеклĕ, арăмĕ унран та хӳхĕм пулнă. Çапла пĕрре Лекçейе инçе çула лава, извошчике кайма тивнĕ. Арăмĕ йăвăрланса çитнĕ. Ним тума та çук, Лекçейĕн кайас пулать. Пырать вăл хăй лавĕпе çеçенхир тăрăх. Хăй хура пĕлĕт пек, нимĕн те шарламасть.

Сĕм хура çĕрле киле кайала таврăнать. Арăмĕ ăна хирĕç тухмасть. Хăй çутман. Лекçей пӳрте кĕрет. Сăпкара ача кăшкăрса выртать, кĕтесре йытă çурисем йăшăлтатаççĕ.

— Мĕн пулнă капла?—тет Лекçей.

— Авӑ пире турӑ ывӑл ача пачӗ—тет арӑмӗ.

— Кӗтесре мӗн?

— Кӗтесре йытӑ ҫурисем, хӑвӑннах ӑнланмала.

— Епӗ ӑна чӑтма пултараймастӑп! Кӳр кунта йытӑ ҫурисене,—терӗ Лекҫей.

Пӗрне пӗр алла илчӗ, теприне—тепӗр алла, хӗстерсе илсе лапчӑтрӗ те каллех вырӑнне хучӗ.

Ирпе йытӑ ҫурисене леҫсе паракансем пычӗҫ те:

— Анна, йытӑ ҫурисене кӑтарт, сывӑ-и вӗсем?—тесе ыйтаҫҫӗ.

— Тем пулнӑ вӗсене, вилнӗ вӗсем.

— Мӗнле, иккӗшӗ те-и?

— Иккӗшӗ те вилнӗ.

— Мӗн пирки? Кирек мӗн пирки пулсан та, вӑл пирӗн ӗҫ мар, улпута пӗлтерӗпӗр.

Вӗсем чӑнах та кайнӑ та улпута каласа кӑтартнӑ. Ҫав йытӑ ҫурисене улпут пир ҫине хурса, вилнӗ ҫынна илсе пынӑ пек илсе пыма хушрӗ. Пир ҫине хурса илсе килсен хыпаласа пӑхрӗ те:

— Ку айӑпсӑр анчӑксем пӗтнӗ, усал хурах аллинчен пӗтнӗ, Лекҫейе чӗнсе килӗр!—терӗ.

Лекҫей ҫитрӗ.

— Есӗ вӗсене вӗлернӗ, тӑшман!—терӗ улпут.

— Епӗ вӗсене вӗлермен. Есӗр хӑвӑр саккуна урлӑ пыратӑр. Пӗчӗк ача, мужик ачи пулсассӑн та, турӑ чунӗ шутланать. Вӑл сӑпкара кӑшкӑрса вырттӑр та, есӗр ун амӑшӗн кӑкрине йытӑ ҫури ӗмӗртсе варалатӑр Вилсе пӗтчӗр вӗсем санӑн пурте. Халӑх ухмах: пурне те пӑвса вӗлермеле.

Лекҫей ку сӑмахсене каласанах, улпут тенкел ҫинчен сиксе тачӗ, Лекҫейе кӑкринчен пӗррех тӗксе йачӗ. Лешӗ ӳпне сулӑнса карӗ те, тӳррех... тӳррех... пуҫӗпе хурана...

Лекҫей кӑшкӑрма та ӗлкӗреймерӗ... Йытӑ пӑхакансем чупса ҫитрӗҫ, туртса кӑларчӗҫ... Пӗтӗмпех пиҫсе кайнӑ. Йытӑ пӑхакансем хушшинче ҫӗмӗрлӳ, хускану пуҫланса кайрӗ. Тарҫисем хушшинче пӑтрану хускалса кайрӗ. Йытӑ пӑхаканӗ пӗри Лекҫей шӑлнӗ пулнӑ. Чупса кайрӗ улпут пӳлӗмне, йарса илчӗ пӑшал... Чуран чӗри чӑтаймарӗ.

---

1. Улпут аллинче пурӑнакан хресченсен пурнӑҫӗ мӗнле пулнӑ?
2. Улпут хресченсене, вӗсен ачисене выљӑхран та кайа хуни ӑҫтан курӑнать?

Атăл йурри

Шупашкар çӳл йенчен
Кăн-кăвак хум чупаť,
Чупнăçем, сикнĕçем шуралаť.
Такама кăшкăраť,
Такама вăл чĕнет—
Ирĕке йăхăрса шăхăраť.
Пусмăрти халăхсем,
Пĕр çĕре пухăнар,
Улпута йĕрлесе тыткăнлар.
Пурăннă тарăхса,
Çапăçар савăнса.
Малала, малала çул хывар!
Хусантан айалта,
Самартан анатра
Пухăнаççĕ пĕрмай хусахсем.
Улпута, купцана
Хирĕç тăнă вĕсем—
Ирĕке савакан паттăрсем.
Атăл тăрăх вĕсен
Сарăлаççĕ вăйсем,
Никамран та вĕсем хăраман.
Çапăçаççĕ хастар,
Вăйĕсем шĕл кăвар,
Çтенкă Разин вĕсен атаман.
Йыхрава итлесе,
Ирĕк çул йĕрлесе
Чăваш та малала ыткăнаť.
Паттăр вăй кăларса,
Ирĕке йăхăрса
Çтенкă Разин çарне хутшăнаť.

Ĕлĕкхи пурнăç

Пеťťа ашшĕ йалсовет пуçлăхĕнче ĕçлет. Вăл пурнăçра хура-шурра чылай курнă çын. Вăрçăра та пулнă вăл, шахтăра та ĕçленĕ. Патша чиновникĕсен, жандармсен пусмăрне чылай тӳснĕ. Ĕлĕкхи пурнăçа питĕ тарăхса аса илет. Кулаксене, пупсене шутсăр йуратмасť.

Пĕрре Пеťťа ашшĕне калаť: Атте, ĕлĕк пирĕн пек çынсем мĕнле пурăннă ара, каласа пар-ха,—тет.

Ашшĕ хаçат вуласа ларатчĕ. Хаçатне айаккала хучĕ те: Сире ĕлĕкхи пурнăç çинчен шкулта тĕплĕрех каласа парĕç, анчах епĕ те сана кăшт каласа парам,—терĕ.

Ĕлĕк пирĕн пек хресченсен пурнăçĕ питĕ начар пулнă. Пирĕн асаттесем улпутсен аллинче пурăннă. Улпутсене тырă акса, вырса, çапса кĕлете хурсах панă. Хăйсен ĕçне вĕсем ернере ик-виç кун анчах ĕçлеме пултарнă.

Кайран патша хресченсене улпут аллинчен хăтарнă пек тунă. Лайăх çĕрсене улпутсен аллине хăварнă. Начар, сĕткенсĕр çĕрсене хресченсене хаклă хакпа сутнă. Вара çĕр çитмен пирки хресченсем каллех улпутсемпе кулаксене кăшт тырăшăн ĕçлесе панă.

Кулаксемпе улпутсем пуйса пынă, хресчен чухăна тухса пынă. Хресченсене патша йăвăр налуксем тӳлеттернĕ. Хресченсем улпутсене хирĕç кĕрешнĕ, пăлханса та пăхнă, анчах патша улпутсене пулăшма салтаксем йанă. Пăлханакансене пере-пере пăрахнă, çакса вĕлернĕ, тĕрмесенче çĕртнĕ.

Хулари рабочисен те пурнăç питĕ йăвăр пулнă. Вĕсене хапрăк-савăт хуçисем нумай ĕçлеттернĕ. Укçине кăшт, выçăлă-тутăлă пурăнмалăх кăна тӳленĕ. Рабочисем питĕ нумай çул хушши буржуйсемпе кĕрешнĕ. Вĕсем лайăх пурнăç тăвасшăн тăрăшнă. Рабочисенчен чи çирĕпписене, чи хастарлисене пĕрлештерсе Ленин боļшевиксен партийĕ тунă. Çав боļшевиксен партине Владимир Илйич Ленин пуçарса йарса хăй виличченех йертсе пынă.

Боļшевиксем рабочисене, хресченсемпе пĕрлешсе, патша влаçне сирпĕтме чĕннĕ. Рабочисем боļшевиксен партийĕ тавра пĕтĕçсе пынă. Парти ӳссе, çирĕпленсе пынă.

Патша жандармĕсем боļшевиксене хытă хĕстернĕ. Вĕсене тĕрмене хупнă. Çĕпĕре пуç йанă. Çапах та боļшевиксен партийĕ çирĕпленсех пынă. Рабочисемпе хресченсем пĕр канаш туса ĕçлеме пуçланă.

1917-мĕш çулта февраļ уйăхĕнче Раççейри рабочисемпе салтаксем патшана сирпĕтрĕç. Унтан нойабĕр уйăхĕн 7-мĕш кунĕнче (кив кăлентарпа октабĕр уйăхĕн 25-мĕш кунĕнче) буржуйсемпе улпутсене те хăваласа йачĕç. Пĕтĕм ирĕк ĕçхалăх аллине кĕчĕ. Пĕтĕм влаç ĕçхалăх хушшинчен суйланă советсен аллине куçрĕ. Пĕтĕм хапрăк-савăтсем, çĕр, çуртсем ĕçхалăх аллине кĕчĕç.

Хаļ ĕлĕкхи самана пулсан, есĕ те пĕр-пĕр кулак патĕнче выļăхсем пăхса кĕтӳçĕ пулса çӳремеле,—тесе пĕтерчĕ Петта ашшĕ.

Чăвашсен ĕлĕкхи пурнăçĕ

Октăбĕр революциччен чăваш ĕçхалăхĕн пурнăçĕ чăтма çук йăвăр пулнă. Çĕр питĕ хĕсĕк пулнă. Чăваш хушшинчи лайăх çĕрсене патша влаçĕ улпутсене, пупсене, мăнастирсене касса панă. Тата лайăх çĕрсене кулаксем хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Чухăнпа вăтам хресченсем чи начар çĕрсене ĕçлесе пураннă.

Патша чăваш ĕçхалăхĕнчен пысăк куланай илсе пураннă. Тĕрлĕрен ĕç ĕçлеттерсе хăшкăлтарнă. Чăваш çыннисен ачисене вĕренсе çутта тухма ирĕк пулман. Нумайĕшĕ вĕсем йалти шкула та пĕтерсе тухайман. Пысăкрах шкулсенче чăваш кулакĕсен, пупсен ачисем анчах вĕренме пултарнă. Шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентме йураман, пур шкулсенче те вырăс чĕлхипе вĕрентнĕ.

Чăваш ĕçхалăхне вырăс улпучĕсем, чиновникĕсем те, чăваш улпучĕсем, чиновникĕсем, кулаксем те питĕ хытă пусмăрланă. Ĕçхалăхне пусмăрлама çăмăлтарах пултăр тесе, патша влаçĕ тĕрлĕ халăхсене пĕр-пĕринпе хирĕçтернĕ. Çавăнпа та ĕлĕк вырăссем чăваш ĕççыннисенчен мăшкăланă. Вырăс чиновникĕсем чăваш ĕççыннисене хĕненĕ, çапса çĕмĕрнĕ. Патша влаçĕ чиновниксене уншăн айăпламан.

Йăвăр куланайсем, тата ытти тĕрлĕ тӳлевсем тӳлесе пуранниппе, çĕр хĕсĕккипе, чăваш ĕççыннисем çулсерен чухăнланса пынă. Вĕсем пĕчĕккĕнех кулак аллине çакланса пынă. Чухăн пуранниппе, чăваш хресченĕсем тасалăха та тытайман. Чăваш ĕççыннисем хушшинче тĕрлĕ чирсем сарăлнă. Вĕсенчен чи хăрушши—трахомă чирĕ. Çав чирсенчен емелленме чăваш хушшинче больницăсем питĕ сахал пулнă.

Çав вăхăтрах тĕрлĕ улпутсем, пупсем, кулаксем нимĕн те ĕçлемесĕр ырă курса, лайăх ĕçсе-çисе пураннă. Вĕсене чухăнпа вăтам хресченсем тĕрлĕ парăмшăн ĕçлесе панă.

Октăбĕр революцийĕ пулсан, ытти халăхсемпе пĕрле чăваш ĕçхалăхĕ те ирĕке тухрĕ. Улпутсене, буржуйсене хăваласа йачĕ. Çĕнĕ пурнăç тума тытăнчĕ. Хаљ чăваш ĕçхресченĕсем колхозсене пĕрлешеççĕ. Хут вĕренсе çутта тухаççĕ. Пурнăç кунсеренех лайăхланса пырат.

Кам пахчи?

...Манӑн пӗрре Тамбов кӗпӗрнинче пулма тиврӗ.

Йала халӑх пуххине пырса ҫитрӗм.

Кивӗ чиркӳ патӗнче хресченсем пухӑннӑ.

Улпут майри, ҫывӑхри помешчик арӑмӗ, пырса кӗчӗ те ӳпкелешме тытӑнчӗ.

— Акӑ, стариксем, есӗр мана ҫарататӑр,—пахчана сирӗн ачӑрсемпе арӑмӑрсем ҫаратса пӗтерчӗҫ, улмине ҫимелӗх те хӑвармарӗҫ. Мӗншӗн-ха, мӗншӗн есӗр мана асаплантаратӑр, пусмӑрлатӑр?—тет.

— Паллах, апла аван мар,—кӗрлесе илчӗҫ стариксем,—вӑл ниме кирлӗ мар йапала.

— Ҫапла ҫав, мӗнле-ха вӑл? Акӑ калаҫаҫҫӗ, пахча халь ман мар, теҫҫӗ... Мӗнле ман мар пултӑр-ха? Уншӑн кам тӑрӑшнӑ-ха? Кам сыхласа усранӑ ӑна? Ӗлӗкрех туратне те чӗрӗлсе анасран ҫыхаттӑм, хурт таврашне те илсе пӑрахаттӑм, йаланах пахча ҫинчен шухӑшлаттӑм, пуҫ та ырататчӗ, ҫӗр ҫывраймастӑм Ҫук вӑл ман, ман пахча. Ӑна манран никам та туртса илме пултараймасть. Никама та парӑнмастӑп епӗ.

— Паллах сан пахча пуҫ ҫинчех тӑрать,—тени илтӗнчӗ халӑх ушкӑнӗнче,—кашни ирех куратпӑр, кофе ӗҫсенех тӳрех пахчана тухатӑн. Шухӑшӗ санӑн, епӗр йӑвӑҫ кучӗсене ҫемҫететтӗмӗр; тем пек хуҫӑлса пӗтеттӗмӗр, кунне 50 пус илсе аран-аран киле урасене сӗтӗрсе тавӑрӑнаттӑмӑр.

— Стариксем, есӗр мӗн тутарасшӑн-ха апла мана, епӗ кӗреҫине те ҫӗклейместӗп вӗт.

— Ӑҫта сана ҫӗклеме? Пултарас ҫук ес...—илтӗнчӗ халӑх хушшинче,—сан аллусем хӑпарса тухаҫҫӗ вӗт.

— Ҫаплах ҫав, есӗр тата пахча сан мар, тетӗр.

— Епӗр кӗркунне йӑвӑҫ улми татнӑ чухне пусма ҫине тӑрса кунне 15 пусшӑн кармашса асапланатпӑр,—йанратса кӑшкӑрчӗ салтак матки—Матӗрне.

— Турӑмҫӑм,—кӑшкӑрса йачӗ улпут майри,—епӗ пусми ҫине те хӑпараймастӑп вӗт. Ҫапах та пахча манӑннах. Епӗ кашни йӑвӑҫне хам тӑван ывӑл пекех пӗлсе тӑратӑп-ҫке.

Халӑх ушкӑнӗнчен Созонт мучи мала тухса тӑчӗ, хӑй ватӑ, сухалӗ шап-шурӑ, кӗлетки пӗкӗрӗлсе ларнӑ. Сухаллӑ тутине хускаткаларӗ те, шывланакан куҫӗсемпе улпут майри ҫине пӑхса калама тытӑнчӗ:

— Итле-ха, улпут майри, сан вилнӗ аслаҫу, ҫӳлти патшалӑха кайтӑр... Йаланах пур ҫӗрте те хӑй ҫӳретчӗ,

прикашчика йе управљайушчине хушмастчĕ, пур çĕрте те хăй. Питĕ тăрăшаканскерччĕ.

— Пирĕн улпут майри ăна хывнă пулас,—илтĕнчĕ халăх хушшинчен.

— Çак пахчана хăй аллипе лартрĕ, никама та шанмастчĕ. Вара пире старăстă хуса кăларатчĕ те,—епĕр ун чухне унăн крепăсла çыннисемччĕ, епĕ ун чухне йаш çынччĕ,—пире хуса тухатчĕ те пĕр вăтăр çынна улма йавăççисем лартма шăтăк чавтаратчĕ. Çапла вара чаватпăр, сан аслаçу каллĕ-маллĕ уткаласа çӳретчĕ, аллинче ун вара нухайкаччĕ. Чавнă шăтăка туххăмах виçсе пăхатчĕ, кăштах чавса çитереймен пулсан—тăр, мур илешшĕ, тăват уран, тетчĕ. Аçта кайасси пур-ха, тăват уран тăраттăмăр. Вăл вара нухайкипе туйантарма тытăнатчĕ, туйантармалипех туйантаратчĕ, нухайкапа пĕтĕм йĕме çапса салататчĕ, купарча çаралсах йулатчĕ. Вара йаланах хăй, йалан хăй. Хĕнеттермешкĕн вите тăрне хăваласа йарасси çукчĕ, хăй аллипе хĕнет, питĕ ĕçченччĕ. Акă епĕ ĕнтĕ 100 çула çывхаратăп, çапах та халĕ те купарчара сиввĕн туйăнса тăрат...

Пурте кулса йачĕç.

— Мучи, сана халђ сивĕ пек, ун чухне вĕри пулнă пулас.

Улпут майри хĕрелсе кайнă пичĕ çумне тутăрне тытрĕ.

— Кам киввине асăнакан суккăр пултăр,—тет.

— Çаплах, ĕлĕкхине мĕн асăнмали пур. Киввине асăнас пулсан, хут çĕр куç пултăр, пур те шăтса йухĕç. Вăл çĕннине те куç çитес çук-çке.

Ы Й Т У С Е М:

1. Сирĕн шутăрпа, пахчан чăн-чăн хуçи кам пулат-ха?
2. Созонт мучи крепăсла йĕрке çинчен мĕн каласа панă?

Трахомă çинчен мĕн астумала.

Таса пурăнма вĕренмен халăх хушшинче трахомă йатлă куç чирĕ хытă сарăлат. Трахомă питĕ хăрушă сикекен чир. Трахомă йерсен, куç хупаххисене шал йенчен шатра тухат. Куç шывланакан, пӳрленекен, хĕрелекен пулат. Куç хупаххисем тăртăнаççĕ, кĕçтеççĕ.

Чирлĕ куçа тыткаланипе трахомăлă çынăн аллисем куç пӳрĕпе вараланаççĕ. Çав варланчăк алăпа тытнă йапаласем урлă трахомă тепĕр сывă çынна йерсе пырат.

Пĕрмай йухакан пӳрлĕ куççулĕсемпе трахомăлă çын питшăллисене, çытар-минтер çиттисене варалаť. Çав пĕр питшăллисемпе пит-куçа шăлса, пĕр çытар-минтер çинче выртса-тăрса сывă çын хăй куçне трахомă йертет.

Трахомă пурне те йерме пултараť.

Çамрăка та, ваттине те тиркемест.

Трахомă йернине сиссенех куçа емеллеме тытăнмала. Куç хупаххисене шатра тухнă пулсан, вăл шатрасене пĕтерме тăрăшмала. Ернере ик-виç хут йешĕл сенкерпе сĕртерме боʇницăна çӳрес пулаť. Йалсенче трахомăпа кĕрешекен пунктсем пур. Унта йатарласа вăл ĕçе вĕреннĕ çестрасем ĕçлеççĕ. Трахомă йерсен, çакăнта çӳремеле.

Куç—етемĕн кун çулĕ. Куçа кирек хăçан та таса тытма тăрăш.

Куçна никама та ан тĕкĕнтер, ан çыпçăнтар.

Пите-куçа, алăсене час-часах çуса пырса таса тытмала.

Кашни çынăн уйрăм питшăлли пулмала.

Çăвара шыв сыпса пит-куçа çума йурамасť.

Пит-куç çумали шыва тытма йури уйрăм савăт пулмала.

Уйрăм çытар-минтерпе выртса тăмала. Çытар-минтер çиттисем йаланах таса пулмала.

Мунчара шыва уйрăм савăт çине илсе çăвăнмала.

Куçа çӳп кĕрсен, чĕлхепе çулаттарса кăларма йурамасť, таса, çемçе тутăрпа шăлса кăлармала. Çӳп кĕнипе ыратакан куçа боʇницăна кайса кăтартмала.

Куçа çара алăпа шăлмала мар. Куçа сасартăк шăлмала пулсан—алăн тӳнтер йенĕпе кăна тĕкĕнсе илмеле.

Куç пăсăлнине сиссенех, вăхăт иртермесĕр боʇницăна кайса кăтарт.

Чирлĕ куçа емеллеме ан ӳркен.

Çак йĕркесене пăхăнсан, йаланах таса куçлă пулăн.

Пупсем халăха йепле улталаççĕ.

А. Çерафимович.

... Тепĕр чухне пупсем хăйсем тĕллĕн тĕрлĕ тĕлĕнмеле „хăватсем" шухăшласа кăлараççĕ.

Акă Утрӳмскинче мĕнле ĕç пулнă. 1926-мĕш çулта станицăра çăмăр çуман. Хресченсем молебĕн гума шухăшланă. Станицăри агроном кун çинчен пĕлсен, хресченсене пухса çапла калаť:

— Молебӗн тавраш туса укҫа ан пӗтерӗр, вӑл сирӗн ӗҫе пулӑшас ҫук. Ҫитес кунсенче пур-пӗрех ҫӑмӑр пулмасть. Халӗ пуп та молебӗн тума килӗшес ҫук.

Хресченсем агронома ӗненмесӗр пуп патне кайрӗҫ. Пуп калать:—Тӳсӗр, хӑвӑр ҫылӑхӑрсемшӗн ку йӑвӑрлӑха йанӑ сирӗн ҫине, тет.

Икӗ кун иртсен виҫҫӗмӗшӗнче агроном хресченсене пухса калать:—Ыран ҫӑмӑр пулать. Айтӑр-ха епӗ сире пӗр йапала кӑтартӑп, вара хӑвӑрах пӗлӗр. Халӗ ӗнтӗ пуп та молебӗн тума килӗшӗ.

Агроном каласа та пӗтереймерӗ, пуп персе те ҫитрӗ.

— Мана пайан паллӑсем курӑнчӗҫ. Турӑ хӗрхенӗ, молебӗн тӑвас пулать. Тӳлӗр укҫа, — терӗ.

Хресченсем татах та агронома ӗненмерӗҫ. Пуп патне вӗсем тӗрлӗ-тӗрлӗ йапала илсе кайрӗҫ: укҫа, ҫӑмарта, чӑх-чӗп, пир-авӑр тавраш. Пуп молебӗн турӗ те, чӑнах та ҫӑмӑр ҫума тапратрӗ.

Мӗн пулчӗ-ха ӗнтӗ ку, тӗлӗнмеле хӑват-и?

Агроном та ҫӑмӑр пуласси ҫинчен малтанах каласа панӑ.

Ӗҫ ак ҫапла пулнӑ.

Агрономӑн барометр пулнӑ. Барометр хӑҫан ҫӑмӑр, хӑҫан уйар пулассине кӑтӑртса паракан хатӗр.

Пупӑн та барометр пулнӑ иккен.

Ҫавӑнпа вӑл хӑҫан молебӗн тумалине пӗлсе тӑнӑ. Утрӳмскинчи хресченсем барометра курнӑ пулсан, вӗсем те хӑҫан ҫӑмӑр пуласса пӗлнӗ пулӗччӗҫ.

... Пупсен ултавӗ тӗттӗм, пӗлмен ҫынсем хушшинче ҫеҫ тытӑнса тӑрать. Ҫултан ҫулах пирӗн хут пӗлекенсен йышӗ ӳссех пырать. Пӗчӗккӗнех ӑслӑлӑх тӗн сӗрӗмне сирсе пырать.

Халӗ те чиркӳсенчен вуламали ҫуртсем тунине сахал мар тӗл пулма пулать.

ЫЙТУСЕМ:

Агроном ӗҫхалӑхне тӳрӗ ҫулпа, пуп ултав ҫулӗпе илсе пыни ӑҫтан курӑнать?

Барометр мӗнле йапала вӑл?

Пупсем халӑха улталани ҫинчен хӑвӑр илтни-пӗлнине каласа парӑр.

Пуппа унӑн тарҫи Балда.

(Йумах)

А. С. Пушкин.

„Пуппа унӑн тарҫи Балда“ йатлӑ йумаха А. С. Пушкин ҫырнӑ.

Александр Ҫергейӗвич Пушкин вӑл вырӑссен иртнӗ ӗмӗрте пурӑннӑ питӗ чаплӑ поечӗ. Вӑл ҫырнисем хӑй вӑхӑтӗнчи чи лайӑх писатӗлсемшӗн те примерлӑ пулса тӑнӑ. Пирӗн хаљхи вӑхӑтри писатӗлсем те Пушкин сӑввисене вуласа вӗренеҫҫӗ.

Пушкин вӑл дворйанин, помешчик пулнӑ, унӑн крепӑсла хресченсем, именисем пулнӑ пулин те, хӑш-пӗр сӑввисенче патша влаҫне хирӗҫ ҫырнӑ, крепӑсла права хресченсемшӗн ытла йывӑррине кӑтартнӑ.

Хӑйӗн сӑввисенче хӑйулӑ шухӑшсем палӑртнӑ пирки ӑна патша тӗп хуларан кӑларса йанӑ. Пушкин йумахсене те илемлетсе ҫырнӑ. Ҫавӑн пек йумахсен шутне „Пуппа унӑн тарҫи Балда“ йатлӑ йумах та кӗрет. Пушкин 38 ҫул пурӑннӑ. 1837 ҫулта ӑна Дантес йатлӑ офицер персе вӗлернӗ.

I

Пурӑннӑ тет ӗлӗк авал пӗр пуп. Пӗрре вӑл пасара кайнӑ. Ӑна Балда тӗл пулат̆. Вӑл пупа калат̆: Мӗнле ытла ир тӑтӑн? Мӗн шыраса ҫӳретӗн?—тет. Пуп ӑна калат̆: Тарҫӑ кирлӗ, тарҫӑ шыратӑп. Апат пӗҫӗрме, пуртӑ ӗҫне тума, лаша пӑхма. Ҫавӑн пек пур ӗҫе пӗлекен, йӳне кӗрӗшекен тарҫа манӑн ӑҫтан тупас-ши?—тет. Балда ӑна калат̆: Епӗ кӗрӗшетӗп, питӗ хытӑ тӑрӑшӑп; есӗ мана пӑри пӑтти ҫитер, ҫулталӑкра виҫӗ хут ҫамкунтан шаклаттарма пар,—тет.

Пуп шухӑша кайат̆, ӗнсине хыҫкалат̆: Шаклатнипе шаклатни пӗр мар, тен ку мана хытах тивертмӗ, пурӑнсан курӑпӑр, тет хӑйӗн ӑшӗнче. Унтан калат̆:—Йурӗ еппин, Балда, иксӗмӗре те лайӑх пулӗ. Пурӑнса пӑх-ха ман патӑмра, кӑтарт-ха хӑвӑн ӗҫченлӗхне,—тет.

II.

Пуранат Балда пуп патёнче. Улăм çинче çывăрат, тăвата сыншăн çийет, çичĕ сыншăн ĕçлет. Пуп майри Балдана пит мухтат, пуп хĕрĕ ун çинчен кăна шухăшлат. Пĕр пуп анчах Балдана йуратмаст, нихăçан та ăна ăшă сăмах каламаст. Унпа йепле татăлассси çинчен вăл час-часах шухăша кайат.

Вăхăт иртет, Балдана шалу тӳлес кун çывхарса килет. Пуп çимест, ĕçмест, ăйхă та çывăрмаст: çамки унăн малтанах ыратат. Йулашкинчен вăл Балдапа килĕшнĕ хак çинчен майрине каласа кăтартат:—Çапла та капла, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ?—тет. Хĕрарăм ăсĕ пит сисет, чейеленме пит пĕлет. Пуп майри калат: – Балдана есĕ тума пĕлмен ĕç пар, çав ĕçе вăл есĕ каланă пек тутăр. Çапла есĕ çамкуна та хăтарăн, тӳлессине те тӳлемĕн, тет.

Çакна илгсен пупăн чĕри лăшах кайат. Балда çине вăл хăйулăрах пăхма пуçлат. Акă вăл ăна кăшкăрат: Кил-ха кунта, Балда тарçăм! Итле-ха ман сăмаха: Шуйттансем мана хам виличченех куланай саплама пулчĕç; ку таранччен лайăх сапласа пурăнчĕç, анчах халĕ виçĕ çул çитет, вĕсем çумне укçа йулса пырат. Есĕ пăри пăтти лайăхрах çи те, шуйттансем патне куланай пуçтарма кай!—тет.

III.

Балда пуппа тавлашса тăмарĕ, тухрĕ те кайрĕ. Çитсе ларчĕ тинĕс хĕрне, вĕрен йавма тытăнчĕ. Вĕренне чылай йавсассăн, вĕçне шыва пăрахрĕ.

Акă тинĕсрен ватă усал ишсе тухат. Вăл Балдаран ыйтат:—Есĕ мĕн тума вĕрен йаватăн?—тет. Балда ăна хирĕç калат:—Акă мĕншĕн: вĕренпе епĕ тинĕс хумхатас тетĕп, хам алла сире çавăрса илес тетĕп!—тет. Ват усал хăраса кайат. Балдаран каллех ыйтат:—Кала-ха, Балда, мĕншĕн есĕ пире йуратми пултăн? Мĕншĕн капла курайми пултăн?—тет.—Мĕнле мĕншĕн?—тет Балда. Есĕр куланай тӳлеми пултăр, тӳлесе татас срукне иртерсе йатăр. Ак халĕ епĕр тытăнăпăр сире, шуйттансене, авкалантарăпăр,—тет.

Ватă усал шуралса кайат. Балдана сарпаласа йăлăна пуçлат:—Пăртак тăхта, хам ывăлăма епĕ сан пата йарам, вара есĕ унпа калаçса пăхăн!—тет те, чăма парат. Усал çури ишсе тухат, кушак пек макăрма тапратат:—Сыви-ха, Балда, пуп тарçи? Сана мĕнле куланай кирлĕ? Куланай

çинчен епĕр ку таранччен пĕртте илтмен. Йурĕ еппин, илĕн, тет, анчах ĕçĕ çирĕп пулма епĕр çапла тăвăпăр, тет: пиртен, иксĕмĕртен хăшĕ чи малтан тинĕс тавра чупса çавăрăнать, çавă куланай илет, тет. Балда кулса йарать те, усал çурине йатласа пăрăхать: Тĕлĕнетĕп епĕ санран. Ей, ухмах! Санăн манпа ăçтан пултарас! Манпа, самăй Балдапа! Манăн шăллăмпа пултарайăн-и, чим-ха, чĕнсе килем ăна, тет.

Балда çавăнти вăрмана кайать те, икĕ мулкачă тытать. Вĕсене мăйăха чикет, тинĕс хĕрне тăвăрăнать. Усал çури шыв хĕрринче кĕтсе тăрать. Балда лешне калать: Усал çури, есĕ çамрăк, манпа тупăшма пултараймăн; çак ман шăллăмпа тупăшса пăх-ха, хăваласа çитейĕн-и? тет. Вара: пĕрре! иккĕ! виççĕ! тет те, мулкачне йара парать.

Усал çурипе мулкачă тытăнаççĕ чупма. Усал çури тинĕс хĕррипе чупать, мулкачă вăрмана килнеле тарать. Шуйттан çури чĕлхине кăларнă, хашкать, лачкам йĕпе, тарĕсене шăла-шăла илет, аран-аран сывлать. Балдана çĕнтертĕм ĕнтĕ, тесе чупса çитет Балда патне. Пăхать, Балда шăллĕне ачашлать, хăй ăссĕн пуплет: Ман, йуратнă шăллăм, ывăнтăн пулĕ, шеремет! канах ĕнтĕ халĕ, тет.

Çакна курсан, илтсен, усал çури хăраса кайать. Хăй хӳрине лăпчăтать те, Балда шăллĕ çине хăйаккăн пăхать, унтан Балдана калать: Куланай илсе килĕп, тет.

Маçаккăш патне пырать те ку калать: Пĕтрĕмĕр: мана Балда мар, унăн шăллĕ хăваласа çĕнтерчĕ, тет. Шухăша кайать ватă усал. Балди ахаљ тăмасть, каллех тинĕс хумхаткалама тапратать. Усал çури тухать те, калать: Çитĕ, мучи, сана куланай пĕтĕмпех тӳлĕпĕр, тет. Анчах итле-ха, тата тупăшса пăхар. Çак туйана куратăн-и? Кам туйана инçетрех ывăтĕ, вăл вара куланай илĕ, тет.—Ха! Мĕне кĕтсе тăратăн? аллуна мăкăлтасран хăратăн-и мĕн? тет.—Веç, çав пĕлĕт татăкне кĕтетĕп-ха, тет Балда. Пĕлĕт татăкĕ çине сан туйуна ленктерес тетĕп. Сирĕнпе, усалсемпе, епĕ выљама йуратмастăп, тет.

Усал çури хăраса кайать, маçаккăш патне чупать. Балда каллех тинĕсе хумхантара пуçлать. Усалсене вĕренпе йунаса хăратать. Усал çури каллех ишсе тухать.—Есĕ мĕн хăтланатăн? Кирлĕ пулсан куланай та парăпăр, тет.—Тăхта-ха, тет Балда. Халĕ мĕнле тумалине хам калам. Ак сана задачă парам: вара санăн вăй нумайне пĕлĕпĕр! Çав кăвак кĕсрене куратăн-и? Есĕ çав кĕсрене тыт та, çур çухрăм йăтса кай. Йăтса çитерсен, куланай вара епĕ тӳлĕп, йăтса çитерейменсен, куланай вара есĕр тӳлĕр, тет.

Усалĕ кĕсре айне кĕрсе тăрат те, мекĕрлене-мекĕрленех кĕсрене йăтат. Икĕ пусăм турĕ, виççĕмĕшĕнче пултараймарĕ, ывăннипе тăсăлса ӳкрĕ. Балда калат: Ухмах есĕ ытла та! Ăçта санăн манпа тупăшмали! Есĕ аллусемпе йăтаймарăн, мана пăх-ха, епĕ урасем хушшине хĕстерсех йăтса çавăрăнăп! тет. Кĕсре çине утланса ларат те, наччасра пĕр çухрăм çавăрăнса килет. Усал çури хăраса пĕтсех кайат, маçаккăшĕ патне чупат. Балда çинчен каласа кăтартат.

Усалсем пурте пуçтарăнаççĕ, шутлаççĕ, шутлаççĕ. Ним тума та çук. Куланай пуçтараççĕ те Балдана пĕр михĕ укçа тыттараççĕ.

IV.

Аран-аран укçине çĕклесе, Балда пуп патне тавăрăнат. Балдана курсанах пуп сиксе тăрат, кукленсе анат, майри хыçне лапчăнат.

Балда ăна шыраса тупрĕ, куланайне тыттарчĕ, ĕçленĕ хакне ыйтма тапратрĕ. Шеремет пупĕ куçне хупрĕ те, çамкине кăнтарчĕ. Пĕрре шаклаттарчĕ Балда, пуп маччана çапăнчĕ. Тепре шаклаттарчĕ—чĕлхесĕр пулчĕ, тата шаклаттарчĕ—пуп вилсе кайрĕ. Балда вара каларĕ: Çав кирлĕ сана, нӳхреп куç! ăсу çитмерĕ санăн, ухмах пуç! Йӳнĕ хыççăн ан çӳре!—терĕ.

Çак йумаха çыракан кам майлă: пуп майлă-и, Балда майлă-и?

Пупăн тăранми куçĕ çинчен ваттисем каланă сăмахсем.

1. Пуп куçĕ—нӳхреп куç.
2. Пупа кĕлте паратăн-и, çĕмел паратăн-и—пур-пĕр сахал.
3. Кĕсйе типĕ, пуп та хăлхасăр.
4. Камшăн вилĕ—пупшăн укçа.
5. Сассипе чĕнет, чĕрипе хăй кукăђ кĕтсе тăрат.
6. Çĕр тислĕк тăкнине йуратат, пуп илсе пынине йуратат.

Пĕрлешни çĕнтерчĕ.

(Ĕлĕк рабочисем забастовкă туни çинчен).

Епĕ савăтра кăмрăк турттарнă çĕрте ĕçлеттĕм. Пурăнатăп аран-аран. Нимскер те ытлашши илместĕп. Çăкăрне те çити-çитми анчах илсе пыратăп. Шалу илнĕ чухне апатпа хваттершĕн тӳлетĕп те, укçа нимĕн те йулмаст.

Пурăнăçĕ савăтра пит те начарччĕ ĕнтĕ: мĕн-мĕн тӳсмен-ши? Маçтăр та санпа йытă пек харкашат. Кантурĕнче те улталаса тӳлеççĕ. Ним маршăн сана вăрçса пăрахаççĕ, штраф та тӳлеттереççĕ.

Пурнăçа пăртак рабочисем пĕр-пĕринпе лайăх пурăнни анчах лăплантаратчĕ. Тив-ха пĕрне те пулсан вĕсенчен, уншăн рабочисем пурте таçта та кĕме хатĕр, тивекен çынна пуçне татса пăрахĕç.

Пурччĕ пирĕн Курак йатлă рабочи, çамрăк рабочи. Вăл пит аван çынччĕ. Пĕрре хуçа маçтерскойсене пăхса çӳрет. Пырат инженерсемпе, пурне те вăрçат, пурин çине те кăшкăрат. Ку та апла мар, леш те çапла мар. Курак патне çитсен, унтан ыйтат:

— Есĕ ман патăмра нумайранпа ĕçлетĕн-и?

— Тăххăрмĕш çул,—тет Курак.

— Мĕн чул илетĕн?

— Уйăха çирĕм пилĕк тенкĕ илетĕп,—тет.

Рабочисем хăлхисене тăратса итлеççĕ, мĕн пулат-ха: хуçа Курака ахаљ çыпçăнман. Унтан хуçа труках кăшкăрса пăрахрĕ.

— Ах, анчăк çури! Çапла есĕ ман укçашăн ĕçлетĕн. Пăх, мĕн ку! Сан шутпа винт? Кала? Катас унăн шалунчен пилĕк тенкĕ.

Курак ăна хирĕç „тĕрĕс мар калатăн“ тесе калама пуçларĕ.

— Ах, йытă çименскер, сысна! Марш ман савăтран! Пайанах рашчут парăр ăна,—тесе кăшкăрат хуçа.

Ытти рабочисем пăлханма тытăнчĕç.

— Мĕншĕн ăна хăваласа йамала? Ача канăç курмасăр ĕçлет,—тесе шавлаççĕ рабочисем. Хуçа çиленнипе кăвакарса хĕрелсе кайрĕ.

— Ах, сволăчсем, мана хирĕç пăлханма шухăшларăр-и? Епĕ сире вĕрентĕп! Живо ĕçе тытăнăр!

Çав вăхăтра такам кăшкăрса йачĕ:—Ей, йулташсем! Мĕн пăхатăр ăна, шампа хырăма, мĕн унпа аппаланасси, тачкă çине ăна!—тесе кăшкăрчĕ.

Хуçа чӗлхи-çăварне те уçаймарӗ, хăппăл-хаппăл ăна тачкă çине тăрăслаттарчӗç те, кăмрăк миххи тăхăнтарса çӳп-çап йеннеле илсе карӗç. Пыратпăр ăна турттарса, шут тăватпăр:—„Ей, хуçа, каретă аван-и? Çуралнăранпа та ун пеккипе çӳремен-и тен"—тесе ахăлтататпăр. Çӳп-çап хӗрне кустарса пытăмăр та, тачкăна тӳнтерсе йатăмăр.—„Айта, ирӗк сывлăш çинче кан-ха пăртак",—тесе кулкалатпăр хамăр.

Унтан ним пулман-туман пек пурте ӗçе тытăнтăмăр. Пӗрер сехет иртсен, страшниксемпе пӗрле управљайушчи килчӗ. Халăха пуçтарчӗ те каларӗ:—Есир начар ӗçлетӗр, савăта сийен анчах. Çавăнпа сире шалу чакармала, кахал Курака савăтран кăлармала йышăнтăмăр",—терӗ.

Епӗр вара забастовкă тума канаш турăмăр. Пурте пӗр шухăшлă пулчӗç. Каларăмăр—турăмăр. Забастовкă пӗр уйăха пычӗ. Пурăнатпăр, выçлăхне те куратпăр, çапах та хуçана парăнмастпăр. Ытти хуласенчи рабочисем пире укçасем паркалаççӗ, çавсемпе анчах пурăнатпăр. Хай хуçа пире çӗнтерме пит кансӗррине кура, хăйӗх парăнма пуçларӗ.

— „Çапла-çапла, тет, йурӗ ӗнтӗ, тет, ӗлӗкхи пекех шалу парăп, анчах ӗçлӗр, ку уйăхшăн та тивӗçлине тӳлӗп, —тет.

Акă йепле вӗрентрӗмӗр шампа хырăма.

Майăн пĕрремĕшĕ.

(„Амăшĕ“ йатлă повĕç сыпăкĕ)

Макçим Горйки.

„Амăшĕ“ йатлă повĕçе питĕ паллă пролетари писатĕлĕ—Макçим Горйки çырнă. Вăл 1868 çулта çуралнă. Макçим Горйки пурнăçра хура-шура нумай курнă: пахчаçă, çăкăр пĕçерекен, грузчик пулса ĕçленĕ, пĕтĕм Раççейĕпех тенĕ пек çуран утса тухнă. Революцилĕ кĕрешĕве хутшăнса питĕ нумай ĕçленĕ. Патша правитĕлстви ăна арĕслесе сылкăна йарса та хăтланнă, темиçе хутчен тĕрмене хупнă. Ленин Горйкийе питĕ хакла хунă, вăл çырнисене пахаланă, çыру çӳретнĕ.

Революци ĕçне хутшăннă пирки Горйки Раççейри пурнăçа, ĕçхалăх пурнăçне, рабочисен революцилĕ кĕрешĕвне лайăх пĕлсе çитнĕ. Хăй çырнисенче вăл пире рабочи клас ирĕклĕхшĕн кĕрешнине, рабочисемпе хресченсем Октабĕр революциччен мĕнле пурăннине питĕ лайăххăн, тĕрĕссĕн кăтартса парат. Горйкине пирĕн çĕршыври ĕçхалăхĕ те, йут патшалăхсенчи ĕçхалăхĕ те хытă йуратат. Горйки çырнисем капиталиссен пусмăрне тăрă шыв çине кăлараççĕ, рабочисем паттăрла кĕрешнине кăтартаççĕ, социалисăмшăн кĕрешме чĕнеççĕ. Совет сойузĕн рабочи класĕшĕн тата ĕçхалăх массишĕн тăнăшăн Горйкине Ленин ордĕнĕ парса парнеленĕ.

„Амăшĕ“ йатлă повĕç—рабочи класăн Октабĕр революцичченхи пурнăçне, унăн революцилĕ кĕрешĕвне кăтартакан чи паллă произведени. „Амăшĕ“ йатлă повĕçре пĕр ĕçхĕрарăмĕ—Плаки Нилăвнă пурнăçĕ çинчен каласа кăтартнă. Хăйĕн ывăлĕ—çамрăк большевик Павăл ĕçленине кура вăл тĕттĕмскер, ăнланусăрскер, кайран пĕтĕм ĕçхалăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешес ĕçе активлă хутшăнакан пулса тăрат. Çакăнта, пичетленĕ сыпăкра майăн пĕрремĕш кунне рабочисем демонстраци тунине кăтартса парат. Демонстрацине салтаксем салатса йараççĕ. Демонстрацине Павăл йертсе пырат, унăн амăшĕ те унпа пĕрлех.

* * *

Плошчăт çине тухрĕç, ун варринче чиркÿ ларать. Ун тавра чиркÿ картишĕнче темĕн чухлĕ халăх тăрать, унта çамрăксем, хĕрарăмсем, ачасем пилĕкçĕр çын та пухăннă пулĕ.

Ак савăт труби мĕкĕрсе йачĕ, хăйĕн хура сассипе халăх шавланине хупларĕ. Халăх сиксе ÿкрĕ, ларакансем тăчĕç, минутлăха йăлтах лăпланчĕ, кĕтеççĕ, нумайĕшин пичĕсем шуралса кайрĕç.

— Йулташсем!—тесе йантраса кайрĕ Павăлăн хăватлă уçă сасси. Темĕнле типĕ вĕри тĕтре çунтарса илчĕ амăшĕн куçне, пĕрре хускансах вăл сасартăк çирĕпленнĕ кĕлеткипе ывăлĕ хыçне тăчĕ.

Пурте Павăл йеннеле—магнит çумнеле тимĕр татăкĕсем туртăннă пек—çавăрăнса тăчĕç...

— Йулташсем! Епĕр пайан хамăр кам иккенне уççăнах каласа пама шут тытрăмăр, епĕр пайан хамăр йалава, ăслăлăх, тĕрĕслĕх, ирĕклĕх йалавне çĕклетпĕр!

Сывлăшра йалав аври шурă, вăрăмскер курăнса карĕ, тайăлчĕ, халăха çурса ун хушшине пытанчĕ, тепĕр минутран çынсен çÿлеле пăхса тăракан пичĕсем çийĕн, хĕрлĕ кайăк пек, ĕçхалăхĕн йалавĕн сарлака пирĕ вĕçсе хăпарчĕ.

Павăл аллине çÿлеле çĕклерĕ, йалав сулкаланчĕ, унтах унăн шурă, йака йăвăççинчен темиçе вунă алă харăс çавăрса тытрĕç, вĕсем хушшинче хăй амăшĕн алли те пур.

— Ĕçхалăхĕ сывă пултăр!—тесе кăшкăрчĕ Павăл.

Темиçе çĕр сасă ăна хирĕç кĕрлесе илчĕ.

Халăх вĕрет, ун хушшинчен йалав йеннеле çĕнĕ алăсем, йалавăн вăй-хăватне туйса илнисен аллисем туртăнаççĕ.

— Пĕтĕм тĕнчери ĕçлекен çынсем сывă пулччăр!—тесе кăшкăрчĕ каллех Павăл. Вăйĕпе те, савăнăçĕпе те пысăклансах пыракан ,халăх хумĕ ăна хирĕç пинлĕ çăварпа чуна кисрентермеле сасăпа кĕрлесе карĕ.

Халăх тата тачăрах пĕрлешрĕ. Павăл йалавпа сулларĕ, вăл сывлăшра сарăлса кайрĕ те, хĕвелпе йăлтăртатаканскер, илемленсе сарăлса, малала шурĕ...

Амăшĕ тутисемпе ăшшăн кулкаласа Мазин хыççăн пырать, ун пуçĕ урлă хăйĕн ывăлĕпе йалав çине пăхать. Унăн тавра савăнăçлă питсем, тĕрлĕ-тĕслĕ куçсем ирте-ирте çÿреççĕ—пуринчен те малта унăн ывăлĕпе Ентри пыраççĕ. Вăл вĕсен сассине илтет—Ентрин çемçе, нÿрĕ сасси ун ывăлĕн хулăн сассипе пĕр пулса йанăрать:

„Тăрăр, çĕкленĕр, ĕçлекен халăхсем.
Тăрăр çапăçма выçăхнă етемсем!..“

Урам вĕçĕнче, площчăт çинз тухмали çула картласа, пĕр тĕслĕ сăрă етемсен çтени тăнине курат амăшĕ. Вĕсен кашнин хулпуççи çинчех çивĕч вĕçлĕ штыксем сиввĕн, çӳхен йалтăртатса тăраççĕ. Çак пĕтĕм çтенаран, пĕр сасă-сăр, пĕр хускалмасăр тăраканскертен рабочисем çине сивĕ çапса тăрат.

Лăпланчĕ, шиклентерет. Йалав çĕкленчĕ, силленчĕ, çынсен пуçĕ çийĕнче вĕлкĕшсе, йерипен сăрă çтена пек тăракан салтаксем йеннеле шурĕ.

Амăшĕ аллисемпе кăкрине йарса тытрĕ, унтах кайала çавăрăнса пăхрĕ те,—унччен урам туллийех капланса, кĕрлесе тăракан халăх хумĕ—йалавпа уйăрăлса кайнисем çине пăхса, шикленсе, нимĕн тума пĕлмесĕр тăнине курчĕ. Вĕсем хыççăн пĕр ик-виç теçетке çын пырат, малала кашни йарса пусмассеренех кам та пулин вĕсенчен айаккала сиксе ӳкет. Урам варринчи çул хĕрсе кайса, ура тупанĕсене çунтарса илнĕнех туйăнат çакна курсан.

— Çап ăна!—илтĕнчĕ çилĕлĕ сасă.

— „Пусмăр влаçĕ пĕтĕ“—малала пулассине пĕлтерет йурă.

— „Пĕтĕм халăх сиксе тăрĕ!“—тесе шанчăклăн, хайаррăн йурлаççĕ вăйлă сасăсем.

Анчах йуррăн йанăравĕ хушшинчех командă парат... тенĕ сăмахсем хуллен илтĕнеççĕ:

— На руку!.. тени йанăраса кайрĕ малта.

Сывлăшра штыксем авкаланса хумханчĕç, ӳкрĕç, йалава хирĕç тăсăлчĕç.

— Марш-ш!

Амăшĕ куçне сиктермесĕр пăхса тăрат.

Салтаксен сăрă хумĕ хусканчĕ, пĕтĕм урам урлăш сарăлса, хăйĕн умĕнче кĕмĕл пек çутăлакан йĕс штыксене йалтăртаттарса, йерипен, сиввĕн малала шурĕ.

— Саланăр!—тесе кăшкăрат пĕчĕк офицер çинçе сассипе, шурă хĕçпе сулкаласа.

Çывхарнă çемĕн çывхарчĕç хĕрлĕ йалав çыннисемпе сăрă çынсен çăра ĕречĕ. Салтаксен сăн-пичĕсем уççăнах палăракан пулчĕç.

Йурă сӳнсе ларчĕ. Павăл йĕри-тавра таччăн тăрса çынсем утма чарăнчĕç, анчах Павăл малалах утса пырат.

Йалав айĕнче пĕр çирĕм çынна йахăн тăраççĕ, унтан ытла мар, анчах вĕсем пит çирĕп тăраççĕ...

— Илĕр, поручик, çакна унтан,—тесе йанăраса кайрĕ çӳлĕ старикĕн сасси.

Аллине тăсса вăл йалав çине тĕллесе кăтартрĕ.

Павăл патне лутра офицер чупса пычĕ, аллипе йалав йăвăççинчен çавăрса тытса:

— Пăрах!—тесе, çухăрса йачĕ.

— Ил аллусене!—терĕ хыттăн Павăл.

Хĕрлĕ йалав пĕр вăхăт сывлăшра пĕрре сылтăмала, тепре сулахайала сулкаланса тăчĕ те, каллех тӳрленсе тăпланчĕ. Пĕчĕк офицер кайала сиксе ӳкрĕ, çĕр çине ларчĕ.

— Çавăрса тытăр вĕсене!—терĕ старик урисемпе тапса.

Ик-виç салтак малала сиксе тухрĕç. Пĕри пăшал аврипе хăмсарчĕ,—йалав чĕтресе кайрĕ, тайăлчĕ, салтаксем хушшинче çухалчĕ.

---

1. Демонстрацине йертсе пыракан Павăл хăйне-хăй мĕнле тытать? Демонстраци мĕнле пĕтнĕ? Патша тарçисем мĕншĕн Майăн пĕрремĕшĕнчи демонстрацине хĕçпăшалпа салатса пынă?

2. Революциччен есĕр кам та пулин рабочисен демонстрацинче пулнă пулсан, ун çинчен каласа парăр. Демонстрацине мĕнле сăлтавпа тунă? Вăл мĕнле пулса иртнĕ? Полиципе хирехирĕç тăрса кĕрешмелисем пулнă-и?

Шуçăм килнĕ чух.

(1905—1906 çулсенче пулнă ĕçсем)

Нумай шавланă хыççăн, çĕрле пулсан тин, пуху саланать. Хурал пӳрчĕ те йулать пушанса. Çитăр Йăванĕн ăшчикĕ кӳтет. Мĕнле кӳтес мар?—Вăл пĕччен, вăл тăлăх! Çак пысăк йалта ун пек шухăшлă, ун пек ăспуçлă çын çук! Халăх ытла та тĕттĕм—вăл патшашăн тăрать; хăйĕн чи ырă тусĕсене палламасть. Тусĕсем çине вăл, начальниксем улталаса суйнипе, темле тискер тăшмансем çине пăхнă пек пăхать. Ку халăха вĕрентес пулать, ăна хăйĕн ырă тусĕсĕмпе паллаштарас пулать. Анчах ку çăмăл мар, питĕ пысăк ĕç!—Çак шухăшсем Йăвана канăçлăх памаççĕ. Çавăнпа вăл пухуран васкасах тухать. Килне кĕрсе çăкăр çырткалать те, Йăван çав каçах 3 çухрăмра ларакан кӳршĕ йала Чиркӳ кассине чавкăнать. Вăл унта Долбилăв учитĕл патне кайать

Долбилăв—Чиркӳ кассинчи земски шкул учитĕлĕ. Вăл Йетĕрнесем, революцишĕн ĕçлекенсенчен ку таврара чи паллă, хĕрӳлĕ çын.

Йăван Долбилăв патне çитсе кĕнĕ вăхăта тĕттĕм пулса çитет. Долбилăв ăна, хавассăн йышăнса, хăй патĕнче ларакан тепĕр учитĕлпе паллаштарать.

— Килех, Иван Çидăрч! Акă çакăнта лар та, хăйулă калаç. Ку ман йулташ, Зеленовкă учителĕ—Çвистун, вутхĕм чĕрелĕ революционер. Паллаш унпа, тĕрĕ вăл йулташĕ çине кăтартса.—Ак ку, У-касси хресченĕ Иван Çидăрч. Революцине йуратакан,уншăн çунакан ун пек хресченсем ку таврара питĕ сахал. Вăл пире хамăр ĕçе тума лайăх пулăшĕ, терĕ вăл йулташне, Иван çинеле кăтартса.

Çав вăхăтрах унта тата ик-виç çын пырса кĕреççĕ. Хĕрӳлĕ халап пуçланат.

Йăван пайан пулса иртнĕ пуху çинчен каласа пĕлтерет.

— Ăшчикĕм уçăлчĕ сире курнипе,—терĕ вăл савăнса, сăмахне каласа пĕтерсен.

— Есĕ пире хуйхăлă хыпар пĕлтертĕн пулсан, епĕ сана савăнмали калам. Шупашкар уйесĕнче, халĕ анчах, темиçе вулăсра та вăйлă пăлхавсем пулчĕç, тет; пĕтĕм халăх йалĕ-йалĕпе çĕкленсе, полицисене, исправниксене ватса пĕтернĕ, тет. Вăт, мĕнле ĕçлеççĕ, йулташсем. Пирĕн те хăйулăрах, хĕрӳлĕрех ĕçлеме тытăнмала,—терĕ Долбилăв.

— Чим-ха, тепĕр икĕ уйăхран, епĕр те хамăр хăвата кăтартăпăр... Пирĕн кружок та ӳссех пырат. Халĕ те шанчăклă ĕçлекенсем 7—8 çынна çитрĕмĕр. Шупашкар пăлхавĕ сарăлсан, епĕр те халăха ура çине тăратма пĕлĕпĕр. Анчах, халăх хушшинче пикенерех, васкаса, тата чухласа ĕçлемеле... терĕ Çвистун.

Халап хĕрӳленет. Халăх хушшинче мĕнле ĕçлесси çинчен, прокламацисем хатĕрлесе мĕнле салатасси синчен канашлаççĕ.

Ку канашлу çурçĕр иртсе автансем авăтнă вăхăтала тин саланат. Йăван та пурне те сывлăх сунса алă парса тухат те, çĕр хутах уй урлă килнеле уттарат.

Уйра сивĕ те тĕттĕм. Аслă çанталăкăн тĕксĕм, уйар тӳпинче мĕлйун çăлтăрсем йăлтăртатса, выльаса тăраççĕ. Çурçĕр йенчен сивĕ çил вĕркелет. Айакри йалсенчен йытăсем хамлатса вĕрни илтĕнет. Йăван, пĕр пĕччен, уй урлă çула тăрăх типĕ йура чĕрриклеттерсе таврăнат. Халĕ ĕнтĕ ăна, сĕм тĕттĕм уйра пĕр пĕччен пулсан та, тăлăх пек мар. Ун ăшчикки лăпкă, чунĕ савăнăçлă. Пуçĕнче Долбилăвпа Çвистун сăмахĕсем, вĕсен сăнĕсем, вĕсен кĕлеткисем кăна выльаса пыраççĕ. Чăнахах та кăмăллăçке ку учителсем: иккĕш те çирĕм пилĕкелле çитнĕ вăйпитти çăмрăксем, питкуçĕсем илемлĕ, вăтам шăмшаклă, çивĕч чĕлхелĕ маттур етемсем.

„Пире ес хаљ кирлĕ мар“.

(Пĕр капиталисла патшалăхри рабочин пурнăçĕ)

Вăл Джон Мей йатлă. Икĕ çул ĕнтĕ вăл инвалид пулни. Ĕçсĕр, хваттерсĕр, выçă, кĕперсем айĕнче, çӳпçапсем тăкмали шăтăксенче вырткаласа çӳрет.

Ку икĕ çул ĕлĕкрех пулнă. Виçĕ кун хушши пĕр татти-сыпписĕр аслă маçтăр ăна штамповаљнăй станок çинче ĕçлеттернĕ. Вара 71-мĕш сехет çитнĕ чух, çамрăк ӳт-пĕв чăтайман. Джон Мейăн куçĕсем хăйсемех хупăннă. Анчах машинă пĕре те тăхтаса тăмаст. Вăл ывăнма пĕлмест. Сасартăк хăйĕн хурçă çăварĕпе Джона аллинчен хыпнă та, пĕр самантрах хăйĕн урлă çавăрса пăрахнă. Джонăн хăрах алли, ури, тата çурăм шăмми хуçăлнă.

Джон бољницăра пĕр çулталăк та çурă выртнă. Тухтăрсем ăна çапла каласа лăплантарма тăрăшнă:

— Ан хуйхăр, Джон. Лăплан, ан йĕр. Хăвăн хуçу тата патшалăх сана тăрантарĕç.

Бољницăран Джон аран-аран утакан пулса тухрĕ. Анчах ăçта кайас-ха унăн? Пысăк хулара пĕр тăван та, пĕр йулташ та çук.

— Хапрăк хуçи патне кай,—терĕ ăна бољницăран тухас умĕн шур çӳçлĕ, çемçе кăмăллă ватă тухтăр.—Хуçа сана выçă вĕлермĕ.

Джон ăна итлесе чăнах та хăй ĕлĕк ĕçленĕ хапрăк хуçи патне карĕ. Акă вăл çекретар патĕнче тăрат.

— Итлĕр-ха, сер...

Анчах çекретар пуçне те çĕклемест, тӳрех кăшкăрса тăкрĕ.

— Кай, кай кунтан. Ыйткаласа çӳрекенсене епĕр нимĕн те памастпăр.

— Епĕ—Джон Мей.

Çекретар пуçне тинех çĕклерĕ.

— А-а, есĕ-и ку? Есĕ хуçана курас тетĕн-и? Аттa, ут ман хыççăн.

Хуçа кабинечĕ умĕнче кĕтмели пӳлĕмре тĕттĕмрех. Сасартăк шалтан хуçа сасси илтĕнчĕ. Вăл çекретарпе калаçат.

— Рудољф! Санăн урăх ĕç çуки мĕн, пĕр май ман пата ыйткалакансене илсе çӳретĕн?

— Ку—Джон Мей,—тет çекретар.

— А-а... илсе кĕр-ха еппин ăна.

Джон хуҫа сӗтелли умне пырса тăчӗ. Хуҫа ăна йӗри тавралах пăхса илчӗ те, тăрăхланă пек калаҫма пуҫларӗ.

— Шел, шел сана. Пирӗн пата ма килтӗн-ха ӗнтӗ есӗ?

Джон кăшт ҫеҫ йӗреймест.

— Манăн ниҫта кайма ҫук... Ҫимели те нимӗн те ҫук. Тен, есӗр пăртак хӗрхенмӗр-и? Епӗ сирӗн хапрăкра суранланнă вӗт.

— Иурат, терӗ хуҫа. Акă, ил, ҫакăнта пӗр фунт-стерлинг.[1] Ыттине илме ырăн кил. Ҫук, ҫук, тăхта-ха пăртак. Ҫакăнта, пӗр пӗчӗк хут татки ҫине алă пус.

Джон хӗпӗртенипе хучӗ ҫине пăхмасăрах алă пусаť.

— Тав сире, сер...

Хуҫа ҫак вăхăтрах ҫекретарӗ ҫине пăхса чейен куҫне хӗссе илчӗ. Джон ăна сисмерӗ.

Тепӗр ирхине Джон Мей каллех ҫекретар патне пырса тăчӗ.

— Мӗн кирлӗ? — терӗ ҫекретар.

— Есӗр мана пайан килме хушрăр вӗт.

— Кам хушрӗ? Есӗ ўсӗр-и мӗн?

— Ҫук, епӗ ўсӗр мар. Есӗр мана ӗнер каларăр... йулашки укҫине илме килме чӗнтӗр.

— Ха-ха-ха! Йулашки укҫине тетӗн? Есӗ ӗнер ҫеҫ 1000 стерлинг илсе тухса карăн вӗт. Ăнлантăн-и? Тўррипе каласан, мӗн манăн санпа калаҫса вăхăта ирттерес. Ей, сторăш, кăларса йарăр-ха ҫак ыйткалакана, текех ан кӗртӗр!

Джон нимӗн те ăнланаймарӗ. Ăна тӗксе урамала кăларса йачӗҫ. Сута кайса пăхрӗ, анчах сут вăл каланине йышăнмарӗ. Малтанхи кун пырсан, ăна хуҫа улталаса ҫырнă раҫпискă ҫине алă пустарнă.

Джон Мей асапланса, ҫула кӗперсем айӗнче, хӗлле йытă йăвисенче ҫывăрса ҫўрет. Анчах унăн асапланмали нумай йулман ӗнтӗ. Вăл начарланса ҫитнӗ. Часах Джон чухăнсен масарӗ ҫинче хăйне валҫи канăҫ тупӗ.

Капиталиссем хăйсен рабочисене ҫакнашкал асаплантараҫҫӗ ӗнтӗ. Етеме йурăхсăра кăлараҫҫӗ те, пулăшу парас вырăнне хăваласа йараҫҫӗ.

Йут патшалăхсенче рабочисене хўтӗлекен пур-и?

Рабочи амансан, капиталиссем рабочине пулăшаҫҫӗ-и?

---

[1] Англири укҫа шучӗ. Хаҫхи хисеппе 6 тенкӗ йахăн.

Май уйавĕ.

И. С. Тукташ.

Пурте тухăр урама,
Тухăр капăр.
Пайан майăн уйавне
Уйавлатпăр.
Пайан пурте савăнар
Чаплă куншăн.
Йалавсем йăтса утар
Епĕр уншăн.
Кирлĕ мар пире мăнкун—
Тĕн ултавĕ.
Пирĕн хамăрăн аслă кун—
Май уйавĕ.

Çĕнтерейме мул, хуçа—
Ёмĕт çитмĕ.
Коллективлă пурнăçа
Кирĕк витмĕ.
Коллективĕ хулапа
Мăшăрлантăр.
Кун ан парăр кулака—
Пăчăхлантăр.
Пурте тухăр тумланса,
Тухăр капăр.
Пайан майăн уйавне
Уйавлатпăр.

Земски начаљникпе паллашни.

Унеççи хăйĕн упăшки патша вăрçинче вилни çинчен хыпар илнĕ. Нумай макăрчĕ Унеççи хăйĕн упăшкишĕн. Унтан шухăшларĕ: „Патшапа турăшăн вилнĕ теççĕ, апла пулсан, мана патша пулăшма кирлĕ“.

Анчах, пулăшас вырăнне куланай тӳлемешкĕн Унеççин йулашки икĕ сурăхне илсе кайрĕç. Унеççи хăйĕн 5 çулхи ачине, Ваççана, çавăтрĕ те, вулăса кайрĕ. Хут тăлăха хĕрхенсе сурăхсене калла парĕç, ашшĕ патшапа турăшăн пуçне хунă вĕт, тесе шухăшласа пырат çул тăршшĕпе Унеççи.

Вулăс кантурне пырса кĕчĕ. Сĕтел хушшинче темле етем ларат, кăкăрĕ çинче ылтăн хĕрес. Писăрпа старшина ылтăн хĕреслĕ етем умĕнче кĕтесре тăраççĕ.

— Кам ку?—тесе ыйтат Унеççи сторăшран.

— Земски начаљник,—тет лешĕ.

„Лайăх та килтĕм иккен“, тесе шухăшлат Унеççи, хăй Ваççине малала тĕртет.

—Мĕн кирлĕ?—терĕ земски начаљникĕ.

Унеççи вырăсла пĕлмест, анчах начаљник хăйĕнпе калаçнăран хĕпĕртерĕ, ачи çине кăтартса тем мăкăртатма пуçларĕ.

—Ачун çĕлĕкне хыв,—тет начаљник.

Каллех ăнланаймарĕ Унеççи, анчах курат: лешĕ тем çиленме пуçларĕ.

— Çĕлĕкне хыв, çĕлĕкне,—тет сторăшĕ чăвашла.

Ăнланмаст мĕн каланине Унеççи, хăйĕннех перет: „Патшашăн, турăшăн вилчĕ вĕт упăшка", тет.

— Калаççĕ сана çĕлĕкне хыв тесе,—урса кайрĕ земски начаљник,—курмастăн-и мĕн сан умăнта кам иккенне, —тесе çапрĕ кăкăрĕнчен хăйне хăй.

Старшина Унеççи ачи патне хăвăртрах çĕлĕкне хывас тесе ывтăнчĕ. Унеççи ачине тем тăвасран хăраса старшинине тĕксе йачĕ.

— Хупса лартас пĕр талăка! —тискер сасăпа кăшкăрса йачĕ земски начаљник. Старшинапа писăрĕ Унеççийе алăран тытса çавăтса кайрĕç. Пĕр пĕчĕк вите пекскерне кӳртрĕç те, алăкне питĕрсе хăварчĕç. Çав вăхăтрах килкартинче Ваççа макăрни илтĕнчĕ. Унеççи тӳсеймесĕр алăка шаккама, чӳрече решеткисене турткалама тытăнчĕ.

Алăк уçăлса кайрĕ. Алăк умĕнче земски начаљникпе уретник тăраççĕ. Унеççи çав тери хăрушă етеме курсанах алăк патнеле ыткăнчĕ, анчах уретникĕ тытса чарчĕ. Земски начаљникĕ темскер каларĕ те, Унеççийе темиçе хут çапса тухса кайрĕ.

Витине татах питĕрсе хăварчĕç.

Çапла паллашрĕ Унеççи патша чиновникĕпе—земски начаљникпе. Анчах вĕсен тепре курнăçмала пулчĕ. Револљуци хыççăн вулăса Хĕрлĕ гварди килнĕччĕ. Унеççи, вулăса ĕçпе пынăскер, земски начаљнике тытса кайнине курса йулчĕ.

Рабочи клас хăйне пусмăрта тытса тăракансене Ленин, тата Сталин пуç пулса тăракан болљшевиксен коммунисла партийĕ кĕрешӳре йертсе пынипе çĕнтерчĕ.

Халăх патне.

В. И. Ленин.

(Çак халăха чĕнсе каланине Ленин 1917-мĕш çулта, Октабĕр революци çĕнтернĕ хыççăн çырнă).

Йулташсем—рабочисем, салтаксем, хресченсем, мĕн пур ĕçхалăхĕ!

Рабочисен тата хресченсен революцийĕ Керĕнски улталанă йышлă мар казаксен йулашкисене салатса йарса, арĕслесе, Питĕрте татăклăнах çĕнтерчĕ. Революци Мускавра та çĕнтерчĕ. Питĕртен вăрçăлă вăйсем турттарса тухнă темиçе пуйăс пырса çитичченех Мускавра йункĕрсем, тата ытти корнилăвцăсем килĕшӳ условисене—йункĕрсене хĕçпăшалсăрлантарассине, çăлăнăç комитетне [1] салатса йарассине—йышăнса алă пуснă.

Фронтран тата йалсенчен кашни кун, кашни сехетре окопри салтаксенчен тата уйессенчи хресченсенчен нумайĕшĕ çĕнĕ правителствăпа унăн мир тăвасси тата çĕре пĕр тăхтамасăрах хресченсене парасси çинчен кăларнă саккунĕсене хапăллани çинчен пĕлтернисем килсе тăраççĕ. Рабочисемпе хресченсен революцийĕ çĕнтеретех, мĕншĕн тесен уншăн халăхăн пысăкрах пайĕ тăрат.

Паллах ĕнтĕ, помешчиксемпе капиталиссем, буржуазипе тачă çыхăнса тăракан чи аслă служăшчисемпе чиновниксем, пĕр сăмахпа каласан, мĕн пур пуйансем, тата вĕсен аллине çĕклесе пыракансем çĕнĕ революцине тăшманла кĕтсе илеççĕ, унăн çĕнтерĕвĕсене хирĕç тăраççĕ, банксен ĕçне сӳнтерсе лартассипе хăратаççĕ, тĕрлĕ учрежденисен ĕçне пăсаççĕ йе чарса лартаççĕ, ăна тĕрлĕ майпа чăрмантараççĕ, йе тӳррĕн, йе айккинчен чăрмавлаççĕ. Кашни ăнланулă рабочи епĕр çак хирĕçĕве кирек йепле те тĕл пулассине лайăх ăнланат, большевиксен пĕтĕм парти пичечĕ кун çине нумай хут кăтартса панă. Ĕçхалăх класĕсем çак хирĕçленинчен пĕр минутлăха та хăраса

---

[1] Обшчĕствăна сыхлакан комитет (урăхла „Революцине хăтаракан комитет") Мускавра Советсене хирĕç хĕçпăшаллă кĕрешĕве йертсе пынă.

ӳкмĕç, буржуази майлисем хăратни, забастовкăсем туни умĕнче пĕр ним чухлĕ те чĕтресе каймĕç.

Пирĕн йенче халăхăн пысăк пайĕ. Пирĕн йенче пĕтĕм тĕнчери ĕçлекенсемпе пусмăр айĕнчисен пысăкрах пайĕ. Пирĕн ĕç—тӳрĕлĕх ĕçĕ. Епĕр çĕнтеретпĕрех, çĕнмелех.

Капиталиссемпе аслă чиновниксем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкăпăр. Банксемпе çиндикатсене национализацилесси çинчен уйрăм саккун, патшалăх саккунĕ кăларма хатĕрлетпĕр. Епĕр ун урлă кайса пĕр çыннăнне те пурлăхне тытса илместпĕр. Ĕççынни пĕри те пĕр пус та çухатмĕ: йалтах урăхла, ăна пулăшу пулĕ. Пит те çирĕппĕн учотласа контроль туса пынисĕр пуçне, тата малтантарах хунă налогсене илнисĕр пуçне, правитĕлствă урăх нимĕнле йĕркесем те тăвас темест.

Çак тивĕçлипе илсе тăрас тенине хапăлласа халăхăн питĕ пысăк пайĕ рабочипе хресченсен вăхăтлăх правитĕлстви тавра пĕтĕçсе тăчĕ.

Йулташсем—ĕççыннисем! Халь есĕр хăвăр патшалăха тытса тăнине астăвăр. Есĕр пĕрлешмесен, патшалăхăн пур ĕçĕсене те хăвăр алла илмесен, сире никам та пулăшас çук. Сирĕн Советсем—кунтан вара патшалăх влаçĕн оргăнĕсем, полномочилĕ, ĕçе татса паракан оргăнсем пулса тăраççĕ.

Хăвăр Советсем тавра чăмăртанăр. Вĕсене çирĕплетĕр. Хăвăрах айалтан, никама кĕтмесĕр ĕçе тытăнăр. Питĕ çирĕп революцилĕ йĕрке туса хурăр, пйанцăсем, хулигансем, контрреволюцилĕ йункĕрсем, корнилăвцăсем тата вĕсен йевĕрлисем анархи тума пикеннисене пĕр хĕрхенмесĕр пусарса пырăр.

Продуктăсене туса кăларассипе учота илсе пырас ĕçе питĕ çирĕп контроль туса пымала тăвăр. Халăх ĕçне сийенлеме хăйакансене пурне те, ку сийен производствăра саботаж (пăсни, чăрмавлани, çĕмĕрни) тунинче йе продуктăсемпе тырă запасне пытарса хăварнинче палăрат-и, йе тырă грузĕсене тытса тăнинче палăрат-и, йе чугун çул, почтă, телеграф, телефон ĕçне пăснинче палăрат-и, пĕтĕмĕшпе илсен, мир ĕçне, хресченсене çĕр парас ĕçе, производствăна тата продуктăсем валеçессине рабочисем тĕрĕслесе пырас ĕçе хирĕçленинче палăрат-и—арĕслĕр те халăхăн революцилĕ сучĕ аллине парăр.

Йулташсем—рабочисем, салтаксем, хресченсем, мĕн пур ĕçхалăхĕ! Пĕтĕм влаçа хăвăр Советсен аллине илĕр. Çĕре, тырра-пулла, хапрăксене, орудисене, çимĕç-

сене, транспăрта куç шăрçине сыхланă пек сыхласа, перекетлесе тăрăр—кунтан малашне вĕсем пурте пĕтĕмĕшпех сирĕн, пĕтĕм халăхăн пурлăхĕ пулĕç. Майĕпе, хресченсенчен нумайĕшĕ килĕшсе ырланипе, вĕсен тата рабочисен пурнăç опăчĕ кăтартса панисем тăрăх, епĕр социалисăм çĕнтерĕвĕ патне çирĕппĕн, пĕр чакмасăр кайăпăр, ку çĕнтерĕве чи кулҍтурăлă çĕршывсенчи малта пыракан рабочисем çирĕплетĕç, вăл çĕнтерӳ халăхсене çирĕп килĕшӳ парĕ, пур тĕрлĕ пусмăртан, тата пур тĕрлĕ експлоатацирен те хăтарĕ.

Халăх комиссарĕсен канашĕн председателĕ

В. Улҍйанăв (Ленин)

Нойаберĕн 18 (5) мĕш, 1917 çул.

Шуррисемпе çапăçни.

В. И. Краснов (Асли).

Хусана кайакан авалхи хурăнлă çул çеремленсе ларнă. Хусан çулĕ çинче ĕлĕк хурăнсем пайтах пулнă пулас. Каснă йăвăç тункатисем хурланса куççулҍ йухтарнă пек йухтараççĕ кăпăклă сĕткенĕсене.

Хĕвел улăхса пырат. Хăйĕн ăшă куçĕпе пăхса, пирĕн чĕрене вутлантарасшăн хĕвел пире куç хĕсет. Хĕвел те пирĕн майлă пек туйăнат.

Çурçĕр йенчен сивĕ çил вĕрме тапратрĕ. Пĕр-пĕринчен ăмăртмала васкаса чупма тытăнчĕç пĕлĕтсем. Пирĕнпе ăшăнса, йуратса калаçакан хĕвеле хура пĕлĕтсем хупăрласа илчĕç. Çăмăр пĕрĕхкелеме пуçларĕ.

Выртатпăр...

Акă цеп тăрăх:

— Цеп тăрăх пĕлтерĕр: сылтăм йенчен шуррисен разведки, ун хыçĕнчен сайра цеп туса салтаксем пыраççĕ, тенĕ сăмахсем куçа пуçларĕç.

Çак сăмахсене манас мар тесе тăрăшса итлесе, кашнийех çумĕнче выртакан йулташне каласа пĕлтерет. Çапла çак сăмахсем пĕр самантра пĕр вĕçрен тепĕр вĕçне çитеççĕ.

Ун хыççăн тата çĕнĕ хыпар:

—Цеп тăрăх каласа пĕлтерĕр: тăшман пире сылтăм йенчен çавăрса илсе пырат. Ку хыпар кăмăла пăтратат. Кĕркуç ним тума аптăраса хăйне хăй: Ах, мурсем, мĕскерле çынсем унга маххă параççĕ, тесе мăкăртатат.

Сылтăм йенче çав тери вăйлă çапăçу хусканса кайрĕ.

— Тат-та-та-та-та...

— Пăт-пат... Пăшал сасси, пулемет сасси пĕр чарăнмасăр шатăртатма пуçларĕ.

Пуљăсем пирĕн пата та çите пуçларĕç.

—Чувв, чă-ăв—тесе шăхăрса, тусан кăларса, çĕре чăмаççĕ. Упа сурчăкĕ пек пĕрĕхекен çăмăр çийелтен çеç тусана пусарнă. Çил вĕрнипе тусан вĕçмест.

Çапах та çĕре чакалтаса кĕрекен пуљăсем тусан çĕклеççĕ, çавăнпа та пуљă ăçта ўкнисем лайăх курăнаççĕ.

— Йулташсем, малала,—епĕр вĕсене сулахай йенчен хĕстерер!—тет командир, Морозăв йулташ.

Пурсăмăр та, пĕвесе хунă çырма шывĕ йепле пĕвене татса, пăлханса, шавласа хускалса кайаť, çавăн пекех хускалса кайрăмăр.

Упаленсе, хырăмпа шуса, хăшĕ-пĕри пĕшкĕнсе, пурте малала тапаланаççĕ. Малта сайра ĕрет çеç, ун хыççăн çăра ĕрет пыраť. Акă пирĕн умра пĕр çырма пуçĕ курăнаť. Унччен те пулмарĕ, çырмаран:

— Тра-та-та... тра-та-та! тутарса пулеметпа çунтарма тытăнчĕç.

Пирĕн йулташсем кĕлте пек йăвана пуçларĕç.

— Çырма пуçне пулемет лартмала! Унччен те пулмарĕ: Пулемет! пулемет! тесе пурте тенĕ пекех кăшкăра пуçларĕç.

Алекçей Попов, çав тери вĕри чĕрелĕскер, ура çине тăрса кăшкăрса, револуци тăшманĕсене тĕллесе пеме тытăнчĕ.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ печĕ. Тăваттăмĕш хут вирлĕ тĕллесе перес тĕлтех Алекçей месерле çавăрăнса та ўкрĕ. —Алекçей пĕтрĕ—тенĕ сасăсем хăлхана килсе те кĕчĕç.

Шуррисем хушшинче те чăвашсем пур иккен. Чăвашсем-шуррисем канавран: Ей, сăмса шывĕсем, кампа çапăçатăр есĕр? Епĕр нумаййăн, пирĕн 5000 çын. Парăнăр! —тесе кăшкăраççĕ.

Михаља:—Ей, сурăхсем, тăм пуçсем, тухăр унтан!— сире шуррисем улталаса пирĕнпе çапăçма илсе килнĕ вĕт! —тесе кăшкăраť.

Кунта сăмахпа кăшкăрашса ĕрлесе илме çук. Пĕр-пĕрне лайăх ўкĕтлекен, ăнлантаракан чĕлхе вăл—пăшал чĕлхи—пуљă.

Пирĕн пулемет командинчен икĕ латыш, арăмĕпе упăшки, икĕ йенчен пуљă çăмăрĕ çутарнă вăхăтра çырма

пуçне персе те çитрĕç. Пысăк пӳллĕ, хура сухаллă латыш хăлаçланса хыçала кайса та ӳкрĕ.

Ну пулемет, пĕтрĕ. Ун патне шуррисем упаленсе пыраççĕ. Вĕсем çине тĕллесе перетпĕр, анчах пеме те çав тери хăрамала. Пулемет патĕнче хамăр йулташ арăмĕ чакаланат.

— Пĕтрĕ вĕт ку, пулемет та шуррисен аллине лекет, тесе кăшкăраççĕ йулташсем.

— Тра-та-та!..

Кăна хăшĕ перет? Пĕр вăхăтлăха ăнланмасăр тăратпăр. Çырмара ларакансем пеме шăпах чарăнчĕç. Пулемет патне упаленсе пыракансем сăмсисемпе йĕпе çĕр çумне тăрăна та пуçларĕç.

— Наше берет. Уррра!

Çапах та лешсем пеме чарăнмаççĕ.

Хĕлип Кĕркуçĕ вăрçăра арăслан пек. Вăл малта çырма хĕрринче выртакансене штыкпа чикме тытăннă. Ыттисем те персе çитрĕç. Çапăçу çав тери хĕрсе кайрĕ. Çапăçу вăрăма пымарĕ, çырмана çапăçса илтĕмĕр. Кунпа çитмест, тата малала васкамала.

Пин çынна йахăн плена илтĕмĕр. Хĕрӳлĕ çапăçура вилнĕ йулташсене пăрахса хăварсах малала чупатпăр. Тăшман Кабаковкă йалĕнчен Исакăвкă йатлă йала чакат.

Ёпхӳ патĕнчи çапăçу.

1919-мĕш çулта çуркуннехи уйăхсенче Колчак çарĕсем Атăл çывăхĕнчи çĕршыва пĕлĕт пек хупăрлама пуçларĕç. Хĕрлĕ çарăн пайĕсем Атăл йеннеле чакма тытăнчĕç.

Фрунзе кунĕн-çĕрĕн хăй кабинетĕнче. Хĕрлĕ çарăн штабĕнче те кунĕн-çĕрĕн ĕç вĕрет. Фрунзе кабинетĕнче канашлусем. Штабра Фрунзе приказсем парат, ыйхă пĕлмесĕр телеграф тăрăх калаçат.

Акă йулашки кунсем çитрĕç: Фрунзе хăйĕн полкисене малала илсе кайрĕ.

Мĕн? Малала кайрĕç-и мĕн? Хĕрлĕ çар чакма пăрахса çĕнтерӳсем патне малала туртăнчĕ-и?

Колчак шыв леш йенне кайнă. Шыв урлă каçмали кĕперсене пурне те çĕмĕрнĕ. Епĕр пырас çĕрти тырăсене, лаша апачĕсене çунтарса йанă. Тăшман Ёпхӳн çӳлĕ сăртĕнче Англи батарейĕсемпе, офицерсен полкисемпе шăртланса ларат.

Фрунзе Ёпхӳ хулине илес тесе сӑмах пачӗ, Колчак Мускава кӗрес тесе сӑмах пачӗ. Ҫак икӗ сӑмах вара Ёпхӳ сӑрчӗ ҫинче тӗл пулчӗҫ.

* * *

Каҫхине Хӗрлӗ ҫарта хӗрлӗ командирсемпе комиссарсен канашлӑвӗ. Канашлура Фрунзе. Вӑл пурне те лайӑх сӳтсе йавса тавҫарат: ийуӊ уйӑхӗнчи кӗске ҫӗрте миҫе сехетре—прахут ҫине, сулӑ ҫине миҫе салтак кӳртессине, миҫе минутра леш йенне пӗр полк каҫарассине тавҫарат. Акӑ пӗтӗмпех тавҫарнӑ, вак-тӗвек ӗҫсене те тавҫарнӑ. Хаԓ ӗнтӗ пӗтӗм план лайӑх курӑнса тӑрат.

Ну, йулташсем, ҫитӗ ӗнтӗ текех калаҫма, вӑхӑт ҫитрӗ ӗҫе туса пӑрахма.

Ҫӗрле, тискеррӗн шӑп ҫеҫ тӑракан ҫӗрле, Иванӑвӑ-Вознеҫенскӑри пир тӗртекен рабочисен пирвайхи ротине каҫарчӗҫ. Акӑ полкине те каҫарчӗҫ.

Полк шӑппӑн каҫса хӑвӑртрах ӗретӗн-ӗретӗн выртрӗ. Тул ҫутти палӑра пуҫласанах вӗсем кӗтмен-ҫӗртен тӑшман окопӗсене кисрентерме тапӑнӗҫ. Ку йенчен командӑ Чапайӗв аллинче, леш йенне вӑл хӑй йуратакан бригадӑ командирне—Иван Кутакова—йачӗ. Иванӑвскисем хыҫҫӑн—Пугачов полки, Разин полки, Тамашкински полк каҫмала.

Пирӗн батарейсем ҫыран хӗррипе хатӗрех тӑраҫҫӗ. Вӗсем, Чапайӗв команди тӑрӑх, харӑс ухлаттарса тӑшмана окопсенчен кӑларса ывӑтса, леш йенчи полксем ваԓԓи ҫул тасатмала.

Акӑ тӑруках командӑ.

Ух... Ух... х... ухлаттараҫҫӗ тупӑсем.

У... У... ҫ... и... и... Урнӑ тискер кайӑксен кӗтӗвӗ пек улаҫҫӗ йадрисем.

Сехри хӑпнипе тӑшман окопран сиксе тухса тарчӗ. Вара Иванӑвски полк, тикӗсӗн хумханса, малала уттарчӗ. Тӑшмана пӗр чарӑнмасӑр хӑвалаҫҫӗ.

Шыв хӗррипе ҫӳлеле сирпӗннӗ тӑшман, тӑна кӗрсен, халне илчӗ. Батаԓйонсене пурне те пӗрлештерсе, штыксемпе йалтӑртатса, пӳлеметсене хатӗр тытса пире хирӗҫ ҫаврӑнчӗҫ.

* * *

Тӑватӑ сехет ҫапӑҫса Ивановскисем патрунсене пӗтӗмпех пӗтерчӗҫ, ҫыран хӗрринчен ҫӗнӗрен патрун тавращӗ ҫителӗклӗ тӑратаймаҫҫӗ.

— Кайала пӗр утӑм та ан пултӑр! Астӑвӑр, йулташсем, ним ҫине те шанмали ҫук. Хыҫалта шыв, резервӑра шык анчах... тесе приказ пачӗ Кутаков.

Тӑшман хӑйӗн полкисемпе йагарласа хӗстере пуҫласан, пирӗн чӑтаймасӑр чарӑнса кайала чака пуҫларӗҫ. Епӗр чакнине кура тӑшман пушшех хӗсет. Акӑ вӑл, тискерскер, айакра та мар, пирӗн цепсем патӗнчех.

Ҫак вӑхӑтра темиҫе ҫын йуналугпа кустарса пырса сиксе анчӗҫ те, цепе чупса кӗчӗҫ.

— Йулташсем, патрунсем турттарса килеҫҫӗ. Малала, йулташсем, малала. Ур-ра!

Ҫывӑхра тӑраканнисем паллаçа хӑйсен ҫывӑхӗнчисене кӑшкӑрчӗҫ: Фрунзе цепре! Фрунзе цепре!

Таҫтан вӑй кӗнӗ пек цеп хумханса халланса кайрӗ. Ҫапӑҫакансем темскерле хавассӑн ҫӗкленсе, хӑйсене хӑйсем манса пурте харӑс малала чавтарчӗҫ. Тӑшман сехрине хӑпартса, унӑн ушкӑнӗсене питӗ хытӑ хӑваласа кайрӗҫ. Тӗттӗм пуличченех хӑваларӗҫ.

Ирхине Ёпхӳ хулине кӗчӗҫ. Ҫапла Ёпхӳ сӑртӗнче гӗл пулнӑ икӗ сӑмахран пӗри пулчӗ. Ҫӗпӗре кӗмели хапха йарах уҫӑлчӗ.

Ирӗклӗхшӗн ҫапӑҫакансем.

Ҫамрӑк ача лашин ҫилхи ҫумне ҫыпӑҫса сиктерсе килет. Вӗри тусан хыҫа йупа пек тӑрса йулат. Лаши кӑкӑрӗ тӑрӑх, супӑҥ кӑпӑкӗ пек, шурӑ кӑпӑк ҫӗр ҫине тафӑлса ӳкет. Ҫитсе чӑрӑннӑ-чарӑнманах вӑл:

— Утланӑр лашӑрсем ҫине, шуррисем ҫывхараҫҫӗ!— тесе пӗтӗм йала йанратса йачӗ. Хӑшӗ утланса ӗлкӗрчӗҫ, хӑшӗ ҫук.

— Та-та-та-та!.. пулеметпа пӑшал сасси хӑлхана йанӑратрӗ.

— Сыхланӑр кам йепле пӗлет, ҫапла. Чӗрӗле шуррисен аллине ан парӑнӑр!—терӗ хайхи ҫамрӑк ача.

Ача-пӑча йӗни, хӗрарӑмсем кӑшкӑрни, ӗнесем мӗкӗрни, лашасем кӗҫенни пӗтӗм йала хупласа хучӗ.

Лашапа та, ҫурран та палламан ҫынсем ирте-ирте кайаҫҫӗ. Пӗр чарӑнмасӑр:

— Тра-та-та, бум-бум-бум!—туни илтӗнет.

Йала йӗри-тавра шуррисем ҫавӑрса илнӗ. Хырӑмсемпе шуса, тӑват уран упаленсе йалала кӗнӗҫемӗн кӗреҫҫӗ. Вӗҫӗмсӗр пӑшал переҫҫӗ.

Хайхи çамрăк ача, çӳрен лашапа, пĕр хăрамасăр, лаши мăйĕ çумне выртса йалăн тепĕр вĕçнеле сиктерсе кайрĕ. Ун хыçĕнчен пурте. аллисенчи чукмарсене чăмăртаса, хăшĕ утланса, хăшĕ çурран вĕçтерчĕç.

Йала шуррисем кĕчĕç. Surăхсене, хурсене кăшкăрта пуçларĕç. Ăшă йунпа ăшă аш шăрши пĕтĕм йала сарăлчĕ.

— Хуçисем ăçта кайса пĕтнĕ?

— Пурте бандитсем пулса пĕтнĕ!—терĕ шăлне шатăртаттарса шурă офицер.

— Вĕсем мар! Есĕр бандитсем!—терĕ кăвакарнă ыраш çăкăрĕ çисе ларакан çара йанахлă салтак. Офицер салтак мĕн каланине ăнланаймарĕ.

Икĕ салтак аллисене пăшал тытса, пĕр хĕрарăмпа утмăл çулхи старике, аллисене хыçалала çыхса офицер патне илсе пычĕç.

— Акă бољшевиксем, ваше благороди.

Офицер ури çине сиксе тăчĕ те:

— Аха, лекрĕр-и, йăтăсем! Персе вĕлерес вĕсене!—терĕ.

Çара йанахлă салтак куçĕсене выљантарса, сивĕ тытнă чухнехи пек чĕтренсе:

— Атте! Анне! Есĕр-им?—тесе иккĕшне те ыталаса чуптурĕ.

Çисе ларакан салтаксем пурте ура çине сиксе тăчĕç. Офицер те кутăн чакрĕ. Унтан çара йанахлă салтак çине пăхса:

— Ав мĕн! Есĕ те бољшевик иккен. Персе пăрахăр, йăт çурине пенĕ пек!—терĕ.

Çара йанахлă салтак сасартăк çаврăнчĕ те, пăшалне тытса офицер йенне сулăнчĕ. Пăшалăн хура сăнни офицер кăкăрĕнчен кĕрсе кайса çурăм шăмми витĕр курăнчĕ.

— Çапла кирлĕ йăтта! тенĕ сасă купаланса тăракан салтаксем хушшинче йанраса кайрĕ. Йун йухтарса выртакан офицер урлă типшĕм салтак сиксе каçрĕ те, пыр шăтăкĕ çурăлас пек:

— Кирлĕ мар урăх вăрçă! тесе йанратса йачĕ.

Ун хыçĕнчен пурте: кирлĕ мар! тесе кăшкăра пуçларĕç.

Шурăмпуçпе пуçласа хĕвел тухиччен пĕтĕм йал йанăраса тăчĕ. Часах Тайга вăрманĕнче пытаннă çӳрен лашалă çын та хăйĕн отрйадне йала илсе тухрĕ.

Пуриншĕн те савăнăç çитрĕ. Партизансемпе салтаксем пĕрлешрĕç. Çапăçăва пĕтерме пулчĕç. Пăшал сăннисем çине хĕрлĕ йалав çакса хăйсен килĕсене саланчĕç.

Йал тăрăх савăнăç йурри йанрарĕ:

„Çакă пирĕн йулашки
Татăклă çапăçу:
Интернационалпа
Етем йăх чĕрĕлет"...

Сирĕн йалта, сирĕн таврара граждăн вăрçине ирĕккĕн кайакансем пулнă-и? Граждăн вăрçи хăш çулта пуçланнă, хăш çулта пĕтнĕ? Сирĕн таврара шуррисемпе хĕрлисем çапăçнине илтмен-и?

Хĕрлĕ часовой.

Уйăп Мишши.

Сĕм пĕлĕтсем çӳлте хуплаççĕ,
Теме сисет-çке урнă каçĕ.
Хура пĕлĕтсем—сассăр вăй,
Чикĕре хĕрлĕ часовой.
Тăрат. Винтовкă аллинче,
Витĕр куçпе пăхат инçе.
Пăхат вăл чикĕ леш йенне.
Сыхлат çĕршывне хăйĕнне.
Лере... Кĕç-вĕç тапăнас пек
Пăшал та тупăсен саспе
Мул йыттисем вĕрсе тăраççĕ.
Пире пăвасшăн та—хăраççĕ.
Лере, ав, чикĕ леш йенче,
Расна пурнăç, расна тĕнче.
Унта пусмăр тӳсет ĕçхалăх,
Унта асап, унта чуралăх.
Кунта... кунта ĕççын ĕçре,
Кашни ĕççын пĕр тивĕçре.
Ишĕлчĕк, чухăн çĕршыва
Хăвăртласах хурçă хываç.
Ӳсеççĕ савăт тăрписем,
Ӳкеççĕ чирĕк тăррисем.
Хирте хаљ трактăр хыт чупат,
Йăрансене йăлт сухалат.
Ӳсет-çке хурçă саслă вăй!
Чикĕре хĕрлĕ часовой
Тăрат. Пăшал ун аллинче.
Сыхлат пире тăшмансенчен

К. Й. Ворошилăв.

Климент Йефремович Ворошилăв 1881-мĕш çулта февралĕн 5-мĕшĕнче, ĕлĕкхи Йекатеринослав кĕпĕрнинчи Верхни йатлă йалта çуралнă. Унăн ашшĕ чугун çул çинче сторăжра ĕçленĕ. Ворошилăвăн ача чухнехи пурнăçĕ чугун çул çинчи будкăра иртнĕ: ун чухне вăл пĕтĕм килйышĕпе çав будкăра пураннă.

Климент Йефремовичăн ачаранах патша Раççейĕнчи пролетариатăн йăвăр пурнăçне хăйĕн курса тӳсме лекнĕ. Вăл çичĕ çултах шахтăна ĕçлеме кĕнĕ. Кунне вунă пусла вăл кунĕпе колчедан суйланă. Вунă çула çитсен вăл ашшĕпе пĕрле улпут кĕтĕвне кĕтнĕ. Унтан ăна пĕр çуллăха кулак патне тарçăна панă. Ăна кулак калама çук вирлĕ ĕçлеттерсе асаплантарнă. Киле тавăрăнсан вăл каллех шахтăна ĕçлеме кĕнĕ 12 çула çитиччен Ворошилăв хут пĕлмен. 13 çул çине пуссан тин вăл земски шкула вĕренме кĕнĕ. Кунта вăл икĕ хĕл вĕреннĕ. Вăл хăйне интереслекен ыйтусене хирĕç ответсем тупас тесе тăрăшса нумай вулама тытăннă.

1896-мĕш çулта Ворошилăв Алчевски савăта ĕçлеме кĕнĕ. Шахтăсемпе савăтсенче капиталис хуçасем мĕн тăвас тенĕ çавна тунă. Рабочисем пĕр хӳтлĕхсĕр пулнă. Ĕç кунĕ 12 сехет ытла пулнă. Клим рабочисен пулăшу ниçтан та кĕтме çук иккенне ăнланса илме пуçланă. Çулталăк иртсен унăн патша полиципе чи малтанхи çапăçăвĕ пулса иртнĕ. Полици приставĕ патĕнчен иртсе пынă чух Ворошилăв ăна тайăлман Пристăв Ворошилăва чышкăсемпе çапма пуçланă. Пристăва пулăшма городовойсем персе çитнĕ. Çак кунтан пуçласа Ворошилăв хыççăн йĕрлеме пуçланă.

Ворошилăв хыççăн йĕрлеме пуçласа полици йăнăшман. Ворошилăв революци шухăшлă рабочисемпе паллашать. Нумайах та иртмест, Алчевскра революцилĕ кружок пуçланса кайать. Çав кружока организацилекенсенчен пĕри

Ворошилӑв пулнӑ. 1899-мӗш ҫулта Ворошилӑв йертсе пынипе чугун ирӗлтерекен цехри крановщиксем забастовкӑ кӑларнӑ. Ворошилӑва арӗсленӗ. 1903-мӗш ҫулта Ворошилӑв Луганскри Гартман савӑтне ӗҫлеме кӗнӗ, анчах 2—3 уйӑх иртсенех ӑна полици хуларан кӑларса йарат. Ку вӑхӑтала Ворошилӑв бољшевиксен партине кӗрет.

1905-мӗш ҫулта Ворошилӑв стачкӑсене вирлӗн хутшӑнат. Забастовкӑ вӑхӑтӗнче пӗррехинче Ворошилӑва питӗ хытӑ хӗненӗ те, каллех тӗрмене хупса лартнӑ. 1905-мӗш ҫулта декабӗр уйӑхӗнче темиҫе пин халӑх тӗрме патне пырса Ворошилӑва кӑларма ыйтнӑ. Ӑна залок хывса тӗрмерен кӑларса йараҫҫӗ; вӑл каллех вӑрттӑн револуцилӗ ӗҫ туса тӑрас шутпа пыганат. Ҫӗнӗрен арӗссем, каллех ссылкӑсем.

Граждӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнче Ворошилӑв армисемпе командоват тунӑ. Клим Ворошилӑва чи ответлӑ вырӑнсене йанӑ. Ворошилӑв—Хӗрлӗ ҫара организацилекенсенчен пӗри. Хӑйӗн паттӑрлӑхне кӑтартнӑшӑн Ворошилӑва Хӗрлӗ йалавӑн виҫӗ орденне панӑ, тата чи чаплӑ парне—хисеплӗ хӗҫпӑшал панӑ. 1925-мӗш ҫултанпа Ворошилӑв йулташ СССР Сыхлӑх халӑх комиссарӗ пулса тӑрат.

Луганск слесӑрӗн, ватӑ бољшевикӑн, Ленинӑн лайӑх ученикӗсенчен пӗрин—Хӗрлӗ ҫар ҫулпуҫӗн Клим Ворошилӑвӑн пурнӑҫ кунҫулӗ ҫавӑн пек.

Пӗтӗм Раҫҫейри Тӗпӗҫтӑвком президиумӗн 1919 ҫ. нойабӗрӗн 27-мӗшӗнче пулнӑ ларӑвӗн 68-мӗш протоколӗнчен ҫырса илни.

Итленӗ:

34. Президиум членне тата кӑнтӑр фронтри Револуцилӗ ҫар совечӗн членне И. В. Сталина Хӗрлӗ йалав орденне парса парнелесси ҫинчен.

Йышӑннӑ:

Вилӗмлӗ хӑрушлӑх самантӗнче, пур йенчен те тӑппмансем ҫавӑрса илнӗ Совет влаҫӗ тӑшман тапӑннине хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра, рабочисемпе хресченсен револуцин тӑшманӗсем 1919-мӗш ҫулхи ийул уйӑхӗнче хӗрлӗ Питӗр патне ҫывхарса пырса Хӗрлӗ Горкӑна ҫавӑрса илнӗ самантра, ҫак Совет Раҫҫейӗшӗн йӑвӑр вӑхӑтра Раҫҫей Тӗпӗҫтӑвкомӗн президиумӗ вӑрҫӑ ӗҫне лартнӑ

Иосиф Виссарионович Джугашвили (Сталин) хăйĕн хастарлăхĕпе, ывăнма пĕлми ĕçĕпе Хĕрлĕ çарăн чĕтреме пуçланă речĕсене пĕтĕçтерме пултарчĕ.

Çапăçу пынă лини районĕнче хăй пулса, вăл вăрçă вучахĕнче хăй пример парса, Совет Республикишĕн кĕрешекенсен речĕсене хаваслантарнă.

Питĕре сыхлас тĕлĕшпе мĕн пур хисеплĕ ĕçсене, тата кайран Кăнтăр фронтĕнче хăйне хĕрхенмесĕр ĕçленине хисепе хурса, Петĕм Раççейри Тĕп ĕç тăвакан комитет И. В. Джугашвилине (Сталина) Хĕрлĕ йалав ордĕнĕ парса парнелеме йышăнат.

Пĕтĕм Раççей Тĕпĕçтăвкомĕн председателĕ *М. Калинин.*
Пĕтĕм Раççей Тĕпĕçтăвкомĕн çекретарĕ *А. Йенукидзе.*

Шанчăклă хурал.

Совет Сойузĕпе Китай чикки. Çурçаврака илемлетнĕ йăвăç хапха. СССР—Китай. Пĕр йенчен Манчжури хули. Алăксем çумĕнче Китай хунарĕсем ывăнчăклă йăлтăртатаççĕ.

Унтала-кунтала хăраса пăхса урапине туртса пырат рикшă. Хулара лăпкă мар. Влаç приказĕ хушнипе халăхсем окопсем чаваççĕ. Хула тăрăх Китай салтакĕсен отрйачĕ пырат. Салхулă утаççĕ салтаксем. Нумайĕшин бамбук патакĕпе хĕнекĕрен ӳчĕсем ыратаççĕ.

Тепĕр йенче Совет çарĕ. Хĕрлĕ салтаксен отрйачĕ. Канăçлă та паттăр питсем. Çамрăк салтаксем шуркитайцăсем тапăнас пек пынă чух хĕрсе кайаççĕ:—Командир йулташ, çак çĕленсене пеме ирĕк парăр,—теççĕ.

Анчах Хĕвелтухĕçĕнчи уйрăм çарăн командирĕ—Блюхĕр йулташăн приказĕ çапла калат:

„Хĕçпăшала тапăнакансенчен хамăр сыхланас майпа çеç тытмала“.

Хĕрлĕ салтаксен отрйачĕсем тăшмана чикĕ леш йенне сирсе тăнă çеç, урăх пĕр пуля та пемен, пĕр утăм та утман.

Китай генералĕсемпе шургвардейцăсем сирĕлмен. Çĕнĕрен пырса тăнă полксем пулеметсенчен, орудисенчен вăйлă пенĕ. Совет чикки çине сапаланнă.

Ун чухне Хĕвелтухăçĕнчи уйрăм çар тапăнакансене хăй çапăçма пултарнине кăтартрĕ. Хăйсен çĕрĕшĕн, хăйсен хапрăкĕсемшĕн, çутçанталăкăн улттăмĕш пайĕнче социалисăм тăвас правашăн çапăçнă салтаксем. Çапăçăва

хĕрӳллĕн утнă, шуркитайсен бандисене ватса çĕмĕрмелех пенĕ.

Комуниса вĕлернĕ, маттур çапăçакана вĕлернĕ, анчах ĕретсем çаплипех йулнă. Хыпар хыççăн хыпар килет: „Комунис вилĕмне ответлесе партине кĕретпĕр".

Тупă наводчикĕ, суранланнă пулин те, орудисене пăрахмаст.

— Епĕ кунта кирлĕ-çке, манăн ыратмаст, еп ĕçлеме пултаратăп,—тет вăл.

Вĕçевçĕсенчен пĕрин сулахай алă тупанне пуљă çĕмĕрсе тăкнă. Вăл йун йухтарса, хăрах аллипех йероплана 60 çухрăм ытла илсе кайнă.

Совет çарĕсем Китай йалĕсене çавăрса илме пуçласанах, халăх йалтан тарма тытăннă пулнă. Анчах кайран, нимĕнле тискерлĕх те, нимĕнле çарату та пулман пирки, Китайри хресченсем вĕсемпеле çак хĕрлĕ значоклă, шљом тăхăннă тĕлĕнмеле çынсем пек аван хутшăннă çынсене нихçан та курман.

Паллах ĕнтĕ, Китай ĕçхресченĕсем пит тĕлĕннĕ. Хĕрлĕ çар мĕн иккенне чухлама пуçланă.

Совет госпитăлĕнче пир-авăр тĕртнĕ çĕрте ĕçлекен китайцă Йан-Лиçйен выртат. Вăл выçлăхран çара кайнă. Йан-Лиçйенăн пуçĕ çăмăллăн суранланнă. Госпитăљте Лиçйен шухăша кайса выртат:

— Ман икĕ суран - пĕри пуљăран, тепри сăмахран. Пĕри часах тӳрленет, тепри пĕçерет, çунтарат. Манăн малашне хам пек рабочисене хирĕç çапăçва тухас килмест.

Салтакăн класлă туйăм çуралчĕ. Йан-Лиçйен тата унăн 40 йулташĕ тăван çĕршывне çыру çыраççĕ. Вĕсем йулташĕсене акă çапла чĕнеççĕ:

— Винтовкăсемпе пиксем илĕр, вĕсене пуйансене, хамăр начаљниксене хирĕç çавăрăр. Совет сойузне хирĕç ан кĕрешĕр.

Китай генералĕсем Совет сойузне ваљљи вилĕм хатĕрлени - хăйсене ваљљи шăтăк чавни пулчĕ. Нимĕнле вутпа та, нимле атакăпа та вĕсем Хĕрлĕ çарăн паттăрла вăйне хуçаймарĕç. Китайра рабочисемпе хресченсен революцилĕ шухăшсем çуралма пуçларĕç.

Тыткăнри китайцăсен ушкăнне Хĕрлĕ салтаксем пĕр витре пăтă пачĕç.

Лешсем тата ыйтрĕç. Иккĕ, виççĕ пачĕç Унган ăнсăртран сакайĕнчен Китай офицерĕ шуса тухат—вăл та çимели ыйтат.

— Мĕнле есĕ, салтаксемпе пĕрле çимерĕн-и мĕн?— тесе ыйтаççĕ унтан.

Нумай кĕттерсе тăмарĕ офицер. Салтаксем çине кăтартса çапла каларĕ:

— Вĕсем мана памарĕç. Есĕ суйрăн, теççĕ вĕсем. Большевиксем тыткăна лекнисенчен мăшкăлаççĕ терĕн, тăрантармаççĕ терĕн тесе вăрçаççĕ те. Акă ĕнтĕ апатсăр лар!

Контрибуци.

(„Çĕпре" йатлă повĕçрен).

Паймен.

Пурнăç йăрана кĕре пуçларĕ. „Наступат тăватпăр", тесе çырат Йахруш фронтран. Йалта чухăнсем Совет влаçне мухтаççĕ. Вăтам пурăнакансем шарламаççĕ. Пуйансем шăл хăйраççĕ.

Трашукăн та шăлĕ çивĕч. Тарçăра пурăннă чух ăна хăйрани йурарĕ. Вăхăтăн-вăхăтăн Микул-бай кулак тирне аванах сўсе илет.

Хуларан—пуйансем çине контрибуци хумала, теççĕ. Пурлăхне кура: пин, пилĕк пин, вунă пин. Контрибуци пухас комиççире пиллĕкĕн. Чиркўлĕ йалтан виççĕ, чăвашсенчен иккĕн—Темен Иванĕпе Трашук. Икĕ йала пĕр комиççи.

Пуçтарасси çăмăл ĕç мар. Кашни килте харкашса илес пулат. Кунĕн çĕрĕн çўресе те çирĕм киле çех çитрĕç. Пуп патне те кĕрсе тухмала пулчĕ. Малтан пупĕ кăшкăра пуçланăччĕ, унтан йĕрсе йачĕ. Йулашкинчен: Парап, паратăп, терĕ.

Каçхине темле ĕçпе пуху пухăннă. Пуху пĕтнĕ çĕре Ваççили Карпчă сăмах илчĕ.

— Стариксем! Мĕн намăс кăтартаççĕ пире? Манран пин тенкĕ илмеле. Микул-байран вунă пин. Мăшкăл вĕт ку...

Пĕр минут хушши пуху хытса тăчĕ:

— Мошенниксем!

— Жуликсем!

Трашук чарасшăн сĕтеле шаккат. Кăшт лăпланчĕç. Чухăнсем кăшкăра пуçларĕç тата.

— Хырăмсене пушата пуçларĕç-им! Ыгла пысăкчĕ-ха! Пирĕн тара нумай пăчăртаса йухтартăр.

Пуху хуран пек вĕрет. Хура кăпăкне çийеле пухса вĕрет.

Таçтан Хăйра Йаккăвĕ пукан çине сиксе тăчĕ.

— Стариксем! Пуйансăр йал пурăнаймасť. Пуйантан хӳтĕ шыратпăр... Совет влаçĕ пĕлет пуйансенчен шăйăрма.

— Кутăнти йĕмне хывса илеççĕ вĕт кулаксем! Вĕсем майлă сикетĕн.

Халиччен çухалса пурăннă Чейе Миťапа учитĕл килсе тухрĕç. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн хыçала пуйансем тулса ларнă. Вăтаммисем ку ĕçрен айаккарах шунă. Малта чухăнсем пĕр вунă çын çех.

Чейе Миťа тăчĕ:

— Иглĕр-ха, стариксем! Итлĕр! Ку влаçа—комун влаçĕ, теççĕ. Комун турра хирĕç. Вăн, куратăр-и, пуп çине те контрибуци хунă.

Малтисем хирĕç:

— Суйаť, шуйттан, куçăнах суйаť, çитĕ!

— Долой Чейе таврашсене, ĕмĕрех улталаççĕ вĕсем.

Татах шаккаť Трашук сĕтеле.

— Чарăнăр, чарăнăр!

— Чимĕр, чарăнăр, йулташсем! Капла йурамасť. Йулташсем! Епĕр пуйансенне пĕр пĕрчĕк те илместпĕр. Пĕтĕмпе хамăранне илетпĕр. Микул-байăн ним те çук. Пĕтĕмпе пирĕн, чухăнсен. Ун патĕнче ĕçленĕ тарçăсен, чурасен.

Пуху хыçĕ труках урса кайрĕ.

— Мĕн нумай калаçмали! Тыт вĕсене! Туртса антар!

Малти ĕретсене сĕтел патнеле хĕстерчĕç, хыçалтах тытăçу пуçланнă. Кашкăрсен пек йăлтăртатаççĕ куçĕсем.

Хыçалтан йăвантарса сĕтел патнеле уткăнчĕç.

Трашук шухăшларĕ: Чиркӳлĕ йала каратĕлни отрйад килнĕ, систермелеччĕ. Револьверне кăларса персе йачĕ. Лăшах пулчĕç пурте. Çав вăхăтрах алăкран салтаксем килсе кĕчĕç. Хăвăрг сисрĕç мĕн пулнине. Чейе Миťапа учитĕл алăк патнеле шунăччĕ. Салтаксенчен пĕри чарса:

— Никам та пӳртрен ан тухнă пултăр!—терĕ.

Иккĕн тул йенне тăрса йулчĕç. Тăваттăн алăк патне тăчĕç. Тăваттăн сĕтел патнеле.

Асли хавассăн сасă пачĕ: Е-е, Петров кунта, аван-и?

— Аван та-ха, вон мĕн хăтланаççĕ.—Трашук йĕркипе каласа пачĕ.

Пĕрерĕн пĕрерĕн илсе тухрĕç салтаксем: Мукул-байа, Пуйан Таңуша, Ваççили Карпча... тата виçĕ çынна. Учитĕлпе Чейе Миťана илсе тухнă чухне Трашук:

— Кăсем иккĕш меншевиксем,—терĕ.

Ирхине вĕсене пурне те хулана илсе кайса хупрĕç.

Бољшевик Марйе.

А. Неверăв.

I.

Пирĕн йалта пĕр арăм пурччĕ. Хăй çӳлĕ, йаштака кăначчĕ, хупхура куçхаршисем пĕкĕ пек авăнса тăраттчĕç. Упăшки хăйĕн пӳрнеске пек кăначчĕ тата. Хăйне Кăсаӈук тетчĕç. Пĕртех те çук йапалаччĕ ĕнтĕ, çĕлĕкпе хупласан курăнас çук. Çилли вара хăйĕн калама çукчĕ. Пĕр урса кайсан, сĕтелне, тимĕрçĕ мăлатукпа шакканă пек, шаккаттчĕ.

— Вĕлеретĕп! Чунна илетĕп!..

Марйе, чейескер, хăранă пек пулса, йури йăпататтчĕ.

— Пракахви Митрĕч' Мĕн пулчĕ сана?

— Пуçна татăп!

Марйе вара тата йăвашшăнтарах:

— Епĕ пайан пăтă пĕçернĕччĕ, çиместĕн-и? тесе йăпăлтатса çӳретчĕ. Пăттине чашăк туллийех антараттчĕ те вара, çийелтен çуне сапаттчĕ. Туйра чысланă пек чысласа пуçне тайса тăраттчĕ.

— Çи-ха, Пракахви Митрĕч! Епĕ сан умăнта айăпа кĕтĕм, тетчĕ.

Лешĕ вара арăмĕ чысланипе хĕпĕртесе, сăмсине тата çӳлерех çĕклетчĕ, хăй пуçлăх иккенне сисетчĕ вăл.

— Çиместĕп! тетчĕ хирĕç.

Марйи каллех улпут стрепки пек шывне параттчĕ, тапак хутаççине шыраса тупаттчĕ. Урине урай варринех салтса пăрахнă пулсан,—Марйи çăпатисене пуçтараттчĕ, чăлхисене илсе кăмака шăтăкне чикет.

II.

Марйе ĕлĕк çиллине сахал кăтартаттчĕ. Килĕнче мĕн пулнине-иртнине хăй ăшĕнче анчах тытнă. Халĕ ирĕклĕх паракан бољшевиксем:

— Мĕн есĕр арçынсем айне пулса пурăнатăр? Халĕ есĕр хăвăр та арçынсемпе танлашрăр! тесен, Марйен те куçĕсем уçăлчĕç. Ăçта оратăр килнĕ тенине илтсессĕн—собранийе чупаттчĕ. Тĕлĕнмеле, тахшин пекех пулса кайрĕ. Пĕрре çапла оратăр патне пычĕ те, чĕнет:

— Оратăр йулташ! Атта пирĕн пата чей ĕçме! тет. Кăсаӈукĕ те çавăнтах тăраттчĕ, пĕтĕмпе кăвакарса кайрĕ. Куçĕ-пуçĕ тусса кайрĕ, сăмси çунаттисене выљататтчĕ. Ми-

тинграх йанклаттарса йарат-и ёнтĕ ку! тесе тăратпăр. Чăтса тăчĕ çапах. Хăйаккăн-хăйаккăн пычĕ те: Киле ата!.. терĕ.

Килне тавăрăнсан чăмăрĕсене-чăмăртаса пычĕ ку Марйе патне:

— Чунна илĕп!—тет.

Марйи йĕкĕлтесе те илет тата:

— Пракахви Митрĕч, кам çав йанăрат пирĕн патăрта, анчах хăратаймаст, тет.

— Собранисем тăрăх çÿретĕн пулсан, кĕпÿ аркисене йăлт касса пĕтерĕп!

— Пуртту витмĕ!

Кăсаӈукĕ çиленсе çитнĕ, çапмали шырат. Марйе кăна хăратса калат:

— Пÿрнÿпе кăна тĕрт, пĕр чÿлмек йулмиччен пуçу çумне çапа-çапа салатăп,—тет.

Çавăнтан пуçланса кайрĕ вара. Кăсаӈукĕ хăйĕн влаçне кăтартасшăн, Марйи хăйĕнне.

III.

Марйе Сойуз клубĕнчен хаçатсем, кĕнекесем йăта пуçларĕ. Сĕтел çине çитти пек сарса хурат те, ларат вара тутисене мăкăљтаттарса, учителница тейĕн çав. Кĕнекесем, хаçатсем вула-вула Марйе йăлтах улшăнчĕ. Темĕскерле хĕрарăм пайĕ шухăшласа кăларчĕ. Пăхатпăр—пĕр арăм пырат, теири те пырат, мĕн шуйттанĕ! Кăсаӈук пÿртĕнче курс уçнă. Пуçтарăнаççĕ те тытăнаççĕ вара çуйăхма. Советри комиссар вĕсем патне çÿрекелеме пуçларĕ. Хамăр йалсем хăй. Ёлĕк Шлепке Ваççукĕ тетчĕç, бољшевиксем патне куçрĕ те Ваççили Иванчă пулчĕ. Кăсаӈук йăлт йăвашланса çитрĕ. Пĕр сăмах чĕнсен те ун çине вуннăн-вуниккĕн карах тăраççĕ: Ну, ну, ан шавла! кăна теççĕ.

Комиссарĕ те хĕрарăмсем майлах пулат, ун программи çавнашкал.

— Халĕ, Пракахви Митрĕч, хĕрарăм çине кăшкăрма йурамаст—революци... тет. Лешĕ ухмах пек шăлне йĕрсе тăрат. Çиллипе револуцине-масарне çурмаран çурса пăрахĕччĕ те хăрушă, тем курăн. Марйи иртĕннĕçем иртĕнет.

— Епĕ бољшевиксен партине кĕрес тетĕп-ха! тет. Кăсаӈукĕ вăтантарма тытăнчĕ кăна:

— Йепле есĕ çынтан вăтанмастăн? Намăса йăлтах сутрăна. Пурĕ пĕр сана çапла хăтланса çÿренĕшĕн турă тÿссе тăрайас çук! тет.

Марйи хирĕç кулат̆ çеç.

— Турă-ă-ă! Мĕнле турă? Ăçтан туртса кăлартăн есĕ ăна?

IV.

Совет суйламали пуху пулчĕ. Хĕрарăмсем йармăрккана пынă пек тулчĕç. Епĕр сӳтсе йаватпăр, шавлатпăр, илтегпер:

— Марйене! Кришак Марйине! тийе пуçларĕç. Пиртен пĕри йури кăна: Йурат̆! суйлас! терĕ. Шӳт туса кăна калаççĕ пуљ, терĕмĕр, хай чăнах та пулса кайрĕ. Хĕрарăмсем арçынсене чавкасем пек сăха пуçларĕç. Арсăр арăмсем, салтак арăмĕсем чисти пĕлĕт пек. Пирĕн халăх вырăна кĕме ахаљ те питех хавас мар та, хаљхи саманара пушшех аллисене кăна сулаççĕ. Марйе пулсан, Марйе пулĕ! Çăварĕ пиçтĕр-ха кăшт! теççĕ. Марйешĕн миçе алă тăратнине хисепле пуçларĕç. Икçĕр вунпилĕк сасă пухăнчĕ. Хай Ваççили Иванчă комиссар Марйене суйланă йĕркепе сăмах каларĕ:

— Халиччен пирĕн советра хĕрарăм пулман! Есĕ, Марйе Хветăрăвна, пуçламĕшĕ пултăн. Ывăнмасăр ĕçле!

Марйи хĕпхĕрлĕ пулса кайрĕ, пĕр кулмасăр пăхса тăрат̆.

— Йулташсем! Епĕ вăй çитнĕ таран тăрăшăп! Пĕлеймесен ан айăплăр, пулăшăр! терĕ. Кăсаңук ăшĕ тулса çитнипе нимĕн тăваймаст̆. Те хăйне мăшкăлани пулчĕ ку ĕç, те хисепе хуни пулчĕ? Çавна Кăсаңук нийепле те çавăрса илеймест. Килне тавăрăнчĕ те:

— Мĕнле калаçас-ха ĕнтĕ кунпа? Ахаљ çын мар, тесе шухăшлат̆ Кăсаңук. Хĕрарăм пуçĕпе вулăс советĕнче ларса, пирĕн ĕçсене туса тăмала... Пĕрпĕринпе йатлаçа пуçларăмăр.

— Ухмахсем епĕр! Вара хĕрарăма çав вырăна суйлама йурат̆-ши?.. Насар пичче Марйене тӳрех куçăнах каларĕ:

— Ах, Марйе! Йăнăш хапхаран кĕтĕн есĕ! терĕ. Марйи ăна хирĕç:

— Епĕ хам кĕмен, мана халăх суйларĕ! терĕ пуçа ухса.

V.

Кайран Совета Марйене курма пыратпăр—паллама та çук. Умне çĕтел лартнă, сĕтелĕ çине чернил кĕленчи лартнă, икĕ кăранташ хунă: пĕри хĕрлĕ, тепри кăвак. Çумĕнче

çекретарĕ чăкăртаттарса çырса ларат̆. Марйи сассине те улăштарнă. Хутсем тăрăх куçĕсене выљатса пырат̆ çеç.

— Ку продовољстви йĕркипе-им, Йеремейĕв йулташ? тет. Хăй хушаматне хут çине çырса хурат̆ те, каллех начаљник пек:

— Сан спискусем хатĕр-и? Хăвăртрах пĕтер!—тет.

Хамăр куçăмăра хамăр шанмастпăр. Марйе пăртак хĕрелин хут̆...

Кăсаңук тӳсрĕ тӳсрĕ те, Марйерен уйăрălма ыйта пуçларĕ.

— Кун пек пурнăçран хăтар ес мана... Епĕ капла пурăнаймастăп. Хам неккине шырăп, урăх тупăп, тет. Марйе аллипе кăна сулчĕ.—Тархасшăн. Епĕ тахçанах хатĕр, тет.

Çапла вăл пирĕн патăрта пилĕк уйăха йахăн ĕçлерĕ пулас. Унтан пĕр пĕчĕк ĕç сиксе тухрĕ—казаксем тапăнчĕç. Марйе çавăн чухне бољшевиксемпе ларчĕ те, вĕçтере пачĕ. Ăçта кайнине никам та пĕлмерĕ. Тепĕр йалта курнă терĕç те, тен, вăл та пулмарĕ пулĕ Çын тĕслĕ çын пулат̆. Ун пеккисем халĕ темĕн чухлех.

Наçтук.

И. П. Пинер.

Наçтука контрибуци пуçтарма суйларĕç.

Контрибуци илнĕ вăхăтра Наçтук ытла та вирлĕ ĕçлерĕ. Вăл хăйсен йалĕнче ытти пур йалсенчен те малтан контрибуци пуçтарса пĕтерчĕ. Çавăнпа та вара Наçтука вулăса ĕçлеме илчĕç. Вăл хĕрарăмсем хушшинче ĕçлеме тытăнчĕ. Пĕринче разверсткă пирки совешчани пулчĕ. Совешчанире Наçтук, вулăс председателĕ, тата икĕ хресчен пулчĕç. Совешчани питĕ тавлашулă иртрĕ. Пурин пичĕсем тăрăх та тар йухрĕ.

— Ăçта-ха, шыв ăсса пар,—терĕ Наçтук председателе. Ăна председатĕл сăмавартан ăшăтнă шыв тултарса пачĕ. Наçтук стакана алла тытнăччĕ çех, стакан аллинчен тухса та ӳкрĕ. Наçтукăн чĕри шарах çурăлса кайрĕ. Кантăкран темскерсем курчĕ... сенĕксем... пуртăсем. .

— Ай-ай, пĕтрĕмĕр!—терĕ. Унтан майпа ассăн сывласа: Пире хупăрласа илчĕç,—терĕ.

Унччен те пулмарĕ, тулта çĕмĕрĕлнĕ сасăсем илтĕнме пуçларĕç. Урамра кĕрлеççĕ.

— Те пытанас, те тарас? Наçтук урăх пӳлĕме чупса тухрĕ, анчах каллех кайала чупса кĕчĕ.

— Кĕреççĕ,—терĕ.

Тĕттĕм. Председатĕл сакай хăмине уçрĕ те, сике пачĕ. Ун хыççăн ыттисем. Йулашкинчен Наçтук та сикме тăнăччĕ, чарăнчĕ. Шкап хыçне пытанма тăчĕ—хăрарĕ.

— Мĕн пулат те мĕн килет?—тесе вăл шкапа кĕрсе ларчĕ.

— А-а, контрибуци пуçтаракансем кунта-и вĕсем?

— Лекрĕç-и, ăçта вĕсем?

Куштан Матви уртарса йертсе пынă халăх кантур пӳртне çĕмĕрсе кĕчĕ. Анчах тĕттĕмре ним тума аптăранă йенне, пĕр вăхăта шăпах пулчĕ. Çав пĕр вăхăт нумайа пымарĕ. Тахăшĕ пĕри çурта чиксе пынă. Çурта çутрĕç. Шыраççĕ.

— Ей, халăх, кунта килĕр! Вĕсем тĕпсакайне кĕрсе ларнă!—тесе кăшкăрса йачĕ пĕри...

Урнă халăх кĕрлесе тăрат. Сакайне кĕме пĕри те хăйаймаççĕ.

— Воҙверпе персе вĕлерĕç вĕсем!

— Çук, воҙвер çук çав вĕсен.

Халăх сакайĕнчен чи малтан председатĕле туртса кăларчĕ. Председатĕл кăшкăрса та йулаймарĕ, унăн кăкрине тимĕр сенĕкĕн виçĕ йуппи çаплипех кĕрсе ларчĕç. Çамкаран кĕреçе çивĕччĕш пырса чашлаттарчĕ. Сакайĕнчи тата иккĕшне те çав йунлă тимĕр сенĕк йупписьемех тирсе пăрахрĕç.

— Ах, леш Наçтукĕ ăçта-ши, сакайĕнчех лармаст-и вăл?

— Ним те мар, çав мурнех тупасчĕ.

— Хĕрарăм пуçпах контрибуцисем пуçтарса çӳремелине кăтартасчĕ!

Çав вăхăтра Наçтук шкапра вилнĕ çын пек шап-шурă шурса, мĕн тунине хушăкран курса тăрат.

— Ах, Наçтукĕ ăçта ши?

Матви шкап патне те икĕ хутчен пырса пăхрĕ. Наçтук çук. Наçтука тепле майпа кураймарĕ. Наçтук вилес пек чĕтресе тăрат. Наçтук чĕрĕлех вилнĕ.

— Ну, леш Наçтукĕ хăтăлчĕ пуҙ!

Халăх чунне пусарса тухса кайрĕ.

— Ех, арăм та çынсен арăмĕсем пек пулма пĕлмерĕ! Мĕн иртенпех тухса кайрĕ те, халĕ те çук Ачине тата тем çитмен, пайан кунĕпех макăрат.

Çав вăхăтра кантăкран такам майĕпен вичĕ хутчен шаккарĕ.

— Кам унта?

— Кĕркури, уç!

— Кам вара есĕ?

— Кĕркури! Палламала марах пулчĕ-и вара? Уç, Кĕркури—тет Наçтук.

Кĕркури уçрĕ.

Наçтук çăлăнчĕ. Унăн пусĕнче малашне мĕнле ĕçлесси, херарăмсене асапран кăларасси. Вăл пĕлет: чухăнсем ун йенче, ăна кулаксен аллине парас çук. Çавăнпа вăл хăрамаст, тата хытăрах ĕçлеме тытăнат.

Октабĕр хĕрарăмĕ.

Уйăп Мишши.

Ун пуçĕнче хĕп-хĕрлĕ тутăр,
Кĕнекесем ун аллинче.
Пайан хĕвел те пĕрле пултăр
Инкен хаваслă куллинче!
Кулат-çке хаљ вăл пит хаваслăн,
Вăл хаљ телейлĕ вĕренет.
Уншăн тĕнче те тем пек аслă,
Хĕвел те ăшă чĕрине.
Ăна Октабĕр ирĕк панă,
Октабĕр уçнă ун çулне.
Вăлах çапса салатса йанă
Ĕмĕрхи пусмăрлăх чулне.
Вăл пур çĕрте те, пур ĕçре те,
Пĕрлех пайан ĕçре çунат..
Еп те çынпа пĕр тан вĕçре!—тет,
Еп те, тет, сирĕн пек çынах.
Ахаљтен мар пуљ аслă Ленин
Хушса хăварнă пĕр сăмах:
— Кашни кухаркă пĕлтĕр!—тенĕ,
Патшалăха йертсе пыма.
Çак кун пурне те тивĕç пачĕ.
Тав уншăн çут Октабĕре.

Ленин.

Владимир Илйич Ленин 1870-мĕш çулта апрелĕн 22-мĕш кунĕнче Чĕмпĕр хулинче çуралнă. Владимир Илйичăн хушамачĕ Ульйанăв пулнă. Ленин тенĕ хушамата вăл партире ĕçлеме пуçласан йышăннă.

Ленин рабочичемпе хресченсене пусмăртан хăтăлма вĕрентнĕ. Буржуйсемпе, улпутсемпе, кулаксемпе кĕрешме вĕрентнĕ. Ленин—рабочипе хресченсен тусĕ, çывăх йулташĕ пулнă. Раççейри рабочисем хушшинче Ленин нумай çул хушши ĕçленĕ. Хăй ĕçленĕ хушăра вăл коммуниссен партине организациленĕ. Коммуниссен партине чи лайăх, чи хастарлă, малта пыракан рабочисене пĕрлештернĕ.



В. И. Ленинпа И. В. Сталин Горкире (1922 çул).

Коммуниссен партин пуçĕнче тăрса, Ленин Раççейри рабочисене буржуйсемпе кĕрешес ĕçре йертсе пынă. Ленинпа пĕрле Сталин, Ворошилăв тата ытти сем те хастарлă ĕçленĕ. Ленинпа унăн партийĕ йертсе пынипе, Раççейри рабочисемпе хресченсем капиталиссене, улпутсене хăваласа йарса, влаçа хăйсен аллине илнĕ.

Октябĕр революцийĕ хыççăн Ленин Совет сойузĕнчи ĕçхалăхне тĕрлĕ клас тăшманĕсемпе çĕнтерӳлĕн çапăçма, тата çĕнĕ пурнăç—социалисăм тума йертсе пынă.

Патша тĕрмисенче ларса, тĕрлĕ хĕн-хур курнипе, революци хыççăн та пĕр канмасăр ĕçленипе Ленин сывлăхĕ

начэрлансах пынă. Вăл чирлеме пуçланă. 1924-мĕш çулта йанвар уйăхĕн 21-мĕш кунĕнче Владимир Илйич Ленин вилнĕ.

Ленин йачĕ пĕтĕм тĕнчипех сарăлнă. Пĕтĕм тĕнчипе Ленина пĕлмен пĕр çĕршыв та çук. Ленин йатне мĕн пур хуласенче, йалсенче, хапрăк-савăтсенче пĕлеççĕ.

Буржуйсем, кулаксем Ленин йачĕнчен хăраççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăх Ленин йатне хавасланса асăнат. Кашни рэбочи, кашни хресчен Ленина хисеплет.

Пирĕн йалсенче, хуласенче ĕççыннисем Ленин кĕтессисем уçаççĕ. Ленин кĕтессисенче тĕрлĕ кĕнекесем вулаççĕ, докладсем итлеççĕ, социалисăм тума вĕренеççĕ.

Ленин хăш çулта çуралнă?
Ленин рабочисемпе хресченсене мĕне вĕрентнĕ?
Раççейри ĕçхалăх кам йертсе пынипе ирĕке тухрĕ?
Ленин йатне кам хавасланса асăнат?
Кам Ленин йачĕнчен хăраса тăрат?

1924-мĕш çул, йанварĕн 21-мĕшĕ.

Çак куна астăвăр. Çак кун пирĕн аслă çулпуç Ленин Мускав çывăхĕнчи Горки йатлă йалта вилнĕ.

Пытарасса Ленина Мускавра пытарнă.

Йанварĕн 27-мĕшĕ. Мускаври Хĕрлĕ плошчĕтре халăх туллийех. Пурте аслă çулпуçне ăсатма пухăннă. Йалавсене шутласа та пĕтерейес çук. Пурин те куçĕсем тупăк çинче.

Шăп тăвата сехетре плошчĕтре „Смирно!“ тени йанраса кайрĕ. Пурте шăп пулчĕç. Йалавсене çĕреле усрĕç.

Çав вăхăтра темиçе тупă харăс персе йачĕç. Пăравуссемпе савăт трубисем хуйхăлăн кăшкăргма тытăнчĕç. Трамвайсем, пăравуссем, автомобилсем çÿреме чарăнчĕç. Пĕр самантлăха пĕтĕм çĕршыв шăп пулчĕ.

Ленин тупăкне мавзолейа вырнаçтарса хунă. Унга курма çын кĕмеле тунă. Ленин вилнĕренпе кашни кунах Ленина курма мавзолейа темиçе пин çын кĕрсе тухат.

Иоçиф Виссарионович Сталин.

Сталин йулташ 1879 мĕш çулта ĕлĕкхи Тифлис кĕпĕрнинче Гори йатлă хулара çуралнă. Вăл—грузин, рабочи ывăлĕ. Ашшĕ унăн ată-пушмак маçтăрĕ пулнă.

Питĕ çамрăкла Сталин мĕн пур вăйпа рабочисемпе хресченсене ирĕке кăларассишĕн ĕçлеме тапратнă. 1901-мĕш çултан пуçласа Сталин вăрттăн ĕçлеме тытăннă. Мĕншĕн тесен патша йыттисем — жандармăсем, Сталина пĕлсе çитсе, ăна хытă хĕсĕрлеме тытăннă. Çапла вара вăрттăн ĕçлекен революционер пулса кайса, Сталин 1917-мĕш çулччене пытанса ĕçленĕ. Çав вăхăтра Сталина темиçе хутчен тĕрмене хупнă, пилĕк хутчен Çĕпĕре пуç йанă. Анчах Сталин тĕрмерен пĕрмайах тарнă. Пуç йарсан та тарма май тупнă. Йулашкинчен пуç йарсан, вăл Çĕпĕрте ирĕксĕрех тăватă çул хушши пурăнса иртернĕ.

Октабĕр революци вăхăтĕнче Сталин Ленина хастарлă пулăшса тăраканнисенчен пĕри пулнă. Рабочисемпе хресченсене ирĕке тухма пулăшнă.

Ленин вилнĕ хыççăн коммуниссен партине Сталин питĕ çирĕппĕн, тĕрĕс йертсе пырат. Сталин вăл чи çирĕп, чи хастарлă коммунис. Вăл Ленин каласа хăварнисене лайăх пĕлсе тăрат. Пур ĕçе те Ленин каласа хăварнă пек туса пырат. Совет çĕршывне йертсе пырат.

Сталин мĕн пур ĕçхалăхĕн—рабочисен, колхозниксен, хĕрлĕ салтаксен чи çывăх тусĕ, чăн аслă çулпуçĕ. Сталина коммуниссен партийĕ йертсе пынипе епĕр çĕнĕ пурнăç—социалисăм тăватпăр.

Сталина мĕн пур рабочисем, колхозниксем, хĕрлĕ салтаксем йуратса хисеплеççĕ. Сталина пĕлмен çын çук. Ăна пĕтĕм тĕнче асăнат.

Буржуйсем, пĕтĕм тĕнчери капиталиссем, кулаксем, ĕçхалăх тăшманĕсем Сталина курайманççĕ.

Пĕтĕм ĕçхалăх Сталина йуратса саламлат.

Ленин.

Кăмака çинчи старикĕ
Ленин çинчен калаçаť.
Турчка тытнă карчăкĕ
Ленин йатне асăнаť.

Пĕтĕм тĕнче хуйхипе
Ленин умне тайăлаť.
Хăй хуйхине чĕлхипе
Каласа та параймасť.

Ленин йулташ вилнипе
Алла лаштах йарас мар.

Çамрăк ача пуçĕнче
Ленин паттăрăн тăраť.
Унăн çамрăк куçĕнче
Хĕрлĕ хĕлхем курăнаť.

Епĕр ăна йуратса
Вăл хушнине тăвăпăр.

Ленин йулташ ĕçĕсем
Ĕнтĕ ĕмĕр сыв пулччăр!
Ленин паттăр мĕлкийĕ
Пирĕн пуçра пурăнтăр.

Ударниксен маршĕ.

А. Гидаш.

Çапаť, сăрта ватаť вăл –
Ударлă ĕç;
Йанраť вăйхаллă йурă —
Ударлă ĕç.
Ĕçре пире мухтав, хисеп.
Катмакĕ пирĕншĕн чул катаť,
Хирте пирĕн, ав, трактăрĕ йанраť, чупаť,
Йанраť те савăккăн чупаť.

Пур вăйпа, пур вăйпа
Илйич програмне тултарар!
Атăр! Атăр! Атăр!

Сулмассерен катмакăм —
Ударлă ĕç,
Тăшман вăйне ватаť вăл
Ударлă ĕç.

Кивви çĕрет, кивви ӳкет,
Çĕнни çĕнет, куллен ӳсет...
Никам çĕнми тĕнчешĕн хаљ вĕрет çак ĕç,
Илемлĕ пурнăçшăн çак ĕç.

Пур вăйпа, пур вăйпа
Илйич програмне тултарар!
Атăр! Атăр! Атăр!

Мĕн пур Совет çĕршывĕ—
Ударлă ĕç.
Ӳсеççĕ Днепростройсем—
Ударлă ĕç.
Лере буржуй шăлне хăйрат,
Пире каллех пăвма шутлат,
Анчах пире хурах пусмашкăн çăмăл мар:
Епĕр те çивчĕ шăлсăр мар.

Пур вăйпа, пур вăйпа
Илйич програмне тултарар!
Атăр! Атăр! Атăр!

Вăрçа тухсан вăрçатпăр
Хайаррăн,
Ĕçе тытсан тăватпăр
Ударлăн.
Мĕлйунлă ал пĕр тĕл çапат,
Мĕн пур ĕççын пĕрле утат.
Мĕн пур тĕнче пăханлăхĕ Совет тăвар,
Тĕнчипе пĕр Совет тăвар.

Пур вăйпа, пур вăйпа
Илйич програмне тултарар!
Атăр! Атăр! Атăр!

Пирĕн çĕршыв.

Пирĕн çĕршыв Совет сойузĕ йатлă. Вăл пĕтĕм тĕнчере чи пысăк çĕршыв. Совет сойузĕн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çуран утса тухас тесен, тăвата çул утмала.

Çĕршывра пурăнакан халăхсенчен радио тăрăх: Сирĕн хаљ ир-и, кăнтăрла-и, каç-и? тесе ыйтăр ха. Пĕрисем: Пирĕн ир, тейĕç. Теприсем: Пирĕн кăнтăрла, тейĕç. Хăшĕсем: Пирĕн каç пулат, пирĕн çĕрле пулнă, тейĕç.

Сирӗн хаљ ҫулталӑк хушши мӗнле? тесен,—пӗрисем: Кӗркунне, тейӗҫ. Теприсем: Хӗл ларать, тейӗҫ. Виҫҫӗмӗшсем: Пирӗн хӗл ларчӗ ӗнтӗ, тейӗҫ.

Есӗр мӗнпе пуйан? тесе ыйтсан, пӗрисем—ҫӑкӑрпа, теприсем—ҫӗрмамӑкӗпе, хӑшӑсем—ҫӗркӑмрӑкӗпе, нефтӑпа, тӗрлӗ машинӑпа, тӑварпа пуйан, тейӗҫ.

Сире мӗн кирлӗ? тесен:

Пӗрисем: Ҫӗркӑмрӑк, тейӗҫ.

Теприсем: Ҫӗрмамӑк кирлӗ, тейӗҫ.

Хӑшӗсем: Тырпул ҫителӗклӗ мар, тейӗҫ.

Тимӗр ҫитмест, машинӑсем ҫитмеҫҫӗ, текенсем те пулӗҫ.

Пирӗн ҫӗршыв питӗ пысӑк, питӗ аслӑ. Ҫӗршывра 170 тӗслӗ ытла халӑх пурӑнать. Вырӑс, тутар, чӑваш, мари, мордва, узбек, нимӗҫ, йакут тата ытти халӑхсем те пур. Пӗрисем тырӑ нумай тӑваҫҫӗ, анчах машинӑсем тумаҫҫӗ. Теприсем машинӑсем тӑваҫҫӗ, анчах тырӑ акмаҫҫӗ. Тырӑ тӑвакансем патне машинӑсем кӳмеле, машинӑ тӑвакансем патне тырӑ илсе каймала. Ҫавӑнпа пирӗн ҫӗршывра ҫулсем лайӑх пулмала. Ҫӗршывӑн тӗрлӗ кӗтессисем пӗр-пӗринпе йаланах ҫыхӑнса тӑмала.

Ӗлӗк ҫул ҫӳреме питӗ йӑвӑр пулнӑ. Чул сарса тунӑ ҫулсем сахал пулнӑ. Урапапа ҫӳремели ҫулсем тикӗс пулман. Йӗпе ҫанталӑкра ҫул ҫинче урапасем путса пынӑ. Ҫулсем начар пирки халӑх питӗ нумай сийен курнӑ.

Чугун ҫулсем пулман. Айакри ҫула йе урапапа, йе йуланутпа ҫӳренӗ.

Кайарахпа етем пӑс вӑйӗпе ҫӳрекен машинӑсем шухӑшласа кӑларнӑ. Типӗ ҫӗр тӑрӑх ҫӳреме пуйӑссӗм тунӑ. Шыв тӑрӑх ҫӳреме пӑрахутсем тунӑ.

Анчах етем кунпа чарӑнса тӑман. Вӑл сывлӑшра вӗҫмели майсем шыранӑ. Малтанах вӑл высӑк чӑмӑр йапала ӑшне ӑшӑтнӑ сывлӑш тултарса вӗҫсе пӑхнӑ. Ӑшӑтнӑ сывлӑш сиввинчен ҫӑмӑлтарах пирки, чӑмӑр йапалана ҫӳлеле хӑпартнӑ. Айала анас пулсан, ӑшӑ сывлӑша кӑларса йарса аннӑ. Кайарахпа вара йеропласем тума вӗреннӗ.

Хаљ ҫул ҫӳреме питех те аван. Пуйӑспа, пӑрахутпа йе йеропланпа темӗнле инҫе ҫӗре те часах ҫитме пулать.

Урапапа йе автобуспа ҫӳреме чул сарнӑ ҫулсем нумай. Вӗсем тӑрӑх темӗнле ҫанталӑкра та ҫӳреме пулать. Хуларан йала, колхоза тӗрлӗ таварсем куҫарма, йалтан хулана тырӑ, аш тата ытти ҫимӗҫсене турттарма ҫӑмӑл. Лайӑх ҫулсем хулапа йал ҫыхӑнӑвне ҫирӗплетсе пыраҫҫӗ.

Рабочисем, колхозниксем Автодор ушкăнне кĕрсе, лайăх çулсем тăвас ĕçре хастарлă ĕçлеççĕ. Мĕн пур ĕçхалăхĕ лайăх, куљтурăлă çулйĕршĕн социалисăмла ăмăртса кĕрешет. Çак социалисăмла ăмăртăва Чăваш республики пуçарса йанă.

Автобуспа.

Уйăп Мишши сăвви тăрăх.

Автобусĕ пĕр хашкарĕ,
Пĕр вĕçтерчĕ çивĕччĕн.
Сывă пулах, Шупашкарĕ,
Епĕр тепре киличчен.

Хула йулчĕ хыçала,
Сăрт хыçне пытанчĕ.
Ларса куртăм кăçалах,
Ларасса шанманччĕ.

Чуп, автобус, хытă чуп—
Епĕр пит васкатпăр.
Сăпкари пек пынă чух
Канлĕн йарăнатпăр.

Çип пек тӳрĕ çулĕпе
Вĕçтеретпĕр епĕр.
Акă Канаш хулине
Кĕрлесе кĕретпĕр.

Пирĕн çывăхри задачă—пур колхозниксене те тĕреклĕ пурăнакан тăвасси.

(Сталин йулташ Пĕтĕм Сойузри колхозник-ударниксен пĕрремĕш сйесĕнче 1933 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче тухса каланин сыпăкĕ).

... Социалисăм—лайăх ĕç. Телейлĕ социалисăмла пурнăç—тавлашма та кирлĕ мар, лайăх ĕç. Анчах ку пурте—малашне пуласси. Хаљхи вăхăтра тĕп ыйту епĕр ӳлĕмрен мĕн тума пултарассинче мар. Тĕп ыйту епĕр ĕнтĕ хаљхи вăхăтра мĕн тунинче. Хресченсем колхоз çулĕ çине тăчĕç. Вăл питĕ лайăх. Анчах мĕн тума ĕлкĕрнĕ-ха вăл çак çул çинче? Колхоз çулĕпе пырса епĕр туйса илмелĕхех мĕн турăмăр-ха?

Епĕр чухăнсен мĕлйунлă массине колхозсене кĕме пулăшас ĕçе турăмăр. Епĕр çакна турăмăр: колхоза кĕрсе, унта лайăхрах çĕрпе, лайăхрах ĕçхатĕрĕсемпе усă курса, чухăнсен мĕлйунлă массисем вăтам хресченсен пурнăçĕ таран хăпарчĕç. Епĕр чухăнсен, ĕлĕк выçăлă-тутăлă пурăннă мĕлйунлă массисем хаљ вăтамсем, çитти çитекен çынсем пулнине тума пултартăмăр. Епĕр хресченсем чухăна йулса, тата кулака тухса пынине татса пăрахма пултартăмăр, кулаксене çĕмĕрсе тăкрăмăр, чухăнсене колхозсенче хăйсен ĕçĕн хуçисем пулма, вăтамсем пулма пулăшрăмăр.

Колхоз строителствине сарса йариччен, пěр тăватă çул кайарах ěç мěнле тăнă-ха? Кулаксем пуйса çӳлеле хăпарса пынă. Чухăнсем начарланса, çука йулса пынă, кулаксен пусмăрне кěрсе ӳкнě. Вăтамсем çӳлеле, кулаксем патнеле хăпарасшăн тăрмашнă, анчах кашнинчех вěçерěнсе кайса айалала ӳкнě, кулаксен кулли пулса чухăнсен ěречěсене йышлăлатнă. Чухласа илме йăвăр мар, çавнашкал пěтěм пăтрануран кулаксем çеç, тен тата тěреклě хуçалăхсенчен хăшпěрисем усă курнă. Йалта кашни 100 кил пуçне 4-5 кулак килěсем, 8 йе 10 тěреклě килсем, 45—50 вăтамсен килěсем, тата 35 чухăнсен килěсем пулнă. Çапла вара, мěн пур хресченсенчен чи сахалтан та 35% чухăнсем пулнă, вěсен кулак пусмăрěн хăмăтне тăхăнса пымала пулнă. Вăтам хресченсен вăйсăр сийěсем çинчен епě каламастăп та, вěсем вăтам хресченсенчен çурри ытла пулнă, вěсем хăйсен пурнăçě тěлěшěнчен чухăнсенчен нумай уйрăм пулман, тӳррěнех кулаксене пăхăнса тăнă.

Епěр колхоз строителствине сарса çав пăтранупа тěрěсмарлăха пěтертěмěр, кулаксен пусмăрне çěмěртěмěр чухăнсен çав пěтěм массине колхозсене кěртрěмěр, унта вěсене çитти çитекен пурнăç патăмăр, колхоз çěрěпе, колхозсене паракан çăмăллăхсемпе, трактăрсемпе, йалхуçалăх машинисемпе усă курма пултаракан вăтамсем çӳллěшне хăпартрăмăр.

Мěне пěлтерет-ха вăл? Вăл 20 мěлйунран кайа мар хресчен халăхне, 20 мěлйунран кайа мар чухăнсене ыйткалакансем пек çука йуласран хăтарнине, кулак пусмăрěнчен хăтарнине, колхозсене пула вěсене çитти çитекен çынсем тунине пěлтерет.

Ку пысăк çитěнӳ, йулташсем. Вăл çитěнӳ—тěнче нихçан та пěлмен, тěнчери нихăш патшалăх та нихçан та тăвайман çитěнӳ.

Акă сире колхоз строителствин уççăнах палăрса курăнакан резулътачěсем, хресченсем колхозсен çулě çине тăнипе пулнă ěççем.

Анчах вăл пирěн п ě р р е м ě ш утăм çеç, колохз строителстви çулě çинчи пирěн п ě р р е м ě ш çитěнӳ.

Пирěн çав пěрремěш пусăм çинчен, çав пěрремěш çитěнӳ тунипех чарăнмала тесе шухăшлани тěрěс мар пулнă пулěччě. Çук, йулташсем, епěр çав çитěнěве тунипех чарăнма пултараймастпăр. Малала кайма, вара колхозсене

татăклăнах çирĕплетме пирĕн иккĕмĕш утăм йарса пусмала, пирĕн çĕнĕ ситĕнӳ тумала. Çав иккĕмĕш утăм мĕнлескер пулат-ха? Вăл колхозниксене—чухăнсем пулнисене те, вăтамсем пулнисене те—тата çӳлерех хăпартасси пулат. Вăл колхозниксене пурне те тĕреклĕ пурăнакансем тăвасси пулат. Çапла, йулташсем, тĕреклĕ пурăнакансем тăвасси. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Епĕр колхозсене пула чухăнсене вăтамсем таран хăпартма пултартăмăр. Вăл питĕ лайăх. Анчах унпах сахал. Пирĕн хаљ тата тепĕр утăм малала йарса пусмала, вара пур колхозниксене те—чухăнсем пулнисене те, вăтамсем пулнисене те тĕреклĕ пурнакансем таран хăпартмала. Ăна пурнăçа кĕртме пулат, кирек йепле пулсассăн та тăвасах пулат пирĕн ăна (нумайччен алă çупаççĕ). Çак хамăрăн тумали ĕçе пурнăça кĕртме мĕн кирлийĕ хаљ ĕнтĕ пирĕн пурте пур. Хаљхи вăхăтра епĕр машинăсемпе тата трактăрсемпе йапăх усă куратпăр. Çĕре те епĕр лайăхах ĕçлеместпĕр. Машинăсемпе тата трактăрсемпе усă курассине лайăхлатсанах, çĕре лайăхрах ĕçлесессĕнех епĕр хамăрăн çимĕçсен шутне икĕ хут, виçĕ хут ӳстерме пултаратпăр. Мĕн пур колхозниксене тĕреклĕ пурăнакан колхоз уйхирĕсен ĕçлекенĕсем тума çавăнпах та питĕ çителĕклĕ.

Ĕлĕкрех тĕреклĕ пурăнакансем пирки ĕç мĕнле тăнă-ха? Тĕреклĕ пурăнакан пулмашкăн кӳршĕсене тивмеле пулнă, вĕсене експлоатацилемеле, вĕсене хаклăраха сутмала, илессине вĕсенчен йӳнерехе илмеле пулнă, батраксенчен хăшĕсене тара тытмала, вĕсене чылай експлоатацилемеле, капитал пухмала, çапла çирĕпленсе кулака тухмала пулнă. Ĕлĕк, уйрăм хуçалăхпа пурăннă чухне, чухăнсемпе вăтамсем тĕреклĕ пурăнакансене шанманни, вĕсене курайманни çавăнтан килнĕ. Хаљ ĕç урăхла тăрат. Хаљ условисем те ăрасна. Хаљ ĕнтĕ колхозниксене тĕреклĕ пурăнакансем пулмашкăн кӳршĕсене тивме, вĕсене експлоатацилеме пĕртте кирлĕ мар. Хаљ ĕнтĕ кама та пулин експлоатацилеме те çăмăл мар. мĕншĕн тесен хаљ ĕнтĕ пирĕн текех çĕр уйрăм çынсен аллинче тăрас йе çĕр тара илес йĕрке çук, машинăсемпе трактăрсем патшалăх аллинче тăраççĕ, мул тытакан çынсем те хаљ колхозра чапра мар. Унашкал йăла пулнă вăл та, анчах ĕмĕрлĕхех куçран çухалнă. Колхозниксене тĕреклĕ пурăнакансем пулма хаљ пĕр йапала çеç кирлĕ—колхозра пĕтĕм кăмăлтан ĕçлемеле, трактăрсемпе тата машинăсемпе тĕрĕс усă курмала,

ĕçвыљăхĕсемпе тĕрĕс усă курмала, çĕре тĕрĕс ĕçлемеле, колхоз пурлăхне сыхламала.

Хăш чухне çапла калаççĕ: социалисăм пулсан,—мĕн тума ĕçлемеле-ха? Ĕлĕк те ĕçленĕ, хаљ те ĕçлетпĕр,—ĕçлеме пăрахма вăхăт мар-ши? Унашкал сăмахсем, йулташсем, пĕртте тĕрĕс мар. Вăл лотăрсен философийĕ, ĕççыннисен мар. Социалисăм ĕçлеме кирлĕ маррине пĕртте пĕлтермест. Ĕç пĕтĕмпех урăхла, социалисăм ĕç çинче тытăнса пырат. Социалисăмпа ĕçе пĕр-пĕринчен уйăрма май çук. Ленин, пирĕн аслă учитĕл: „Кам ĕçлемест, вăл çимест", тесе каланă. Мĕне пĕлтерет вăл, кама хирĕç пыраççĕ Ленин сăмахĕсем? Експлоататăрсене хирĕç, хăйсем ĕçлемесĕр ыттисене ĕçлеме хушса вĕсен шучĕпе пуйакан çынсене хирĕç пыраççĕ вĕсем. Тата кама хирĕç? Тата хăйсем кахалланакан, ытти çынсем ĕçленинчен усă курасшăн çынсене хирĕç. Социалисăм лотăрланса пурăннине мар, пур çынсем те тӳрĕ кăмăлтан, ыттисем шĕн мар, пуйансемшĕн мар, експлоататăрсемшĕн мар, хăйсемшĕн, обшчĕствăшăн ĕçленине ыйтат. Епĕр пĕтĕм кăмăлтан, хамăршăн, хамăр колхозсемшĕн, ĕçлесессĕн—вара епĕр ик-виç çул хушшинчех пур колхозниксене те,—чухăнсем пулнисене те, вăтамсем пулнисене те,—тĕреклĕ пурăнакансем таран хăпартма, нумай çимĕçсемпе усă курса, чăнахах та куљтурăлă пурăнакан çынсем тума пултаратпăр.

Çакăнта ĕнтĕ пирĕн чи çывăхри задачă. Епĕр ăна пурнăça кĕртме пултаратпăр, ăна пирĕн кирек йепле пулсассăн та пурнăça кĕртмеле. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Кӳршĕсем.

Виçĕмçул уйăрăлчĕç çулсем... Ихмен—колхоза кĕчĕ, Йекким çаплипех йулчĕ.

— Айда, кĕрĕпĕр, Йекким,—тенĕ Ихмен.

— Тăхтатăп-ха,—тенĕ Йекким.—Сана та çавăн пекех тăхтама сĕнетĕп. Кăвапана... татса пăрахсан, ăна вĕт сутăн илме çук...

Ихмен, вăл хăй хăйĕн ăшĕнчен, темĕскер тата-тата пăрахнă пек туйăннă пулсан та, çаплах та кĕчĕ кохоза. Пуринчен питрех ăна хăйĕн йуратнă шăши тĕслĕ лашипе уйăрăлма хĕн пулнă. Вăл ун патне, ăна колхоз витине леçсе парас шутпа, икĕ ерне тăрмашса çӳрерĕ. Пырат лаша патне, аллине йĕвен те илет.. унтан, таçта темĕскер ыратса

кайнипе, кайала çавăрăнса утаť. Çапла икĕ ерне тăрмашсан анчах вăл, пĕринче, лашине колхоз витине илсе кайма йĕвен тăхăнтарчĕ. Йекким кăна карта шăтăкĕнчен асăрхаса тăнă, вăл хăй ăшĕнче ун лаша халĕ те малала та хăйĕн витинчех пулмалишĕн шăппăн савăннă. Ихмен килкарти варринче чарăннă та, алкум картлашки çинче тăракан арăмне:

— Ну, лашана илсе кайатăп,—тенĕ.

Арăмĕ кăшт сулланса, алкум картлашки çинчен аннă та, лаша патне пынă. Пĕр вăхăт вăл, йупа пек чĕнмесĕр, хытса кайнă пек тăнă, унтан, ăшран карланкă патнеле темĕнскер пăлханса пынипе, сасартăк кайала сиксе ӳксе, пӳрте кĕрсе çухалнă.

Йекким чăтайман, Йекким карта урлă Ихмен патне сикнĕ.

— И-и-й... йай-йай!—тенĕ вăл.—Мĕншĕн асапланатăр çакăн пек, мĕншĕн, тетĕп, асапланатăр. Тухасчĕ колхозĕнчен, илсе кайас марччĕ лашине,—ĕçĕ те пĕтет...

Йекким çавăн пек сасартăк ун патне килсе тăнипе, Ихмен малтан ăна палласах та илеймен, пĕр вăхăт нимĕн хирĕçлеме пĕлмесĕр тăнă. Кайран, палласа илсен, çамкине куçĕсем çине антарнă та:

— Чарăн, Йекким, пăрăн,—тенĕ.-Вăхăтра мар çӳретĕн кӳршӳ патне, çăва çине сана!

„Чăнах вăхăтра мар“—аса илчĕ Йекким. „Алă çул пурăннă, çавах ăспуç мăтăк иккен“

Кун хыççăн ăна каллех, ĕнтĕ темĕн чул вăхăт аптăратакан цифрсем хупăрласа илчĕç: иртнĕ çул Ихмен 198 ĕçкунĕ ĕçлесе 95 пăт илнĕ. Йекким хăйĕн унта-кунта сапаланнă татăксенчен 72 пăт пуçтарнă. Кăçал Ихменĕн пайанхи куна 220 ĕçкунĕ, пайанхи куна, апла пулсан—110 пăт. Йекким хăйĕн имшерккe капанĕсенчен,—вăл хăйĕн итемĕ çине пăхса илчĕ,—70 пăт анчах кăларчĕ. Йедок шучĕ, вăйпитти çын шучĕ,—унăн та, кунăн та пĕр пекех.

— Ухмах еп! чарчĕ хăйне Йекким, пĕлтĕр пулнă йапалана аса илсе.

„Ĕçкунĕ вăл—пылак йыхрав çеç, тыррине çаплах илсе кайаççĕ“—илтнĕ пулнă вăл пĕр çĕрте. Вара Ихмен патне пынă та:

— Итле-ха, Ихмен. Ĕçкунĕ тени вăл сирĕн пулă хутаççи çеç иккен, пулă хутаççи, пĕр пĕрчĕ вăљчасăр... хи-хи-хи...

— Ватă та, çаплах—ухмах ес,—тенĕ çеç хирĕç Ихмен—кулак лачакинчен пĕр кашăк сыпса илнĕ те, йăтă пек савăнан...

Кăна аса илсен, Йеккиме питех аван мар пулчĕ. Вăл ним тума аптăранипе каска çинчен тăчĕ те унтала-кунтала пăхкаласа илчĕ. Каска çинчен тăчĕ, анчах ăçта кайас? Киле кайала кĕрес килмест,—унтан пaçăр çеç арăмĕпе—тăварлă йашка пирки, вунултă çулхи ывăлĕпе—çав колхоз пиркийех пăртак урлă-пирлĕрех калаçса тухнă; килкартине те,—унта пăртак вак-тĕвек ĕçсем пур пулин те,—кайас килмест. Вăл чылайччен ăçта кайасси пирки пăтрашăнса тăчĕ. Çав хушăра, хăй сисмен çĕртенех, ура айĕнче выртакан турпас таткине мунча умнерех тирпейлесе хучĕ, кăшт анарах панă мунча алăкне çĕклесе майларĕ, унтан, сасартăк:

— Пастай-ха, кайса килем тепрер... çавăнтала,—терĕ те, итем урлă, итем хапхи патнеле утрĕ.

* * *

„Майак“ колхоз правленин пӳртне хирĕç тĕмеске çинче—йупа, йупа çине икĕ тĕслĕ—хĕрлĕ, хура—хăма çапса хунă.

Йекким тăкăрлăкран тухнă чухне хăма умĕнче ĕçрен тавăрăннă колхозниксен ушкăнĕ тăнă. Ушкăн пăртак хумханнă: пĕрисем хăма патне пынă, теприсем хăма умĕнчен хесĕнкеле-хĕсĕнкеле кайала тухнă.

— Ăçта ес, ăçта ес, Йекким,—чавсаран тытса шӳтле чарчĕ ăна колхоз правленинчен тухнă Ихмен.—Мĕн ахалĕн, пушăла çӳретĕн пирĕн хăма патне, сана вĕт, пурпĕрех, ни хури çине те, ни хĕрли çине те çырса хурас çук, çӳресен çӳремесен те...

— Хури çине йурат сăрлама, хури çине—пит аван,—хушса хучĕ Йеккимпе тантăш шап-шур сухаллă колхозник Микихвер.—Илтетне, Йекким, кирлĕччĕ тетĕп сана хури çине сăрлама?! Хăпса йулатăн ес пирĕнтен...

Йекким ним хирĕçлеме аптрарĕ. Ихмене те, Микихвере те вăл пĕр сăмахпа хирĕçлесшĕнччĕ, анчах вăхăтра сăмах пулса çитеймерĕ: карланкăпа пыракан сăмах, пĕчĕк чул пек, кайала путрĕ, сăмаха йышăнма хатĕрленнĕ чĕлхе, улталаннăскер, çăвар тӳпи айĕнче анчах, темĕскер, чĕлхесĕрлĕ сассемпе мăкăртатса лăканса илчĕ.

— Ну, ну, вула, вула,—терĕ Микихвер.—Еп ахаљ калатăп. Вула, вон, сан кӳршӳ мĕн тăват, ĕçсене колхозра мĕнле çавăрат.

Куçсем çине йерипен хĕрлĕ тăхăннă сăмахсем анма пуçларĕç: „Ихмен Иванĕ"...

„Пĕрремĕш, каллех пĕрремĕш нумĕрпа тăрат!"

Малала: виççĕмĕш бригадăн бригадирĕ; тыр-пул пуçтарнă чухне заданисене йаланах ытлашшипех тултарса пынăшăн тата хăйĕн бригадине кĕракине пур йенчен те лайăх хатĕрлесе çитернĕшĕн пилĕк ĕçкунĕпе премилес".

Хăй хыçĕнче вăл, ун пир кĕпи çине, ун шурала пуçланă çӳçĕ çине, ун çăпати çине колхозниксем хăйсен куçĕсемпе пăхкаласа тăнине сисет, пуринчен питрех ăна, ун çине Ихменпе Микихвер пăхса, асăрхаса тăнă пек туйăнат. Ун çине пăхса тăракан куçсем мĕн каланине вăл пĕлеймерĕ, анчах Ихмен Микихвере шаппăн çеç: „урăлат пулас пирĕн Йекким тус, пирĕн йулашки чĕпĕ... тăваттăмĕш хут куратăп ăна пирĕн хăма умĕнче, путех ахаљ мар-тăр"—тенине илтсе йулчĕ.

„Тупнă сăмах—йулашки чĕпĕ, пăртак çиленчĕ Йекким.- Хă... вăл первăй, значит, а еп—йулашки, чи чăпасси.

Çапла шухăшласа илчĕ те, ун шухăшĕ сасартăк таçтан килсе тĕртнĕ вăйпа, темĕнле çунатланса, хăма умĕнчен çӳлеле вĕçсе кайрĕ, колхозниксен пуç çийĕнче çавăрăнчĕ, йал çинче, çырмари хăвасем çинче вĕçсе çӳрерĕ, вара, хăйĕнпе пĕрле уйа, сухаламали уйа тулхăрса çитрĕ.

— Сана, Ихмен, ăмăртăва чĕнетĕн,—вăйлăн, çирĕппĕн, тулхăрса калат Йекким.—Тикĕс, пĕр шырлăксăр сухалама, пĕр ура пусăм хăвармасăр акма, сӳреме... Илтетĕн-и?

— Йурат,—тет Ихмен, унтан кулса.

— Кул, кул,—тет хирĕç Йекким.—Еп сана кăтартăпха еп мĕнле йулашкı не, еп мĕнле чăпассине. Курăпăр-ха малашне хĕрлĕ хăма çинче... первăй нумĕрпа кам тăрассине...

. . . .

...Ăна хăма çинче, Ихмен йатĕнчен çӳлерех, такам ун йатне пысăк саспаллисемпе çырса хунă пек туйăнчĕ...

Каçхине, киле таврăнсан, савăнса кайнă вунултă çулхи ывăлне вăл колхоза кĕме зайавлени çыртарчĕ.

Колхоз пухӑвӗнче.

Н. К. Патман.

(„Воблӑ ҫинчен“ йатлӑ очӗркӑн сыпӑкӗ).

Нумай пулмаст манӑн ӗлӗк курса калаҫнӑ стариксен йалне кӗрсе тухмала пулчӗ. Председателе шыраса, пысӑк шатрун ҫурт патне ҫитрӗм. Икӗ пӳрт хушшинчен урамала тухакан крыльца ҫине хӑпартӑм. Сулахай йенчен такам хыттӑн калани илтӗнет. Алӑкне уҫса кӗретӗп.

Кунта колхозниксен пуххи иккен. Акана тухасси ҫинчен сӳтсе йаваҫҫӗ.

Докладчик питӗ тӗплӗн, кашни ӗҫе чыхвӑрсемпе кӑтартса итлекенсене ӑнлантарат. Миҫе лаша, миҫе урапа, мӗн чул вӑрлӑх, мӗн чул мишук—пӗр йапала та манса хӑвармарӗ пулас.

Малала вӑл кашнине мӗнле-мӗнле ӗҫ парасси ҫине куҫрӗ. Кунта та правлени мӗнле тӑвассине малтанах шутласа хунӑ мӗн.

— Ӗлӗк,—тет докладчик,—ваттисем, ҫемйере сухалама пултаракан ҫын пулсан, акма анчах тухатчӗҫ. Кунне пӗрре кайса пӗр ана акат те, унӑн ӗҫӗ те пӗтрӗ. Халӗ епӗр ваттисене савҫемех тапратасшӑн мар—кӑҫал епӗр пӗтӗм тырра машинӑпа акса хӑваратпӑр. Ҫавӑнпа, Уҫӑп пичче, есӗ кӑҫал акана та тухса кураймастӑн пулӗ,—терӗ докладчик малта ларакан кӑвак сухаллӑ старике кулкаласа.

— Мӗнле-ха апла?—тӗлӗнет старик.

— Мӗнле пултӑр, йаснӑ, халь ӗнтӗ есӗ улпут пекех пулатӑн. Ей, ну! ребйатӑ, тесе анчах лар,—терӗ хыҫалтан пӗри, ҫамрӑкрахскер.

Халӑх кӑшт йӑшӑлтатса илчӗ.

— Карчӑкӑм ҫук-ҫке. Карчӑк пулнӑ пулсан йӑпанса та ларнӑ пулӑттӑм та, халь пӗччен мӗнле чӑтса ларас килте ҫынсем акара савӑнса ӗҫленӗ чух,—терӗ Уҫӑп пичче, йури култармалах хуйхӑлӑ сывласа йарам пек туса.

Халӑх лаштӑрах кулса йачӗ.

— Анчах, йулташсем,—терӗ докладчик пӗр самантрах куллине чарса,—пирӗн умра йӑвӑрлӑхсем те сахалах мар-ха. Пирӗн кӑҫал ҫуракине примерлӑ иртермеле. Епӗр йалӑн ӗмӗртен пыракан йӑлисене патах татрӑмӑр. Епӗр пур ӗҫре те ҫӗнӗ майсемшӗн тӑрӑшатпӑр. Пирӗн, халӑха

хамăр йенне çавăрас пулсан, питĕ йĕркелĕн, питĕ астуса ĕçлес пулат.

Пире кураймансем, пирĕн ĕçе чăрмантарма хăтланакансем пĕтмен-ха. Вĕсем пирĕн çинчен тем те каласа çÿреççĕ. Вĕсем халăх тĕттĕмлĕхĕпе усă курса пирĕн ĕçе пĕтерсе хурасшăн. Хытă тăрăр, йулташсем, тимĕр пек çирĕп пулăр. Авалхи йал куштанĕ, çак хула пек сарăлса ларакан çурт хуçи пулнă Мăрсай Унтри пĕтрĕ. Анчах Мăрсай йăхĕ те, Мăрсай шайкки те пĕтмен—йалта кулаксем çук тесе калама пултараймастпăр-ха.

Йулташсем, тепĕр ернерен пирĕн правлени, çуракине хатĕр тăни-тăманнине тĕрĕслес шутпа, смотр туса иртерме йышăнчĕ. Çак смотра пурин те пĕр çын пек харăс тухса, хамăр килĕшÿлĕхе, хамăрăн организацилĕхе колхозра тăман хресченсене кăтартмала.

Докладчикăн хĕрÿлĕ сăмахĕсене алă çупни хупласа илчĕ.

Пуху пĕтсен, мана колхозниксем çавăрса илчĕç.

— Есĕ Шупашкартан килнĕ пулмала. Ну, мĕнле çĕнĕ хыпарсем пур унта? Ытти çĕрти колхозсем мĕнле ĕçлеççĕ, мĕнле пурăнаççĕ?

Тата та, тата та ыйтусем сирпĕнчĕç.

Епĕ те ыйтусем пама тытăнтăм.

Колхоз пуçланни нумай пулмаст иккен, çапах та вăл йĕркелĕ ĕçлесе пырат. Колхозра çур йал ытла. Пĕр вăхăтра йалĕпех те кĕрсе пăхнă та, анчах чылайĕшĕ кайала тухнă.

— Питĕ йăвăр килчĕ пĕр вăхăтра,—терĕ паçăрхи докладчик пирусне чĕртсе. Кирлĕ мар пире колхоз, теççĕ малтан, кирлĕ мар пире вăл. Тавай, колхоз çĕрне каллех йал çине уйăрса йаратпăр,—тесе кăшкăраççĕ кулаксем хыççăн. Мĕн тăвас?

Епĕр, колхозниксем, аптăрасах тăмарăмăр. Вĕсем пĕр сăмах калаççĕ, епĕр виççĕ. Халăх çинче тăнлантаратпăр, килте, урамра—пур çĕрте те пирĕн сăмах колхоз усси çинчен, кулаксен сăмахĕсем сийенли çинчен.

Халăх лăпланчĕ. Кайарахпа хăйсемех пирĕн пата киле пуçларĕç. Пĕри—мана илĕр, тет, тепри те—мана илĕр, тет.

Маттур çын, тĕплĕн, ĕçе пĕлсе хăйне хăй астуса калаçат. Хушăран вырăсла та йĕркелĕн çавăрса хурат.

— Вот, пăх, ак çакăнта тăракансенчен епĕр чăн малтан пиллĕкĕн колхоз тăвас ĕçе пуçласа йатăмăр. Ун чухне пире шанмаççĕ.—Мĕн тухтăр вăл есĕр хăтланнинчен,

теççĕ. Ак, хаҫ колхоз уссине сисрĕç те, колхозран тух тесен те тухас çук.

Колхозниксем пурте хăйсен йулташĕн куçĕнчен пăхса тăраççĕ. Лешĕ хĕрӳленсе каланă чухне вĕсен куçĕсем те çуталса пыраççĕ, ахăртне вăл хăйсем калас сăмахĕсенех калать пулмала.

— Пирĕн ĕмĕт пысăк,—тет вăл малала —Епĕр çĕре авалхи йĕркепе ĕçлеме пăрахатпăр. Епĕр ăна агрономи вĕрентнĕ пек ĕçлеме тытăнатпăр. Епĕр çĕр ĕçне тупăшлă тăвасшăн.

Пирĕн ĕмĕт—хамăр акса тунă тырпулран мĕн чухлĕ май пур, çавăн чухлĕ тупăш нумайрах курасси. Çавăнпа епĕр хамăр колхозра хатĕр продукцисем туса кăлармала тăвасшăн.

Докладчик-колхозник тата нумай каласа пачĕ хăйсен ĕмĕтне. Кирпĕч савăчĕ, панулмирен помадкă тумали, çĕрулмирен патăкăпа крахмал тумали, тăмран тĕрлĕ краскăсем йухтармали савăтсем, мунчаларан канатсем, сӳс-кантăртан тĕрлĕ вĕренсем тумали хапрăксем тата ыттисем çинчен те каласа пĕтерчĕ.

— Тен, епĕ калакан хапрăк-савăтсем кулăшла пулĕç те, анчах, çапах та, ман шухăшпа, вĕсем пулма пултараççех, мĕншĕн тесен вĕсем ваҫҫи чĕр тавар çителĕклĕ пулмала. Халиччен епĕр çĕре сухапуçпе сухаласа унтан кашни пĕр пĕрчĕ тырра куççулпе йăлăнса ыйтнă. Малашне епĕр йăлăнма пăрахатпăр. Çĕр мĕн чухлĕ хĕсĕнет, çавăн чухлĕ тупăш ытларах илме тăрăшмала унтан. Сухала есĕ ăна лайăх, трактăрпа; унăн питне урлă та пирлĕ виçе-виçе темиçе пайа касса, кашни пайне тĕрлĕ паха тырпулсем ак; тислĕк тăк, çемçет,—çĕр сана парăнатех. Ман шухăшпа çĕр начар, çĕр сахал, çĕр хĕсĕк тесе алла усса ларни пустуй сĕлеке йухтарса ларни анчах вăл. Сахал çĕртен те нумай тырă туса илме пулать, начар çĕре те аванлатма май пур—ĕçлеме пĕлни анчах пултăр. Епĕр ĕçе социалисăм çулĕ çине кăларатпăр—çакăнта пулать те ĕнтĕ хресчен халăхне ĕмĕрсем тăрăшшĕ пусса тăнă ыйтăва татса пани.

Колхоз организациленĕ чух мĕнле йăвăрлăхсем тĕл пулнă?

Малтан колхоза миçе çын пуçласа йанă?

Колхоз малала мĕнле ĕçсем тăвасшăн?

Йурă.

Ĕлĕк.

— Аҭа, карчăк, кайала—
Ҫуна тупаҥ ҫухалчĕ...

— Ыран ирпе Саваҫа
Илме йарсан йурĕҫке.[1]

Вăрăм ҫырма кĕперĕ,
Каҫма тăрсан пĕтерĕ.

Халĕ пырса кĕрес мар,
Чупан ута ан та чар,—

Йурттăр хăйĕн мехелпе
Ланкашкалă ҫул йĕрпе.

Ытла хыт ан хăвала—
Кунта лакăм пулмала.

Сулахайра—тип ҫырма,
Чăнкă ҫыран—сылтăмра.

Ах, пӳлĕхҫĕ, пӳлĕхҫĕ,
Киле ҫитме пулăшчĕ,

Ҫултах вилсе йулас мар,
Хура лашам, лаплаттар,

Киле илсе ҫитерсем—
Сĕлĕ арпи ҫитерем...

Халĕ.

Машинпа ларса кайас—
Шутлама ĕлкĕреймерĕм...
Те пĕрин ҫине ларас,
Те тепри татах та селĕм?
— Шофер пĕлекен ҫынах—
Йăкăнат Самарин,
Ĕрĕхтерчĕ машина,—
Ывăтса хăвари...
— Ҫул йĕрĕ ытла йака,
Ҫул йĕрĕ ҫатма, вĕт,
Сарăлаҭ-ҫке айакка
Автобуссен шавĕ...
— Ҫук хăвармĕ ывăтса,
Ывăтса хăвармĕ:
Ан пыр карлăкран тытса,—
Мучине каларăм...
— Еп пĕлетĕп пит аван,
Еп пĕлетĕп лайăх—
Маттуртан та маттур вăл
Ударлă ĕҫхалăх.
— Парти вăйĕн виҫи ҫук,
Вăйĕ ун—виҫесĕр...
Ҫавăнпа та ҫулран-ҫул
Хăвăртăн ӳсетпĕр!

Такăр ҫул.

Шупашкартан Канаша
Выртаҭ такăр ҫип пек ҫул.
Урăх пулмĕ тамаша
Хывнă тинĕс ҫирĕп чул.
И ту чипер, ту чипер,
Ту айăкки ҫул чипер.
Ҫулĕ йака, пит тикĕс,
Ҫырми урлă ҫĕн кĕпер
Варри ҫирĕп, тип-тикĕс,
Машинсемшĕн чĕр никĕс.

Ик айккипе йăвăҫсем,
Илем кӳреҫ чечексем.
Улми калаҭ таш кĕвви,
Ҫулҫийĕсем ҫупаççĕ.
Плугă, трактăр, машини
Хĕпĕртесе ташлаççĕ.
Йе ҫурҫĕрте, кăнтăрла
Ĕҫлет халăх кăткăла.
Ҫулăн икĕ айăкки
Пулаҭ симĕс тăвайкки.

---

[1] Ку йурра Сиккассинче, Канаш районĕнчи ҫулйĕр ударникĕсем йурлаççĕ.

Кахалăн ернере миçе ĕçкунĕ?

Тунтикун.

Тунтикунăн телей çук,
Ĕçре тухăç пулас çук.
Çапла мар-и, Улђанка?
Мĕншĕн есĕ кулђанан?
— Кĕлте кӳме каймала,
Авăн çапма тухмала.
Карта ларать йăтăнса
Аран-аран тытăнса.
Вĕрлĕк кирлĕ, тупасчĕ,
Кĕркуннеччен йусасчĕ.
Ĕçкунĕ те пит сахал,—
Мĕншĕн тесен ес кахал.
— Икĕ чикмек лартасси,
Ултă шăтăк картасси,
Тармĕç халĕ инçене.
Ыран епĕ вĕсене
Туса хурăп ирпеле.
Анчах, епĕ тăриччен,
Ирхи апат тирпейле.

Ытларикун.

Кĕтӳ хуса кăларни?
Хĕвел çӳле хăпарни?
Тăма вăхăт çитрĕ-ши?
Йе вăл вăхăт иртрĕ-ши?
Пайан пасар пулмала,
Унта кайса курмала.
Тухса кайас хăвăртрах—
Çитсе пулĕ-и вăхăтрах.

Йункун.

— Ой-ой, мухмăр пистерет,—
Çамка тирне хĕстерет.
Йункун ĕмĕр хĕнхурпа
Иртет манăн, мухмăрпа.

Кĕçнерникун.

— Кĕçнерникун ĕçлесси,
Килти ĕçе вĕçлесси—
Чи аванни пулать вăл.—
Анчах—пайан çилтăвăл.
Çăмăрĕ те ӳккелет,
Пур йенчен те тĕккелет.
Чĕлĕм туртса, паккаса,
Тĕрлĕ халлап шаккаса
Ларма аван кун пек чух,
Тумла йухса тăнă чух.

Ернекун.

Пайан ĕнтĕ ернекун
Тăвас пулать пĕр ĕçкун,—
Терĕ Çемен хашлатса,
Сăмсипеле нăшлатса.
Аран-аран тумланса
Тухса кайрĕ ĕçлеме—
Пуçпăйавĕ вĕçлеме,
Пӳрнесемпе шитлеме.

Шăматкун.

— Пуçпăйавĕ йавасси,
Сӳсрен кантра тăвасси
Çан-çурăма пĕтерчĕ,
Вăй-хăвата ӳкерчĕ.
Пайан канас, уçăлас,
Мĕскер ĕçпе хуçăлас?

Вырсарникун.

— Шурă кĕпе пур-и ман?
Йе праçнике астуман?
Каçпа пуху пулать, тет,
Ĕçшĕн преми параç, тет.
Кайас,васкас, кĕлтăвас—
Преми илме тăрăшас.

Пухура.

— Çемен çинчен ан пуплĕр,
Кахалсене ан хӳтлĕр.
Çак ернере ернекун
Тунă ĕнтĕ пĕр ĕçкуң.
Паллах ĕнтĕ кахалли,
Мĕскер ăна памали?

* * *

Ытларикун пасарпа,
Йуңкун вара мухмӑрпа,
Кĕҫнерникун ҫӑмӑрпа
Пурӑнат Ҫемен ырлӑхпа.

Сивĕ тӑман йур тĕркет
Улђан чунĕ пит вĕркет —
Ҫӑнӑх пĕтнĕ, улма ҫук,
Хĕл каҫма май пулас ҫук.

Трактористкӑ Кĕтерне.

И. Ваҫилйĕв, К. Минайĕв.

Трактористкӑ Кĕтерне хаљ трактӑр колоннин маҫтерскойĕнче пуҫлӑх.

Вӑл хаљ 24 ҫулта, анчах тепĕр 60 ҫулхи ҫын та ун чухлĕ хуйхӑ курман пулĕ. Ҫулталӑк ҫурӑ тулсанах вӑл хӑйĕн пиччĕшĕпе пĕрле тӑлӑха йулнӑ. Йалта ҫын ҫинче тӑранкаласа, ҫын патаккине ҫисе пурӑннӑ. Хӑй ача ҫĕклеме пултаракан пулсассӑнах ӑна ђањкӑна, унтан тарҫа тытма пуҫланӑ.

Вунтӑхӑр ҫулта вӑл качча кайнӑ. Анчах упӑшки ӑнманскер пулнӑ, вара Кĕтерне, пĕрринче, аллине икĕ уйӑхри ачине тытнӑ та упӑшки патĕнчен тухса кайнӑ. Авланнӑ пиччĕшĕ ӑна „уйӑрӑлнӑ матка“ тесе хӑй килне те кĕртмен. Кĕтернен йут ҫынсем патĕнче хваттер илсе пурӑнма тивнĕ. Кунӑн кĕрĕшсе ĕҫлекелесе вӑл шӑп икĕ ҫул выҫӑлӑтутӑлӑ пурӑннӑ.

Батраксен комитечĕ ӑна трактористсен курсне кайма сĕнсе йывӑр пурнӑҫран хӑтарнӑ. Йалти хресченсем кулаксем хыҫҫӑн кайса, ҫак тӑлӑх „курсанткӑран“ кулатчĕҫ. Анчах Кĕтерне вĕсем кулнине пӑхмасӑрах вĕренме кайрĕ.

Курс пĕтерсен Кĕтерне совхоза ĕҫлеме кĕчĕ. Кунта вара вӑл хӑйĕн чӑн вырӑнне, хӑй килне, хӑй ирĕклĕхне тупрĕ. Малтанхи кунсенчех вӑл ку ĕҫе унӑн пысӑклӑхĕшĕн, пĕрлешӳлĕхĕшĕн йуратса кайрĕ. Вӑл хӑй коллективпа ҫыхӑнса тӑнине, тата хӑйĕн чӑн-чӑн хакне туйса илчĕ. Совхоз интересĕсем унӑн интересĕсем пулса тӑчĕҫ: вӑл совхоз ĕҫне мĕн пур вӑйне хучĕ.

Трактористкӑ Кĕтерне уйрӑмах паха ĕҫлет. Трактористнормӑ тарӑх 10 сехет хушшинче виҫĕ гектар сухаламала Кĕтерне тӑватӑ гектар сухалат. Ҫунтармалине вӑл ҫменӑ хушшинче виҫĕ килограм перекетлесе хӑварат.

— Акă сире лăпкă Кĕтерне! Мĕнле пулгарат вăл!

— Уншăн мар вăл,—çиленсе калаçат Мазайĕв тракторис. Уна бригадир чи лайăх трактăрне панă, çавăнпа ун çунгармали нумай пĕтмест, тет.

Анчах ĕç кун пек пулман. Бригадир Алекçейĕв малтанах хăйĕн бригадине каланă:

— Кайăр та, кашни харпăр хăй ваљљи машинă суйлăр, тенĕ.

Ун чухне трактăрсем пурте пылчăкланса пĕтнĕскерсем, сĕрменскерсем кил хушшинче ларнă.

Кĕтерне хăйне ваљљи „пиллĕккĕмĕш номĕр“ трактăра суйласа илнĕ. Ăна çуса тасатса кăраççынпа çутатсах хунă. Бригадир Алекçейĕв çавăнтах ыттисене:

— Авă трактăра йепле тасатмалине хĕрсенчен вĕренĕр, тенĕ.

Курсра комсомолкă-трактористкăсенчен хăшĕ кулкаласа тăрăхласа илеççĕ:

— Кĕтерне, пăрах аппаланма!

— Есĕ ĕçленĕ хыççăн ху çăвăнатăн-çке. Машинăна та çапла çуса тасатмала. Вăл лайăхрах çӳрĕ—таварса хурат Кĕтерне.

Хăшĕ-пĕри Кĕтерне тăрăшса ĕçленишĕн тарăхаççĕ:

— Вăл аслисем умĕнче лайăха тухасшăн, сĕркеленсе çӳрет, теççĕ.

Кăна илтсен Кĕтерне тӳсеймерĕ. Çӳçне кайала сулса йарса:

— Епĕ хамшăн ĕçлетĕп. Ыран машинăпа камăн ĕçлемеле, хамăннах мар-и? Манах çамăл пулат, терĕ.

Кĕтерне иртнĕ çулта хăй трактăрне питех те лайăх пăхнипе, унăн трактăрне пĕтĕм ĕç вăхăтĕнче те пĕрре те ремонта паман. Ĕç пĕтернĕ хыççăн вăл трактăрне, мĕнле илнĕ çавăн пекех, пĕр сийенсĕр панă. Çураки вăхăтĕнче тăватă тракторис кăна хăйсен норминчен ытлашши сухаласа пынă. Вĕсем хушшинче никамран малта Кĕтерне пулнă.

Ĕç çинче Кĕтерне икĕ премি илнĕ: пушмак, тата канмали çурта путовкă. Хĕлле трактăрсене йусакан маçтерскойсенче тăрăшса ĕçленĕшĕн ăна сехет парса премиленĕ. Йулашкинчен вара, бригадирсен курсне пĕтернĕ хыççăн, ăна трактăр колоннинчи маçтерской пуçлăхĕ туса хунă.

Урине инке чăххисем.

Чăх тесен, ăна йалта пурте тенĕ пекех усраççĕ. Анчах йалĕпе шырасан та, хĕл варринче, çăмарта тăвакан чăх тупайăс çук. Пĕр Урине инке анчах хĕл каçичченех çăмартаран татăлмасть. Чăххисем унăн канма та пĕлмеççĕ, çăмарта тăваççĕ. Тĕк тăкнă чухне анчах, пĕр-ик уйăх хушши, тумаççĕ, унтан каллех тума тапратаççĕ.

Урине инкен ĕç лайăх ăнса пыни—пĕлсе, тăрăшса ĕçлениинчен килет. Урине инке хута лайăх пĕлет. Каç-каç вăл, ачасене çывратсан—кирлĕ кĕнекесем вулама йуратать. Кĕнекесем ăна темĕн те пĕр каласа параççĕ, тем çинчен те вĕрентеççĕ. Чăххисене пăхма та вăл кĕнекесем вуласа вĕреннĕ.

Урине инке чăххисене ăшă, çутă вите туса панă, ларма лутра каштасем, урайĕнчен пĕр метр çукрах туса панă. Ăшăрах пултăр тесе, тултан улăмпа хупланă, чăх пыйтисем ĕрчесе кайасран, шалтан шур тăмпа шуратса лартнă.

Урине инке, чăххисене чаваланма, витине йешчĕксемпе вĕтĕ хăйăр, кĕл лартса парать. Кĕлпе-хăйăрпа чăхсен пыйтисем тата ытти хурт-кăпшанкăсем те пĕтеççĕ, тет вăл. Йешчĕксем ăшне çĕнĕ улăм сарса, йăвасем туса, тĕттĕмрех кĕтессе лартса парать. Чăххисене ĕçме çулла кашни кунах тăрă шыв лартса парать, хĕлле—таса йур. Урине инкен чăх вити типĕ, аслă, таса. Чăх вăлашкисене вăл кашни кунах çăвать.

Чăх витине вăйя кулленех уçăлтарать, чăххисене те уçăлма кăларать, ытла сивĕ кун анчах кăлармасть. Чăхсем те чĕрчун, вĕсене те уçă сывлăш кирлĕ, тет Урине инке.

Хĕлле пулсан, Урине инке чăххисене кунне 3 хут тăрантарать. Ирпе пăтратса парать. Кăнтăрлапа, каçпа тырă сапса парать. Хăш чух Урине инке чăххисене чĕрĕ аш: выљăх пырши-пакартине, ўпке-пĕверне тураса вĕтетсе парать, чăхсем вара çăмарта аван тăваççĕ.

Çулла пулсан, Урине инкен чăххисем кунĕпех чупса çўреççĕ, тĕрлĕ апат тупса çийеççĕ. Çавăнпа вăл çулла чăххисене кунне пĕр хут анчах, каçпа ларас умĕн, тырă сапса парать. Чăххисем те Урине инкене йуратаççĕ: йăхăрсан, таçтан чупса пыраççĕ, йĕри-тавра ăна сырăнса илеççĕ, какаласа ун хыççăн утаççĕ.

Чăххисем, хăйсене аван пăхнăшăн, Урине инкене çăмарта туса савăнтараççĕ. Çăмарти унăн хăй вађђи те, сутлăх та пулать. Çапла Урине инке чăх усраса самай усă курать.

Колхоз çаранĕнче.

Колхоз утă çулса пĕтермен-ха. Çаранра ĕç вĕрет. Утă çулакан бригадă пĕгĕм вăйа хурса ĕçлет. Пайан бригадă утă çулма пĕтерсе урăх ĕçе тытăнмала.

— Çава мăкалчĕ—шабаш! Аçтан çулас ĕнтĕ çак путсĕр çавапа, тесе чĕнчĕ комсомолĕс Раман. Хăй кĕпе çаннипе çамки çинчен тарне шăлса илчĕ.

— Раман, кайа ан йул,—терĕç Рамана хирĕç ытти çамрăксем.—Нэмăс: Кĕтерне санран иртсе кайат.

Раман нимĕн те чĕнмерĕ. Вăл хыпаланса çавине лапаткаларĕ те, çулма тытăнчĕ.—Тăхтăр-ха, епĕ те иртсе кайăп, терĕ вăл шăппăн. Анчах ăна никам та илтмерĕ. Пĕр шăхăракан çутă çава çеç чăкр-р-р! чăкăр-р-р! туса типĕ курăка касма тытăнчĕ.

Çамрăксем ăмăргмала ĕçлеççĕ. Кашнийех йулташĕнчен иртсе кайма тăрăшат.—Ах, иртсе кайасчĕ,—тесе шăхăрат çава.

— Улљана, çул пар, иртсе кайатăп!—тесе кăшкăрат уçă сассипе Çтаппан.

Тс-с-ы-к! Тс--ы-ы-к!—шăхăрат çава. Типĕ курăк касăласшăн мар. Чă-ă-р-р! туса касăлат курăк.

— Йулашки паккус тухатпăр,—тесе чĕнчĕ Раман хăйĕн умĕнче çулса пыракан Кĕтернене.—Кĕтерне, епĕ санран иртсе кайатăп,—тет Раман кулкаласа.

— Иртейместĕн,—тет Кĕтерне.

— Иртегĕп,—тет Раман.

Утă çулса пĕтерни кашни бригадă членнех савăнтарат. Аçтан хавасланас мар-ха. Çамрăксем хăйсем çине илнĕ ĕçе мухтава тивĕçлĕ туса пĕтереççĕ.

Йурă.

Уйра тăри йурласан,
Килет уйăн илемĕ.
Епĕр ĕçе тытăнсан,
Килет ĕçĕн хăвачĕ.

Тырă пиçсе çитнĕ чух,
Кайас килмест уй-хиртен.
Ĕçсем лайăх пынă чух
Кайас килмест ĕç панчен.

Улăх уги ука пек
Ирхи сывлăм шывĕпе.
Пирĕн ĕçсем ылтăн пек
Хамăр тытса тунипе.

Епĕр колхоз тунинĕ
Пур çĕрте те пĕлеççĕ,
Пирĕн ĕçри мелсене
Килĕштерсе ĕçлеççĕ.

Ĕне вити утă перекетлени.

Ваçук ашшĕ колхозра ĕнесене апат парса пăхса тăрат̆. Кăçалччен колхозăн ĕнесем ваҙҙи уйрăм вите пулман. Ĕнесене сивĕ картара хупкаласа усранă. Апатне те урисем айнех тăкса панă.

Ĕнисем апатне çурри çийеççĕ, çуррине навус ăшне таптаса кĕртеççĕ. Ваçук ашшĕ кăна курат̆ те, колхоз правленине кайат̆.—Ĕне вити кăçалах тумала. Вите çук пирки, тата апат памали кормушкăсем çук пирки, колхоз ути сайа кайса пырат̆,—тет.

Правленире: Ытти ĕçсем нумай, ĕне вити кăçалах тăвайас çук. Лаша витине туса та расхут нумай кăлартăмăр, теççĕ.

— Апла пулсан епĕ малашне ĕне пăхаймастăп, колхоз пурлăхĕ усăсăр тăкăннине курсах ĕçлессĕм çук,—тет Ваçук ашшĕ.

Правленире Ваçук ашшĕ каланине сӳтсе йаваççĕ те вите тума йышăнаççĕ.

Колхозра ĕçе нумайа йамаççĕ. Платникĕсем те тупăнчĕç, йăвăçĕ те тупăнчĕ. Пĕр уйăх та иртмерĕ, витене туса та пĕтерчĕç. Витере уйрăм пӳлĕмсем турĕç. Кашни пӳлĕмне апат памали кормушкăсем лартрĕç. Ĕнесем апатне пĕр тăкмасăр çийеççĕ. Ĕнесем ăшă витере тăнипе апачĕ те сахалтарах кайа пуçларĕ.

Ваçук ашшĕ савăнат̆. Утă сахал пĕтнине курса вăл кашни ĕне пуçне кунне мĕн чухлĕ утă перекетленнине шутласа пăхат̆. Ĕлĕкхинчен шутласан, кашни ĕнепе хаҙ утă кунне икĕ килограм сахалтарах кайат̆. Колхозра 30 ĕне. Хайхи ăшă витепе кормушкăсем кашни кун 60 килограм утă перекетлеççĕ.

Колхозăн ĕне витине курма пыракансене кашнинех Ваçук ашшĕ çакна ăнлантарса парат̆. Уйрăм хресченсене те ĕнене ăшă витере усрăр, кормушкă туса парăр, тесе канаш парат̆.

Илйин йулташпа Хĕритун çинчен.

Ç. Шăпчăк.

„Ленин“ колхоз çуракине районра ытти пур колхозсенчен малтан тухса вуникĕ кун ĕçлемели плана сакăр кунга тултарчĕ. „Çавал“ колхоз тырă вырма тухнă кун „Ленин“ колхоз шăпах кăнтăрла тĕлĕнче ыраш вырса пĕтерсе кĕчĕ.

— Хамӑр колхоз ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен кӗнеке ҫыртарасшӑн епӗр. Пирӗн ҫитӗнӳсем вӗсем мухтану ҫитӗнӗвӗсем мар. Пирӗн ҫитӗнӳсем вӗсем большевикла ӗҫлесе туса пынӑ ҫитӗнӳсем. Епӗр большевикла ӗҫлесе пыратпӑр. Ҫапла ӗҫлесе пынипех епӗр тырпул хатӗрлев планне октабӗрӗн 1-мӗшне 112 процент тултарнӑ. Октабӗрӗн 15-мӗш кунӗ тӗлне пур хатӗрлевсене те пӗтӗмӗшпех тултарса татнӑ. Пирӗн колхозран чылай колхозсен пример илмеле,—тесе трибунӑ ҫинчен анчӗ республикӑри уй-хир ударникӗсен слётне килнӗ „Ленин“ колхоз председателӗ Илйин йулташ.

Илйин йулташ тухса каламасӑр пӗр канашлу та иртмест. Вӑл пӗтӗм итлесе ларакансене хӑй ҫине парӑнтарса илет. Шавлани-тунине илтеймӗн вӑл тухсан. Пурне те парӑнтарма, пур ӗҫе те тума пултарнӑран ӑна „Асамӑҫ“ тесе йат панӑ.

* * *

Тӗттӗм те пылчӑк кӗрхи каҫ. Умра нимӗн курӑнмаст. Йалта шӑпах. Кӗрхи йал ӑшӑ ыйхӑпа ҫывӑрат.

Кантӑк умӗнче, урамра мӑкӑртатни илтӗнчӗ. Тепри ҫавӑнтах вӑрттӑн ӳсӗрчӗ.

— Мӗнле сасӑсем?—шикленнӗ пек пулса сӑмах хушрӗ хаҫат вуласа ларакан председатӗл.

Лӑкӑрт, лӑкӑрт!—туртаҫҫӗ хапха калинкине.

— Алӑксене лайӑх питӗрнӗ-ши?—ыйтрӗ Илйин йулташ кӗнчеле арласа ларакан арӑмӗнчен.

— Кӑпӑр-кӑпӑр-кӑпӑр-кӑпӑр!—пӳрнесемпе парапанларӗ пӗри урам йенчи кантӑкран ҫав хушӑрах.

— Тухатпӑр!—урай варринчи пӗчӗк пукан ҫинче ларакан арӑмӗ, кӗнчелине пӑрахса, ура ҫине тӑчӗ.

— Ыйтмасӑр мӗнле тухатӑн ара? Кам пӗлет ҫурҫӗр варринче!..—хыттӑнах чарчӗ арӑмне упӑшки.

— Ваньккa, ку тури арманти мелник пулмала—тесе иккӗленсе чарӑнчӗ арӑмӗ.

— Армана ҫаратса кайман пулӗҫке—сасартӑк пӑрахрӗ хаҫатне Илйин йулташ.

— Тухса уҫ-ха хӑвӑртрах!—ҫавӑнтах хушрӗ арӑмне.

— Кӑна пӗлнӗ пулсан тухас та марччӗ леш йалтан. Ашса ҫӳресе хӑшкӑлтӑмӑр. Сывӑ-и, Илйин йулташ?—алӑ пырса тытрӗ ҫӗнӗрен килнӗ сӑран тумтирлӗ ҫын.

— Такам ҫаптарсах хӑвалат ӗнтӗ тата сана?—пырса алӑ пачӗ Илйин вӑрман промхозри хӑй паллакан Зверӗв йулташа.

— Çаптараççĕ çав. Лайăхах çаптараççĕ. Тавай-ха колхоз пухăвĕ туса иртерер кĕçĕр, Илйин йулташ.

— Колхоз пухăвĕ?—тĕлĕнсе пăхса илчĕ Илйин Зверĕв çине.

— Çапла çав, колхоз пухăвĕ. Сирĕнпе вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе договăр тума килтĕм. Прорыв вĕт, ача,—йулташла калаçса илчĕ Зверĕв йулташ.

— Прорыв мар, тем пултăр хут. Кĕçĕр колхозниксене пухма пулмаст. Çурçĕр çитнĕ вĕт.

— Прорыва пĕтерме вăхăта пăхса тăмаççĕ.

Никама та тăратаймастăн хаљ çывăрнă çĕртен. Çынсене те ыйхă памастăн. Ху та канлĕ выртса çывăраймастăн. Вырт та çывăр. Ирхи ĕç каçхинчен иртерет, теççĕ. Вырăн пур,—çемçе кăмăллă сасăпа вырăн çинеле кăтартрĕ Илйин.

— Чăнах та пуљ,—вăрахăн килĕшрĕ лешĕ те.

Пайан миçе йалта пулнине, миçе договăр тунине, Лешкассем вăрман турттарма кайасшăн маррине—йăлтах каласа пачĕ Зверĕв пĕр 15 минут хушшинче.

— Ĕçкĕ ăшне путнă вăл Хĕритун. Пуринпе те ĕçкĕпе çыхăннă. Никам та итлемест ăна,—хĕрхенсе каласа хучĕ Илйин Лешкасри колхоз председателĕ çинчен.

* *
*

„Ленин“ колхоз кăçалхи вăрман хатĕрлес плана тултарнă. Октаберĕн 17-мĕшĕнче вăрманпромхозпа 100 кубла метр хатĕрлеме договăр тунă. Договăра виçĕ кун хушшинче пурнăçланă. Колхоз председателне Илйин йулташа вăрманпромхоз коçтум парса парнеленĕ. Бригадирсене Ивановпа Çемйонăва атăсем парса парнеленĕ. „Ленин“ колхоз вăрман турттарса кăларма тата 100 кубла метрлăх çĕнĕрен договăр тунă. Лешкасри „Сталин“ колхоза ăмăртăва чĕннĕ“—тенĕ статйа çапăнса тухнă районри хаçатра.

— Асамăç!—мĕн пур çилĕпе çурса тăкрĕ хаçата Хĕритун мухмăр куçĕсемпе çаксене вуласа илсен.

— Пултарĕ вăл „асамăç“—мухтаса илчĕç чылай колхоз председателĕсем Илйин йулташа.

— Асамăç!—тесе çурăк хаçата таптаса илчĕ тепĕр хут Хĕритун.

— Вĕрентĕп епĕ сана ăмăртăва чĕнме!—йунаса илчĕ вăл ӳсĕрпе ӳксе çĕмĕрнĕ сылтăм аллипе.

— Хапхи те хӑй пекех ӳсӗр, Мӗкӗте, пӑх-ха!—пушӑ аврипе тӗллесе хӑварчӗ Хӗритунӑн тайлӑк хапхи ҫинеле „Ленин“ колхозри вӑрман турттарма кайакансенчен пӗри.

Камӑн ӗҫ ӑнса пырат: Илйинӑн-и йе Хӗритунӑн-и?

Хӗритун колхоз предҫедателӗ пулма тивӗҫлӗ-и?

Револҍуци пуличчен.

(Хӗрарӑмӑн ӗлӗкхи пурнӑҫӗ ҫинчен).

Ваҥук Алҍтука сӑмах пӗтерсе илмерӗ, вӑрласа, ирӗксӗр илчӗ.

— Мӗн тӑвас тетӗн ӗнтӗ, ачам, ҫырнине курмасан ҫук, хӑвна турӑ ҫапла ҫырнӑ пуҍ, йату та кайнӑ ӗнтӗ,—терӗ Алҍтука ватӑ амӑшӗ.

Алҍтукӑн хӑйӗн чун савни Миккуҍ пурччӗ, иккӗшӗн сӑмахӗсем ытла та килӗшетчӗҫ, вӑййа тухсан та йаланах иккӗнччӗ.

Анчах ҫӗр ҫӑтман Ваҥукӗ вӗсен ӗмӗтленнӗ ӗмӗтне татрӗ... Нимӗн тума та ҫук. Ваҥук арӑмӗ пулас пулчӗ.

Алҍтукӑн йӗмен кунӗ те иртмест. Вӑл йӗнине сиссен, Ваҥук пӗтӗмпех урса кайат: „Миккуҍшӑн йӗретӗн-им?“ тесе ахӑрма пуҫлатчӗ.

Пӑртакҫӑ ӗҫкелесен вара йӗрки те ҫук: пиҫнӗ йашка—йашка мар: ку йашкана Миккуҍна кайса ҫитер! тесе сирпӗте-сирпӗте йарат, ҫӑкӑрӗпе ывӑта-ывӑта йарат; вырӑн сарса йураттарма ҫук вара; урине салтма пырсан, тапа-тапа сирпӗтет.

— Ӗмӗрӗме йепле ирттерем-ши?... тесе татӑлса йӗрет Алҍтук.

Нимӗн тӑвайманнипе вӑл амӑшӗ патне кайса та пӗрер ерне пурӑнса пӑхат. Амӑшӗ вара: хӑна шел, ачам, кайатӑн пулӗ, кӗрӳ хыҫалтан килӗ тата, мӗн тӑвас тетӗн ӗнтӗ, ҫӑпата мар, хывса пӑрахма йурамаст, тӳсесех пулат, тен ачу пулсан кӑшт та пулин тӳрленмӗ-и-ха... тесе хӗрне „пусарса“ ӑсатат.

Вӑхӑчӗ ырӑпа та иртет, усалпа та чарӑнса тӑмаст. Алҍтук пӗрре те хӗр туса парат, тепри те хӗрех пулат.

— Есӗ мана, хӗр ҫине хӗр туса парса, ыйткалама йарас тетӗн-им? тесе Ваҥук иккӗмӗш хӗрӗ ҫуралнӑ-ҫуралманах йатлаҫма пуҫлат.

— Ах, кĕрӳ, ывăл ачана кирек кам та хапăл та, ăна чустаран йăвалаca тумала марçке-ха,—терĕ хуӈамăшĕ, чунтан тарăхса.

Аљтук Миккуљне манчĕ. Тем пек Ваӈука йурама тăрăшат, çапах та йураймаст. Качакасем пахчине кĕрсе купăстине çисен те, çăнăх миххине шăшисем шăтарсан та, ачи йĕрсен те, лашине тытса кайсан та,—пĕрмайах арăмĕ айăплă. Пурăна-киле Аљтук Ваӈукран хăраса унăн куçĕнчен ухмах пек чăр пăхса илекен пулчĕ.

Кăмăлĕ çавăрăннă вăхăтра: „Ваӈук, мĕншĕн есĕ мана ахалех вăрçатăн, хĕнетĕн"—тесен, „Ак, сире, хĕрарăмсене, хĕнемесен,—есĕр темĕн те хăтланăр,—тесе кулат кăна Ваӈукĕ.

Револљуци пулсан.

(Хĕрарăмăн халљхи пурнăçĕнчен).

— Е-е-е, есĕ пухăва чупакан пулнă-и-ха, çавăнпа сан çăвар уçăла пуçланă. Епĕ ак, калăплă çăпата илĕп те, вĕрентĕп чупма. Унта йăрт та йăрт тухса чупат иккен-ха вăл, епĕ ăна ĕçпе çӳрет тесе тăратăп... Епĕ сана часах çăварлăхлăп-ха,—тет Ваӈук.

— Мана çăварлăхлама епĕ лаша мар, сан пекех çын... есĕ мана ирĕксĕр чарма пултараймастăн. Кайас тесен, халех те кайатăп, санран хăрасах тăмастăп,—тет Аљтук.

— Ах, шуйттан! Йепле хăрами пулнă вăл!

— Хăрамастăп çав, уйăрăлатăп та кайатăп ак, çурта халăх сучĕ уйăрса парĕ... тек сан патакна çисе пурăнмастăп, ĕлĕк те нумай хĕнерĕн, çитĕ.

Ваӈук йăлт аптăраса çитрĕ. Хĕнеме тытăнсан, капла калаçаканскер, хирĕç тытăнма та чарăнсах тăмĕ... Мĕнле самана пулса кайрĕ-ха капла? Ĕç те мар ĕнтĕ ку. Çĕр пани мана, ывăлсăр çынна, лайăх та-ха вăл, капла хĕрарăма пусмăрлаттарни ĕç мар... хĕрарăм йепле пулсан та, хĕрарăмах ĕнтĕ вăл... вырăн сарса памасан, урана салтмасан...—тесе, кунĕпе йашка çиме кĕмесĕр шухăшласа çӳрерĕ.

— Çук, капла мар, учитĕлницă патне кайса йатлам-ха, мĕн вĕсем унта хĕрарăмсене пăсаççĕ,—тет Ваӈук.

Пырат учитĕлницă патне. Ун патне райĕçтăвкомран икĕ арçын килнĕ мĕн, темĕн çинчен питĕ хĕрӳ калаçса лараççĕ.

Калаçсан тусан, Аљтука та чĕнтерчĕç.

Аљтукпа Вањукăн ĕçне сўтсе йавма тытăнчĕç. Аљтук, упăшки çине пĕрре пăхса илмесĕр, ĕлĕк Вањукпа мĕнле пурăннипе халĕ, çынсем унăн куçне уçнăранпа, мĕнле пулнине йăлт пĕр пытармасăр каласа пачĕ.

— Малала та çаплах пулсан, епĕ Вањукпа пурăнмастăп, çурта суг хăй пĕлсе уйăрса парĕ, ачасем хампа пыраççĕ,—тесе пĕтерчĕ.

— Илтрĕр-и ав, мĕн тет. Çурта уйăрма есĕ аннў патĕнчен çуртпа килмен вĕт... сўтĕлсе ларан, сана сўтĕке йепле чарас мар,—тет Вањук.

— Чим-ха, Вањук, есĕ хăвна сăмах парсан калăн,—тесе чарчĕ ăна председатĕл.

— Манăн пĕтрĕ, урăх епĕ нимĕн те калаймастăп.—терĕ Аљтук.

— Халĕ, Вањук, есĕ ху мĕн калас тенине кала ĕнтĕ,—терĕ председатĕл.

— Мĕн каласси—хĕнет, вăрçат̆, тет, хĕрарăма кам хĕнемест, вĕсене пĕртте тивмесен, вĕсем пуç тăррине хăпарса ларĕç... Хаљ те тивменни нумай пулат̆ ĕнтĕ, çавăнпа ытлашши иргĕнсе кайрăн та,—терĕ Вањук, арăмĕ çине шур куçпа пăхса. Ав Микихвер ман йышши кăна парат̆-и, çавăнпа та ун арăмĕ çу пек. Сире мĕн чухлĕ çемçе тытнă, çавăн чухлĕ мăшкăлатăр есир... Çурт ăна! Ав пушă арчуна йăт та вĕçтере пар, унтан пиччу лаша çумне кăкарса çўрĕ.. Çĕрне епĕ ăна, паллах, памастăп...

— Кам калас тет тата?—терĕ председатĕлĕ, Вањук пĕтерсен.

— Епĕ пĕр ик сăмах калам-ха,—терĕ Пет̆ук.

— Совет влаçĕн саккунĕпе хĕрарăм та çĕр илсе арçынсемпе танлашрĕ. Саккун пĕр-пĕринпе килĕштерсе, пĕр-пĕрне пулăшса пурăнма хушат̆. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнайманнисене уйăрăлса, хăйне йурăхлă йулташ шырама ирĕк парат̆, вăрçса çапăçса пурăнма хушмаст̆.

— Çурт йĕр тĕлĕшĕнчен: пĕрле ĕçлесе тунă çурт-йĕр, пĕрле туйаннă выљăх-чĕрлĕх çурмала пулат̆, пўрт арăмупа ачусене тивет, сана кĕлет пулат̆.

— Вара ман сивĕ кĕлетре йепле пурăнмала пулат̆-ха? Вăл саккун пулат̆-и?—тет Вањук.

— Аљтукăн еппин, сан шутупа, пушă арчине йăтса кайса ăçта пурăнмала?—тесе хучĕ учитĕлницă.

— Вăл тепре качча кайат̆...

— Есĕ те тепре авланан.

— Ачасене, çамрăккисене, саккун амăшне парат, пысăкраххисем хăйсем кампа йулас теççĕ, çавăнпа пурăнма пултараççĕ.

— Ачасем иккĕш те хампа пĕрле пыраççĕ,—терĕ Аԓтук.

— Ачусен çĕрне Ваԓукках акса тăма пултарат, анчах вара кашни кĕркунне икĕ ачана тăранса пурăнма мĕн чухлĕ тырă кирлĕ, çавна суг тӳлемеле тăват. Çапла ачусене 18 çула çитиччен тăрантармала пулат.

Лаштах чикрĕ пуçне Ваԓук.

Чăваш арăмне.

Çеçпĕл Мишши.

(Ĕçхĕрарăмĕн ĕлĕкхи пурнăçĕ çинчен).

Хура-шур анчах курмашкăн
  Кам çуралса ӳснĕ?

Çут тĕнчере йăвăр хурлăх
  Кам ытларах тӳснĕ?

Çут тĕнчере кам телейĕ
  Çĕре ӳксе йулнă?

Авалтанпах кам кунçулĕ
  Тарçăри пек пулнă?

Камăн вăл?—Кунçулĕ йăвăр,
  Хурлăхлă кунçулĕ?...

Чăваш арăмĕн пулмасăр
  Камăн тата пулĕ?

Чăваш арăмне асапшăн
  Ашшĕ-амăшĕ çуратнă,

Ачаранпах хурлăх чулĕ
  Мăйĕ çине çакнă.

„Хĕрарăмăн çӳçĕ вăрăм—
  Асĕ кĕске"—тетчĕç,

Уншăн çут тĕнче курмашкăн
  Мĕне кирлĕ?—тетчĕç.

Кил-тĕрĕш тирпейлесессĕн,
  Тата ĕне, сурăх

Пăхса усрама пĕлсессĕн,
  Мĕне кирлĕ урăх?!

Çапла йерипенех санăн
  Вăйусем пĕтетчĕç.

Масар çине, чун тухсассăн,
  Кайайса чикетчĕç.

Сан çинче вара хурлăхлăн
  Çил анчах вĕретчĕ,

Усăсăр иртнĕ кунçулшăн
  Шăхăрса йĕретчĕ...

Иртнĕ çулсенче çаплаччĕ
  Хĕрарăм кунçулĕ...

Малашне тек ан тăкăнтăр
  Мĕскĕн чун куççулĕ.

Чăваш арăмĕ, саншăн та
  Хурлăх хыça йултăр.

Пулас пурнăçу мăшкăлсăр,
  Савăнăçлă пултăр.

Хĕрарăмсем, есир те хаԓ
  Етем шутне кĕрĕр,

Вучах умĕнчех ан иртгĕр
  Текех сирĕн ĕмĕр!

Ёмӗр чура пулма ҫитӗ,
Чура пулма намăс!...

Ирӗклӗ кунҫул тумашкăн
Тăрăр пурте харăс!...

Ҫитӗ! Шăпăр шăтăкӗнчен
Ҫут тӗнчене тухăр!

Етем чунне—выԓăх чунӗ
Вырăнне ан хурăр!

1. Ку произведени тăрăх чăваш хӗрарăмӗн револуцичченхи пурнăҫӗ мӗнле пулнă?

2. Хӗрарăма арҫынпа тан шутламанни хăш сăмахсенчен курăнат?

3. Совет влаҫӗ хӗрарăма мӗнле ирӗклӗхсем панă?

Ёҫхӗрарăм йурри.

Хӗм Октабӗр хумӗпе
Ирӗк илнӗ епӗр те.
Тухăр, тухăр урама
Октабӗре тав тума.
Хӗн-хур курнă кунҫулсем
Иртсе карӗҫ куҫҫуԓсем.
Чечекленчӗҫ пурнăҫсем,
Ҫирӗпленчӗҫ вăй-халсем.
— Ҫӳҫ вăрăм та, ăс кӗске,
Тетчӗҫ тăтăш вӗт пире.
Асилсессӗн ҫаксене
Хаԓ йӗрессӗмӗм килет.
Пӗр кăмака умӗнчех,
Ёмӗр иртнӗ сӳс ҫинчех.
Пухăва та кăларман,
Халăх ӗҫне тутарман.
Кинемей те, инкесем
Халӗ тытрӗҫ букварсем,
Хӗрарăм хаԓ инженер,
Агроном, милиционер.
Советра та, хулара
Ертелте те колхозра,
Ăҫта ҫитен, вăл унта—
Ёҫхӗрарăм вырăнта.
Ним киревсӗр чиркӳнне
Ишӗлтерчӗҫ тăррине.
Йаҫлӗ тунă алтарте,
Сирпӗнтернӗ „туррине“.
Арласса та, тӗртессе
Машинлатпăр йалт ӗҫе.
Хапрăк, савăт йалсенчех
Йантрататпăр ак кӗҫех.
Хӗрлӗ йалав вӗлкӗшет,
Пурнăҫ хăвăрттăн ӳсет.
Тухăр, тухăр урама
Октабӗре тав тума!

Хӗрлӗ улах.

Йал варринче пӗчӗкҫеҫҫӗ кивелнӗ пӳрт хӗвеле хирӗҫ пăхса ларат. Унăн хăмапа витнӗ ҫийӗ вырăнӗ-вырăнӗпе ҫӗрсе шăтнă. Урам йенчи икӗ чӳречинче ҫурри ытла кантăксем ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Ҫӗмрӗк чӳрече куҫӗсене ҫӳхе хăма таткисемпе пиıӗркелесе хунă. Пӳрт умӗнче хӗрача ҫӗрулми витрепе суртлат, карташӗнче карчăк чăхчӗпсене апат парат.

* *
*

Урамваррипе çамрăксем пиллĕкĕн кулкаласа шавласа пыраççĕ. Майукăн сасси таçтан айакранах паллă: „Ав, Спатук инке карташĕнче чăххисене апатлантарат, Аҥук та килтех, атăр часрах“... Спатук пӳрчĕ умне персе çитрĕç.

— Спатук инке, епĕр килтĕмĕр. Халех пӳрт ăшчиккине тасатма тытăнăпăр, каçпа хĕрсемпе улаха килетпĕр,—терĕ Майук.

— Йурĕ, йурĕ, кĕрĕр пӳрте,—тени илтĕнчĕ карташĕнчен. Çамрăксем пӳрт умне чупса хăпарса кайрĕç. Аҥука:—Пăрах улмана, пар витрене, шыв ăсма кайам, —терĕ Майук. Унтан хĕрсене: „Есĕр тусансене çтенасем çинчен мелкепе шăлса антарăр, унтан ăш шывпа пӳрт ăшчиккине çума тытăнăпăр, арçын ачасем платник ĕçне пуçлăр, халех, вăхăта ахаљ ан ирттерĕр“, терĕ Майук.

* *
*

Ĕç пуçланса кайрĕ. Кăнтăрлаччен ĕçлерĕç çамрăксем Спатук пӳртĕнче. Арçын ачасем чи малтан пӳртĕн çивитти шăтăкĕсене питĕрчĕç; унтан пӳртри сĕтелне, саксене тӳрлетрĕç; йулашкинчен кантăк лартакана илсе килсе çĕмрĕк чӳрече куçĕсене пурне те ларттарчĕç. Хĕрачасем маччана, çтенасене, урайне сĕлтĕ шывĕпе çуса тап-таса туса хучĕç; кăмакине пурпа шуратрĕç; тата хĕрлĕ кĕтесрен картинсем илсе килсе çтенасем çумне çыпăçтарса хучĕç. Таптаса, шап-шурă пулса кайрĕ Спатук пӳрт ăшчиккийĕ.

— Ну, ачасем, тавтапуç сире, спаçипă куншăн: ытла та çурта илемлетсе пăрахрăр, епĕ кун пек пуласса кĕтменччĕ,—терĕ Спатук хавасланнă кăмăлĕпе.

* *
*

Каç пулса çитрĕ. Унта та, кунта та хресченсен çурчĕсенче лампă çутисем курăна пуçларĕç. Аҥук та çамрăксем паçăр йалканашĕнчен илсе килнĕ пысăк лампа çутса йачĕ. Спатук пӳрчĕ ăшчиккийĕ, ку тĕрлĕ лампă нихăçан та курманскер, çап-çутă çуталса кайрĕ.

— Ах, анне, йепле çутă, йепле илемлĕ пирĕн пӳртре,—терĕ Аҥук,—комсомолĕссем пулăшман пулсан, хăçан епĕр кун пек чыс курнă пулăттăмăр. Йурататăп епĕ комсомолĕссене, анне. Епĕ те комсомола çырăнас тетĕп. Мана Майук тахçанах комсомола кĕр тесе калат;—мĕнле есĕ шухăшлатăн, анне?

— Кĕрех, ачам, кĕр, чармастăп, ыр çын пул; комсомолĕссем пирĕн пек çуксемшĕн тăрăшнине епĕ халĕ хам куçпа хам куртăм... кĕрех, ачам, кĕрех,—терĕ Аӈук амăшĕ.

Пăртак тăрсан çамрăксем Спатук пӳртне пуçтарăна пуçларĕç. Хĕрсем кăнчала арламали, йе чăлха çыхмали йапаласем аллисене илнĕ. Йеçук Çтаппанĕ те килсе кĕчĕ; хăй сылтăм хулĕпе двухрйадкă кармунне хĕстернĕ. Акă Майук та çитрĕ, ун хыççăн Ваçлипе учитĕл. Майук аллинче „Ĕçхĕрарăмĕ“ йатлă журнал. Учитĕлпе Ваçли аллинче хаçатсем, кĕнекесем.

Майук пӳрте кĕрсенех хăйĕн илемлĕ хура куçĕсемпе йĕри тавра пăхса тухрĕ те, улаха килнĕ çамрăксемпе калаçма тытăнчĕ:

— Ну, ĕнтĕ, хĕрсем, пайантан хамăр хĕрлĕ улаха уçăлнă шутлатпăр, кашни каç йе ик-ĕвиçĕ кунта пĕрре епĕр çакăнта ларма килме тăрăшăпăр. Çитĕ пире мунчасенче пăчăхса ларни. Кунта пирĕн таса, çутă. Кама алă ĕçĕ йăлăхтарат, акă пирĕн кĕнекесем, хаçатсем пур, вулама пултаратăр. Кăмăлăр пулсан, йурлама, выӡама, ташлама та пултаратăр. Учитĕл çĕнĕ йурăсем, çĕнĕ вăйăсем нумай пĕлет, вăл сире вĕрентме хут хăçан та хатĕр. Хута сахал пĕлекеннисем, хута та вĕренме пултаратăр, ăка пирĕн вуламали кĕнекесем пур. Халĕ ĕнтĕ тытăнар ĕçлеме; кам мĕн ĕç тăвас тет, çавна ĕçлĕр, пĕрне-пĕри чăрмантарнă ан пултăр, терĕ Майук.

Çамрăксем шăппăн тĕрлĕ çĕре вырнаçрĕç те, ĕçлеме пуçларĕç. Хĕрсем хăшĕ кăнчала арлама, хăшĕ чăлха çыхма тытăнчĕç. Ваçлипе учитĕл сĕтел çине хаçатсем сарса пăрахрĕç те, шăппăн вула пуçларĕç. Йеçук Çтаппанĕ кармунне сентре çине хурса сĕтел çинчен „Капкăн“ журнала аллине илчĕ. Майук „Ĕçхĕрарăмĕ“ журнал çинчен „Колхозри хĕрарăмăн пурнăçĕ“ йатлă статйана хытă сасăпа вула пуçларĕ; ытти çамрăксем алă ĕçĕсене туса пынă майах Майук мĕн вуланине тинкерсе итлеме пуçларĕç.

* *
*

Вăхăт çурçĕр йеннеле çывхарса пырат. Йалта нумайĕшĕ выртнă: ăшă-тутлă ăйхăпа ĕçхресченĕсем çывăраççĕ, пĕр çуртра акă лампă çап-çутă çунат; унăн çути икĕ чӳрече витĕр тухса урам урлă тăсăлса ӳкнĕ. Таçта айакра автан сасси: „ку-кку-ре-ку“ тени илтĕнчĕ; ун хыççăн тепĕр авган хулăм сасăпа авăтса йачĕ; кун сасси

пĕтнĕ пĕтменех тĕрлĕ çĕрте тата çичĕ-сакăр автан пĕр пĕрне сасă парса илчĕç.

Спаҭук пӳртĕнче йурланă сасă: „Çакă пирĕн йулашки татăклă çапăçу, интернационалпа етем йăхĕ хăват илет"— тени илемлĕн урамала илтĕнчĕ. Пӳртри çынсем унталакунтала васкаса угрĕç. Спаҭук пӳртĕнчен хĕрлĕ улах çамрăкĕсем кĕпĕрленсе урама тухрĕç. Урам варрине çитсен Йеçук Çтаппанĕ кармунне калаçтарса йачĕ; ун хыççăн çамрăксем: „Смело мы в бой пойдем, за власть советов", тесе çирĕп те вăйлă сассисемпе йала йантратса килĕсене саланчĕç.

Вĕçне çитиччен, татăклăнах çĕнтериччен.

Дорошенкă Матрунĕ.

(„Хĕрлĕ Донбас" колхоз правлени членĕ Ирклийĕв станци, Çурçĕр Кавказ крайĕ).

I.

Акă ман пурнăçа илсе пăхсан. Епĕ батрачкă. Атте хăйĕн ĕмĕрне батрак пулса ирттернĕ: пĕтĕм ĕмĕрне вăл кулаксемшĕн, пупсемшĕн ĕçлесе пурăннă. 1909 мĕш çулта атте суккăрланчĕ, епĕ ун чухне 9 çулта кăна пулнă, çав çултан пуçласа вара тарçă ĕçĕпе пурăнма пуçларăм.

... 16 çула çитсен, Дорошенкă казака качча кайрăм. Вĕсем тăваттăн пĕр тăванччĕ. Пурте авланнăскерсем. Хăйсем пуйан пурăнаҭчĕç. Арăмĕсене те пуйанскерсене илнĕ, епĕ кăна вĕсен йăхне йут çын пулса кĕтĕм. Епĕ упăшка тарçи вырăнче кăначчĕ, вăл мана хытă хĕнетчĕ. Атте патне пыраттăм та йĕрсе лараттăм вара, атте хăйĕннех перет: Чăт, хĕрĕм, упăшкана пăхăнас пулаҭ, тет. Пурăнтăм вара.

Анчах батрак йунне сивĕтсе йама çук çав. Кубаҥ шывĕ çинчи йалсем тăрăх граждăн вăрçи тăваллăн сарăлса кайсан, пирĕн упăшкапа пурнăç уйăрălса иккĕленсе кайма пуçларĕ. Ун тăванĕсем хăйсен ирĕкĕпех шуррисем патне кайрĕç, хăйне Деникин çарĕсем мобилизаципе илсе кайрĕç. Çакăнтан вара уйăрălу та, кĕрешӳ те, çĕнĕ пурнăç та пуçланса кайрĕ.

II.

Упăшкан аслă пиччĕшне, Иоçиф Дорошенкăна, йалта та, таврара та „Азиат" тесе чĕнеççĕ. Вăл офицер, шурă палач пулнă. Йал çыннисем вăл Батурин йалĕнче плошчĕгрех хĕрлĕ салтаксемпе партизансен амăшĕсене, арăмĕсене, тата

ачи-пӑчисене хӑй аллипех персе, тата касса вӗлерни ҫинчен каласа параҫҫӗ.

Упӑшка таврӑнчӗ, Азиат та йала таврӑнчӗ. Епӗ упӑшкана калатӑп:—Азиат пирӗн пата ан ҫӳретӗр,—тетӗп. Епӗ ун ҫинчен мӗн пӗлнине йӑлтах совет влаҫне каласа пӗлтеретӗп, тетӗп. Анчах ҫапла каламассерен упӑшка мана тискеррӗн хӗнетчӗ, йулашкинчен:—Ҫӑварна уҫсанах вӗлеретпӗр, терӗ.

Шарлама пӑрахрӑм. Чӗре ҫинче чул пек йӑвӑр пулин те шарлама пӑрахрӑм.

1928-мӗш ҫулта упӑшка вилчӗ. Ҫав ҫултах кулаксене пирвайхи хут чӑннипе силлесе илчӗҫ. Ҫав ҫултах вара епӗ пӗрремӗш хут пуху умне тухса хам чӗре ҫинче чул пек выртакан сӑмахсене каларӑм. Йала халиччен тытса тӑнӑ пуйансемпе бандитсем ҫинчен хам пӗлнине пӗтӗмпех каларӑм. Азиат ҫинчен те каласа пӗлтертӗм.

Ҫав каҫах Азиат йалтан ҫухалчӗ.

III.

Иоҫиф йалтан ҫухалчӗ. Анчах кӑшт тӑрсан, вӑл Коренӑв районӗнче совхозра ӗҫлет тенӗ хыпар ҫӳре пуҫларӗ. Ҫапла вырнаҫнӑ вӑл. Ытти шурӑ бандитсем—кулаксем те вырнаҫса пӗтнӗ. Анчах совхозра мар, хамӑр йалтах. Вӗсем ҫапла вырнаҫнинчен тӗлӗнсех кайрӑмӑр. Горбиксем виҫҫӗн пӗр тӑван. Аслӑ пиччӗшӗ Михаља пуҫарнипе, хӑйсен майлӑ пуйан казаксемпе, Полубатпа тата Лукашпа пӗр пулса, вӗсем 1929 ҫулта йалта колхоз туса хучӗҫ.

Горбик Михаљи кам пулнӑ-ха вӑл? Кулак. Анчах ку ҫех те мар. Вӑл—шурӑ палач.

Анчах вӑл ҫапла массӑна каллех хӑй аллине илчӗ. Кӑшкӑрса, вӑрҫса, хӑратса та мар. Ҫук. Тӗрлӗ майпа вӑл чухӑнсене хӑй майлӑ ҫаварса пычӗ.

Пӗлтӗр пирӗн пысӑк колхозсене темиҫе колхоза пайларӗҫ. Пирӗн учаскӑра ҫӗнӗ колхоз—„Хӗрлӗ Донбас" пулса тӑчӗ. Правленине ытларах батраксене суйларӗҫ, мана та суйларӗҫ, Горбиксемпе вӗсен шайккинчен правленине никам та лекеймерӗ.

Епӗ вара, ку пирӗн пӗрремӗш ҫӗнтерӳ пулчӗ тесе шутларӑм. Анчах пире тӑшмансем ҫапах та улталама пултарчӗҫ. Правленине сӗкӗнеймерӗҫ вӗсем, анчах темле майпа ӗҫ ҫапла килсе тухрӗ: Горбик Михаљи 5-мӗш бригадӑн бригадирӗ пулса тӑчӗ, Горбик Љави—колхоз счетовочӗ, Горбик Порфири сысна фермин заведуйушчийӗ пулчӗ.

Тырпул хатĕрлевĕ персе çитсен тин епĕр çак кампани пире мĕнле çавăрса илнине чухласа илтĕмĕр.

Çак кампани, Горбик Михаҫи пуçарнипе, колхозниксене тырă вăрлама, шăтăксем чавса пытарма хушнă.

Вара епĕ, — ку ĕç нойабĕрте пулнă, — пуху пухма хушрăм, пухура мĕн пулнине йăлт каласа патăм, вара епĕр çавăнтах Горбиксемпе вĕсен кампанине колхозран хуса кăлармала йышăнтăмăр.

Горбик Михаҫи çав каçах йалтан çухалчĕ.

Çавăн чухне вара пĕрремĕш хут чĕлхесем уçăлчĕç. Колхозницăсен чĕлхисем салтăнчĕç. Вăй пирĕн алла кĕнине, хăйулăрах кăна пулмалине курчĕç колхозницăсем.

Арçынсем çаплах нăшлатса, унтала-кунтала пăхкалаççĕ, хĕрарăмсем кĕрешĕве тытăнчĕç: 32 колхозницă, ушкăн-ушкăн уйăрăлса çав куннех колхозниксен килĕсем тăрăх вăрланă тырра кайала илме саланчĕç. Тырă чавса хунă шăтăксем часах уçăла пуçларĕç.

IV.

Горбиксене колхозран хуса кăларсан, декабĕрĕн 29-мĕшĕнче епĕ колхоз предçедатĕлĕ пулса тăтăм. Анчах нумайлăха мар. Бандитсем мана темиçе хут хăратса каланине ĕçе кĕртме шут тытнă.

Каçхине хам пӳрт патне пынă чухне кĕçĕн хĕр тискеррĕн çухăрнине илтетĕп. Пусма вĕçнеле чупрăм та, алăк патĕнчен пĕр пысăк çын сиксе ӳкнине курах кайрăм.

Ку çын Азиат иккенне ăнлантăм та, пĕтĕм вăйпа кайала чупма тытăнтăм.

Пӳрте колхозниксемпе пĕрле тавăрăнсан куратăп: ман хĕрсене çыхса пăрахнă. Мĕн илсе кайма май пулнине йăлтах çаратса кайнă.

Хăраса ӳксессĕн, хуйхăрма пуçласан, тан мар кĕрешӳре, уйрăмах хĕрарăмсем хушшинче тунă çĕкленӳ тӳрех çӳнсе ларассине ăнланса илтĕм. Епĕ вара хам асапсене çĕнтерсе, ĕç кунпах пĕтес çуккине пĕлсех хам ĕçе ним пулман пекех малала ĕçлеме тытăнтăм, хваттере улăштарма та шухăшламарăм.

Ыран йанварĕн 19-мĕшĕ тенĕ чухне, çĕрле, епĕ алăк патĕнче такам кăшăртаттарнă сасăпа вăранса карăм. Пăркунне мана тапăннă хыççăн епĕ çивчĕ пуртă хатĕрлесеттĕм. Хаҫ çав пуртăпа çенĕхе тухса:

— Кам унта? — тесе ыйтрăм.

Алăка такам тата çиленсерех çĕмĕрме пуçларĕ. Вара епĕ: кам пирвай кĕрекеннинех пуçне касса татататăп, терĕм. Кун хыççăн темиçе çын кулни илтĕнчĕ, анчах алăка урăх никам та тĕкĕнмерĕ.

Çапла çенĕхре мĕн чухлĕ тăнине астумастăп, анчах питĕ шăнса кайрăм, пӳрте кĕтĕм те кĕçĕн хĕр çумне выртрăм.

Кĕç чăхсем йăсланă сасăпа вăранса кайрăм. Чӳречерен пăхрăм та, хам çурт çуннине курах кайрăм. Ачасене вăратрăм та, епĕр алăкран тухса тарма пикентĕмĕр. Анчах алăка тултан хытă тĕкĕлесе хунă. Кантăкран сикме хăрарăм, кантăк умĕнче кам та пулин сыхласа тăрат пуль, терĕм.

Алăк çунса пĕтĕм пӳрте тĕтĕм кĕрсен, çулăм шала кĕме пуçласан тин епĕр çунса пĕтнĕ алăкран чупса тухрăмăр.

... Бандитсем ман пуçа пĕтĕмпех пĕтерме шутланă курăнат. Ыран йанварĕн 30-мĕшĕ тенĕ чухне, епĕ колхоз правленинчен хам çĕнĕ хваттере таварăннă вăхăтра, пӳрт умĕнче мана икĕ арçын хирĕç пулчĕç те, пуçран çапса ӳкерчĕç. Унтан мана çенĕхе илсе кĕрсе çăвара кăраççын кĕленчи чикрĕç, епĕ кăраççынне чылайах çăтсан, ман çăвара тутăр чикрĕç те мăйа пăйавпа мăйкăчласа туртса хучĕç, епĕ тăнран кайрăм. .

Анчах мана вĕсем çапах та пăвса вĕлереймен, такам чăрмантарнă пулмала вĕсене. Больницăра епĕ икĕ ерне выртрăм... Çавăн пиркийех Мускава колхозник-ударниксен сйесне лекейменшĕн питĕ кульанатăп.

Епĕ крайри сйеса кăна лекрĕм.

Сталин каланине итлеме, хам мĕн шухăшланине пĕтĕм сойузри сйес трибунĕ çинчен пĕтĕмпех калама май килмерĕ пулин те, халь те пулин епĕ ăна, хĕрарăм, йачĕпе, кĕрешекен паттăр йачĕпе, пĕтĕмпех каласа паратăп:

— Тĕрĕс, Сталин йулташ! Колхозницă вăйĕ пысăк. Пирĕн совет влаçĕшĕн, пирĕн коммунисла партишĕн, пире, чурасене, ирĕке кăларнăскерсемшĕн, пире хамăр пурнăçа тăвакансем туса хунăскерсемшĕн, вĕçне çитичченех тăрăпăр, татăклăн çĕнтеричченех кĕрешĕпĕр. Кайала чакмăпăр! Хамăр колхозсене упраса хăварăпăр, вĕсене çирĕплетĕпĕр, хамăр та, хамăр ачасем те тулăх пурнăçпа пурăнма пуçлăпăр.

Бандитсем пуçĕсене çĕклесе çӳреймĕç, пире кулаксем, халăх тăшманĕсем пĕтерейменĕç.

Тырпул маршĕ.

А. Петтоки.

Çĕн сĕткенпе, çĕн йунпала
Çĕршыв, вăйна кăтарт!

Тыр тухăçне çĕн вăйпала
Ик хут, виç хут хăпарт!

Çĕре заказ—давай тырпул,
Çитет типсе ларма!

Тĕш ырлăхпа,
çĕршывăм, тул:
Ан кĕр тек парăма.

Тухатпăр епĕр трактăрпа
Сухалама, акма.

Çĕнĕ сăрпа сăрлатпăр-ха
Тăван çĕршывăма.

Колхозсемпе, совхозсемпе
Мĕн пур çĕре акар.

Машинсемпе, комбайнсемпе
Пиншер гектар вырар.

Кӳртер хире чугун шăрши,
Машин кĕвви кӳртер.

Сар тул пĕрчи, ыраш тĕшши
Лавшар, лавшар кӳрер!

Çĕре приказ—
пиншер центнер
Тĕш-тыр туса кăлар.
Елеватăрсене леçер
Мĕлйуншар хĕрлĕ лав.

Асап витĕр.

Алагĕр.

— Епĕ 1898-мĕш çулта, батрак çемйинче çуралнă, тесе пуçларĕ вăл хăйĕн халлапне. Ман атте мĕн ачаранпах батрак. Вунултă çула çитсен вара, ман хамăн та атте пурнăçне мĕн пур пылаке-йӳççипех туганса пăхма лекрĕ. Вăл пурнăç ман çурăм хыçне шур пиртен çĕлетсе тунă кутамка çактарчĕ. Амур шывĕ çинчи прийискă текен вырăна, ылтăн тăпри чавма, çавăтса кайрĕ вăл мана.

Унта сахал мар нуша, сахал мар хĕн-хур курма лекрĕ...

1915-мĕш çул. Империалисăм вăрçи. Кайрăмăр фронта. Йанвартен пуçласа август уйăхне çитиччен нӳрлĕ окопра.

Унтан вара плен. 1918 мĕш çулччен Германире пурăнма тиврĕ. Пленри салтаксене Раççейе таврăнма ирĕк парсан çеç, 1918-мĕш çулхи октабĕрĕн 18-мĕшĕнче кăна тухса килтĕмĕр Раççейа.

Тавăрăнтăм киле. Килте йухăнчăк хуçалăх, ни лаша, ни ĕне çук. Хĕлĕн-çăвĕн тенĕ пекех, киле тавăрăнмасăр, вăрманта ĕçлеме лекрĕ.

1929-мĕш çул. Йалĕпех колхоз турĕç. Анчах вăл виçĕ уйăхран ытла тытăнса тăраймарĕ.

1930-мĕш çул. Пирĕн йалта тата тепĕр хут колхоз организациленет.

Епĕ кĕмерĕм. Хам пурнăçа кăштах уралантарма пуçланăччĕ епĕ ун чух. Темиçе çул хушши мĕн пур вăйа хурса, çурмаран татăлса кайас пек ĕçлени ахалех, харама кайассăн туййăнатчĕ. Ман унчухне лаша та, ĕне те пурччĕçке-ха, Ăçтан уйăрăлан... Кулмала вĕт.

Йулташсем партире тăраканскерсемччĕ. Кашни ура йарса пусмассеренех колхоз çинчен аса илтеретчĕç. Темскерле лайăх мар пекчĕ... Самай ыраттарнă вырăнтан чĕпĕтнĕнех туййăнатчĕ. Хĕрелеттĕм. Вĕсен куç умĕнче шӳтленĕ пек пулма тăрăшаттăм.

Кайарахран вара, темскер тулсах, тулсах пычĕ.

„Мĕн пулат килет, темле пулсан та пĕччен мар вĕт... Кĕретĕп"—терĕм хама хам.

Кĕтĕм. Колхоза кĕтĕм. Пĕтĕм вăйпа, пĕтĕм шухăшпа, йунпа парăнтăм колхоз ĕçне. „Пĕрре тытăннăскер кайала çавăрăнмастăпах", тетĕп. Полевод турĕç. Темскерле, хам лайăххăн сисейми туйăмпа, пурнăçра пухнă пĕлӳпе усă курса ĕçле пуçларăм. Ĕç ман тĕллĕн телей пулнă пекех ăнса пычĕ.

Пĕрре ак çакнашкал пулчĕ

— Григори Иванча 10-мĕш бригадăн бригадирĕ тăвас. Тăрăшакан етем вăл, пултармала,—теççĕ.

Тĕлĕнмеле, нимĕнле паттăрла ĕç те туман-çке...

— Çук, тăванăмсем, епĕ халăха итлеттерме пултараймастăп пуљ, унта йаройрах çын кирлĕ, тетĕп.

— Ан калаç, Григори Иванч, сана епĕр пайан тин мар пĕлетпĕр,—теççĕ. Килĕшмерĕм. Çичĕ кун хушши кайса çӳрерĕм бригадăна. Пăхкалатăп. Сăнатăп. Колхозниксем тăрăшаççĕ. Пурте мана: Григори Иванч та, Григори Иванч, теççĕ. Кăмăллăн, ăшă куçпа пăхаççĕ вĕсем ман çине. Хам тавра шанчăклăнах колхозниксене пĕтĕçтертĕм. Кусем ĕнтĕ, пурте манран час-часах канаш ыйтаканнисем, чăнчăнах тăрăшса ĕçлекеннисем. Актив. „Кусемпе маххă парас çук, мала тухма та май пур, хаљ ĕнтĕ еп бригадир пулсан та аптрас çук"—тейекен шухăшсем пырса кĕрекĕре çирĕпленсех пычĕç пуçра.

Пултăм бригадир.

8 хут премилерĕç.

Хĕрлĕ йалав пачĕç.

Çинчен тата хама хисеплĕ хут тыттарчĕç.

— Мĕншĕн?.. Кирлĕ мар мана нимĕнле хут та, тетĕп.

Вĕсем мана:

— Ес йертсе пынипе 10-мĕш бригадă мала тухрĕ. Сан бригадăри колхозниксем пĕтĕм вăйне хурса ĕçе чĕре рен йуратса ĕçлерĕç,—теççĕ.

Хама темле аван мар пек. Пăлханатăп. Çав хушăрах хам ăшра темскерле, йун хĕрӳленнĕ пек пулчĕ. Хăвăртрах, хăвăртрах тапма пуçларĕ чĕре. Чип-чипер тăраканскерех, таçта, çӳлеле ухатăп пек... Таврара куçсем. Ăшă та кăмăллă куçсем хыпашлаççĕ мана. Малтанах еп вĕсене чип-чиперех, вĕлтлетсе иртен сăн-сăпатсем çинче, хама çывăх, паллаңă çынсен пичĕсем çинче курэттăм. Кайран, кайран вара... тавра тĕтреленчĕ. Йышлăланнăçемĕн йышлăланчĕç, темиçе çĕрĕн пăха пуçларĕç куçсем. Çав хушăра еп темскер каласшăн пултăм. Калас тесе çăвара уçсаттăм... Анчах... Чĕлхе çавăрăнмаст.

Алăра хисеплĕ хут. Вĕçĕмсĕр ал çуппи.

Еп телейлĕрен те телейлĕ етем..

Хăвах шухăшла, ĕлĕк те ĕçлемен мар епĕ. Ĕçленĕ. Мĕн пур пек вăй шăнăрĕсене карăнтарса, çурмаран татăлса кайас вĕçне çитиччен ĕçленĕ. Анчах ман çине кам та пулин çавăрăнса пăхни?.. Кам та пулин ман тусанлă ӳт тăрăх йухакан пăтранчăк сăнлă тара курнă-и? Çук, пулман çав ун пек... Ĕçленĕ çинчен ăшă сăмах каласа хĕпĕртеттерес вырăнне, сан çан-çурăму тăрăх саламат, чышкă чăмрашки кăна чупнă. Сана хĕненĕ, ăнран кайас вĕçне çитиччен хĕненĕ. Анчах ес шарламан. Униче хапхинче çул кăтартса тăран йупа йевĕрех, туйăмсăррăн курăнмала пулнă сан.

А хаљ... Ĕç вăл—чыс.

Сан ĕçне пĕтĕм йал, пĕтĕм çĕршыв хаклат.

Сан ĕçӳ çине темиçе çĕршерĕн те пиншерĕн ăшă та кăмăллă куçсемпе пăхаççĕ.

Хама хисеплĕ хутпа парнеленĕ куна аса илетĕп те ĕçлес килет. Ват шăм-шак ăшне çамрăклăх сĕткенĕ кĕнĕн туйăнат.

Аван, аван колхозра ĕçлеме. Хăв ĕçне пĕтеретĕн те, ăшăнта канлĕх. Уйрăм хуçалăхра апла мар вĕт. Лашине, выљăххи-чĕрлĕхне те хăвах пăхатăн. Аки сухине те, ытти вак-тĕвек ĕçсене те хăвăнах тăвас пулат. Ĕçлен ĕçлен, а пурнăç ăнмаст, пĕччен, уйра ларан хăрăк тунката йевĕр, пурнăçран айакра тăратăн. Кичем. Салхуллă пурнăç уйрăм хуçалăхра. Тĕрĕссипех каласан, уйрăм хуçалăх çулĕ вăл— вилĕм çулĕ. Вăл çул çине тек-текех темĕнле пулсан та тавăрăнас çук епĕ...

Чылайччен калаçрĕ Белоглазов. Пĕтĕм çемйи итлерĕ ун пурнăçĕн историне.

Пӳртре таса. Сăрлă урай. Чӳречесем çӳлĕ те пысăк. Унта та кунта сарлака, йешĕл çулçăлă чечексем. Çгенасем çинче тĕрлĕ ӳкерчĕксем. Ленин, Сталин, Каганович сăн ӳкерчĕкĕсем илемленеççĕ. Сывлăш уçă. Аван ун пӳртĕнче. Сĕтел çинче хаçат-журнал. „Известия", „Красная Чувашия", „Ленинский путь", „За большевизацию колхозов", тата „Пионерская правда" тейекен хаçатсем.

Белоглазов хаçатсене чĕлĕм туртма, йе çгена çумне çыпăçтарма мар, чăн-чăннипех интересленнĕ пирки илет. Вăл тĕнчери лару-тăрува, уйрăмăнах лейпцигри процеспа, Литвинов йулташ Америкпа канашлани çинчен аван пĕлет. Ку ĕçсем уншăн хăй хуçалăхĕнче пулса иртнĕннех туйăнаççĕ пулас. Вăл пĕрне хурлат, теприне—ырлат.

Çапла çитĕнет, ӳсет, çĕнелнĕçемĕн çĕнелсех пырат Белоглазов. Çапла хывса ыватат вăл хăйне мĕн авалран пусмăрласа, тĕттĕмре тытса усранă ирсĕрлĕхĕн кивĕ те çĕрĕк тумне. Мĕнпе? Ирĕклĕ ĕçпе. Хăйне, пĕгĕм ĕçхалăх обшчĕствине пуйан та кулътурлă çул çине кăларса тăратакан чыслă ĕçпе аркатат вăл киввине.

Коминтерн.

(Йурă).

Пур савăт, хусканăр,
Пĕр харăс пуçтарнăр.
Тухар çапăçмашкăн,
Вăрçмашкăн, вăрçмашкăн.

Пăшал авăрла,
Ес тĕлле лайăхрах,
Кĕреш, пролетари,
Ĕçӳшĕн хăвах.

Чĕн çеç, Коминтерн—
Пĕр харăс тухатпăр.
Советсенĕн хĕрлĕ
Йалавне тытатпăр.

Епĕр хĕрлĕ фронтшăн
Çуралнă отрйад,
Ним чул та чакмастпăр
Çак хамăр çултан.

Ик клас хире хирĕç
Вăрçаç татăклăнах.
Тăватпăр Советлă
Сойуз тĕнчипех.

Пур савăт, хусканăр,
Пĕр харăс пуçтарнăр.
Тухар çапăçмашкăн,
Вăрçмашкăн, вăрçмашкăн.

Пăшал авăрла,
Ес тĕлле лайăхрах.
Кĕреш, пролетари,
Ĕçӳшĕн хăвах.

Икĕ гигант.

А. Таҥков.

Пайанхи кун чи пирвайхи хут Çĕмĕрлене куракан çын:

— Ку мĕнле хула-ши?—тесе шутлама пултарать. Чăнахах та, Çĕмĕрлене хула сăн-сăпачĕ кĕрсе çитнĕ.

1921-мĕш çулта унта виçĕ пÿрт çех пулнă пулсан, хаљхи вăхăтра пÿртсене шутласа та кăларайас çук. Пĕр вĕçĕнчен пăхсан, тепĕр вĕçĕ ăçта пĕтни курăнмасть. Ултçичĕ тÿрĕ урам тăрăх катмар йăвăç çуртсем лартса тухнă.

Поçолăк хыçĕнче çурт-йĕр коопераци çурчĕсем хăйсем пĕр урам пулса ларнă. Вĕсенчен кăшт вăрман ăшнерех комбинатăн икĕ хутлă çуртсем йĕркен-йĕркен ларса тухнă. Пурĕ вăтăр пÿрт, кĕçех тата çирĕм пулмала. Пÿртсем таврa кăтра хурăнсем, хырсем... Кунта çитсе кĕрсенех Мускав çывăхĕнчи дачă аса килсе кайать.

Унтан пысăк клуб, çулахи театр, столовăй, магазинсем. Çак пÿртсем патĕнчех пысăк, сарлака çул коридор пек вырăна илсе тухать. Икĕ йенче те çÿлĕ сапурсем. Çак коридор икĕ гиганта уйăрса тăрать: сылтăм йенче йăвăç комбиначĕ, сулахайра „Бољшевик“ йатлă савăт. Комбината тума 6 мĕлйун йахăн, „Бољшевика“ тума виçĕ мĕлйун та çичçĕр пин тенкĕ кайнă. Автосавăтпа, Сталинградри тракăтăр савăчĕпе танлаштарсан ку савăтсем пĕчĕк пек туйăнаççĕ, анчах Чăваш республикишĕн комбинатпа „Бољшевик“ гигантсем пулса тăраççĕ. Бољшевикла хăвăртлăхсемпе ÿсет, сарăлать Çĕмĕрле.

Магнитогорск.

Безбородов çырни тăрăх.

1929-мĕш çул, ийулĕн 30-мĕшĕнче кăлкан çийĕн тÿрех хурса тухнă рељсăсем тăрăх магнитту тĕмисем патне пирвайхи хут пуйăс пырса тăчĕ. Халиччен курман машинăна хирĕç тухса илме айакри йалсенчен казаксемпе кăркăссем пуçтарăннăччĕ. Лашасем пăравуса курсанах ик уран тăратчĕç, çеçенхиреле сиккипе чуптаратчĕç. Верблюдсем те хăрăлтатакан сасăпа çухăрса таратчĕç. Казаксем, кăркăссем, цыгансем, вырăссем те пăравуса сырса илсе алăпа хыпаласа пăхатчĕç.

Çак пĕрремĕш пуйăс Магнитогорск савăтне тума пĕрремĕш рабочисене илсе пычĕ. Кÿршĕри станицăсенчи

хресченсем савӑт тума килнӗ рабочисене ваҕҕи пӗрремӗш хӗрлӗ обозпа тырӑ илсе пычӗҫ.

Пӑравус хыҫҫӑн ҫеҫенхире екскаватӑр йатлӑ машинӑ пынӑ. Екскаватӑр хӑйӗн хурҫӑ урипе ҫӗр чавма тытӑнчӗ. Ҫак ҫивчӗ вӑйлӑ машинӑран хресченсем тӗлӗнетчӗҫ вара. Пӑс кӑларса, хашлатса екскаватӑр хӑйӗн вӑрӑм, ҫирӗп аллине ҫӗр ӑшне чиксе йаратчӗ. Вара пӗр тӑрукӑнах виҫӗ урапа чухлӗ ҫӗре ывӑҫласа илсе ҫӳлеле хӑпартса грузовиксем ҫине тийетчӗ. Ҫӗре ӗмӗрне кӗреҫепе чавса иртернӗ ҫынсен тӗлӗнмелех пулнӑ ҫав!

Епӗ пирвайах Магнитостройра 1930-мӗш ҫулта март уйӑхӗнче пултӑм. Ун чухне тӗмесем тавра нимӗн те ҫукчӗ, ҫеҫенхир сарӑлса выртатчӗ. Пӗр кирпӗчрен тунӑ ҫурт кӑна ларатчӗ. Тата рабочисем ваҕҕи тунӑ бараксем пурччӗ. Ҫынсем пуринчен ытла ҫӗре кӗреҫепе чаватчӗҫ, лашапа турттаратчӗҫ. Екскаватӑрсемпе грузовиксем ҫителӗклӗ марччӗ.

Вунсакӑр уйӑх иртсен епӗ каллех Магнитостройа пытӑм. Епӗ Мускавран тӳрех Магнитогорска кайакан пуйӑспа пытӑм. Ҫитсе пуйӑс ҫинчен антӑм та, тӗлӗнсех кайрӑм. Ман умра темӗн пысӑкӗш хула. Ун урамӗсем тӑрӑх вӗҫе-вӗҫӗн автомобилсем, автобуссем чупаҫҫӗ. Кашни ирехултӑ вырӑнлӑ йероплан Магнитогорскран Мускава вӗҫсе тухса кайат. Кашни кунах кӑнтӑрла тӗлӗнче кӗмӗл кайӑк строитӗлствӑ тӗлӗнчен вӗҫсе иртсе кайат. Никам та пуҫне ҫӗклесе пӑхакан ҫук. Мӗншӗн тесен пурте Ҫвердловск хулинчен почтӑпа пӑсажир турттаракан йероплан килнине пӗлеҫҫӗ. Кӑнтӑрла та, каҫ та тупӑ сасси пек кӗмсӗртетни илтӗнет, хулари пӳртсене чӗтретсе илет. Кунтан та тӗлӗнекенни пӗр ҫын та ҫук. Динамитпа тимӗр рудине ҫӗмӗрнине пурте пӗлеҫҫӗ.

Епӗ строитӗлствӑна курса ҫӳрерӗм. Ҫӳренӗ вӑхӑтра хӑлхана тӗрлӗ чӗлхепе калаҫнисем пырса кӗреҫҫӗ; тутарла, украинӑла, нимӗчле, кӑркӑсла, цыганла, грузинла, йеврейла, вырӑсла калаҫни илтӗнет.

Магнитогорск савӑчӗ пысӑккӑшӗпе пӗтӗм тӗнчере иккӗмӗш савӑт. Пӗтӗм тӗнчипе те Магнитостройран пысӑкрах савӑт пӗрре анчах. Вӑл Америкӑра Гери савӑчӗ. Америкӑ ҫыннисем хӑйсен савӑтне 11 ҫул хушшинче ҫеҫ туса пӗтернӗ. Епӗр Магнитостройа 3 ҫулта туса ҫитернӗ. Магнитогорск савӑтӗнче 8 домнӑ кӑмаки. Ҫак сакӑр кӑмака кашни кунах 12800 тоннӑ тимӗр тӑпри, 7200 тоннӑ кокс, 3200 тоннӑ акшар чулӗ ҫӑтса тӑмала.

Домнă кăмакине машинăсем тимĕр тăпри тăкса тултараççĕ. Машинăсемех ун ăшне кокспа акшар чулне тăкаççĕ. Домнăра кокс çунать те тимĕр тăпри шăранать. Пилĕк сехетрен домнăн айалти пайĕнче шăтăк туса шăраннă чугуна 80 тоннă кĕрекен куркасем çине йухтараççĕ. Магнитогорскри кашни домнă кăмаки талăкне пин те пилĕкçĕр тоннă метал парса тăрать.

Çак 8 домнă кăмаки пурте ĕçлеме пуçласан, вĕсем çулталăкне 2 мĕлйун та 800 пин тоннă чугун парса пымала. Пĕр Магнитогорск савăчĕ кăна çулталăкне пĕтĕм Белги патшалăхĕ 1929 çулта шăратнă чухлĕ чугун шăратса кăларĕ. Польшăна, Италине, тата Саар облăçне пĕрле илсен, вĕсем 1929 çулта шăратса кăларнинчен 500 тоннă ытларах шăратса кăларса парĕ.

Магнитогорскри тĕп електростанци вăйĕ Волхов çинчи електростанци вăйĕнчен пилĕк хут ытларах. Магнитогорскри домнăсем пурте ĕçлеме пуçласан, Магнитогорск станцинчен кашни сехетре метал тийенĕ пуйăс тухса кайса тăмала. Кашни сехет çурăра Çĕпĕртен çĕркăмрăк тата кокс тийесе пыракан пуйăссем пымала.

Савăтра 25 пин рабочи ĕçлемеле. Вĕсем савăтри темĕн пысăкĕш машинăсене, кăмакасене, прокатлă стансене, блумингсене ĕçлеттерсе тăмала.

Магнитогорск тĕмисем хыçĕнче, савăт шавĕ те, тĕтĕмĕ-хăрăмĕ те çитеймен вырăнта социлисăмла хула ÿсет.

Есĕр Совет сойузĕнче çĕнĕрен тунă мĕнле савăтсене, електростанцисене пĕлетĕр, каласа парăр.

Йулашки вăхăтра Магнитогорск савăчĕ кунне миçе пин тоннă чугун парса тăрать?

Тăвата çулта тултарнă пйатилеткăн промышлĕннăç йенĕпе тунă ĕçсен итогĕсем.

(И. Сталин йулташ парти Тĕпкомĕпе Тĕп Контроль комиççин пĕрлешÿлĕ пленумĕнче 1933 ç. йанварĕн 7-мĕшĕнче тунă докладăн сыпăкĕ).

Пйатилеткăна тăвата çулта тултарас тĕлĕшрен промышлĕннăç йенĕпе мĕнле итогсем пулчĕç?

Ку тĕлĕшпе çитĕнÿсем турăмăр-и епĕр?

Турăмăр. Турăмăр çеç те мар, кунта епĕр хамăр кĕтнинчен те, пирĕн партири чи хĕрÿлĕ пуççем кĕтме пултарнинчен те ытларах турăмăр. Куна пирĕн тăшмансем

те йышăнмасăр тăмаççĕ. Пирĕн майлă тăраканнисем ăна йышăнмасăр тăма пушшех те пултараймаççĕ.

Пирĕн хура металлурги—çĕршыва индустрилес ĕçĕн никĕсĕ пулман. Пирĕн халĕ вăл пур.

Пирĕн трактăр промышлĕннăçĕ пулман. Пирĕн халĕ вăл пур.

Пирĕн автомобил промышлĕннăçĕ пулман. Пирĕн халĕ вăл пур.

Пирĕн станоксем тăвас ĕç пулман. Пирĕн халĕ вăл пур.

Пирĕн, чăннипе, хаљхи тапхăра кирлĕ пек хими промышлĕннăçĕ пулман. Пирĕн халĕ вăл пур. Пирĕн, тĕрĕссипе, хаљхи тапхăра тивĕçлĕ йалхуçалăх машинисем тăвакан чăн-чăн промышлĕннăç пулман. Пирĕн халĕ вăл пур.

Пирĕн авиаци промышлĕннăçĕ пулман. Пирĕн халĕ вăл пур.

Електрицă енергине тăвас тĕлĕшрен епĕр чи кайри вырăнта тăнă. Халĕ епĕр малти вырăнсенчен пĕрне тухса тăтăмăр.

Нефтăпа çĕркăмрăкĕ кăларас тĕлĕшрен епĕр кайри вырăнта тăнă. Халĕ епĕр малти вырăнсенчен пĕрне тухса тăтăмăр.

Çĕркăмрăкĕпе металлурги никĕсĕ пирĕн пĕртен-пĕр Украинă анчах пулнă, ăна та пулин аран çеç тытса пынă. Халĕ епĕр çак никĕсе ура çине тăратса çитертĕмĕр çеç те мар, хĕвелтухăçĕнче çĕнĕрен çĕркăмрăкĕпе металлургин тепĕр никĕсне туса хутăмăр, вăл пирĕн çĕршывăн чапĕ пулса тăрат.

Пир-авăр промышлĕннăçĕ йенĕпе пирĕн хамăр çĕршывăн çурçĕр йенчи пĕртен-пĕр никĕсĕ анчах пулнă. Халĕ пирĕн çитес вăхăтрах çĕнĕрен икĕ пир—авăр промышлĕннăç никĕсĕ пулаççĕ: пĕри—Вăтам Азире, тепри—Хĕвеланăç Çĕпĕрте.

Епĕр промышлĕннăçăн çак çĕнĕ пысăк пайĕсене турăмăр çеç мар, тата епĕр вĕсене пысăкăшĕ йенчен пĕтĕм Йевропăри индустрин пысăкăшĕ пĕчĕккĕн курăнакан пулса йулмала турăмăр.

Çаксем вĕсем пурте çакăн патне илсе пычĕç: капиталисла елементсене промышлĕннăçран татăклăнах, пуçĕпех хĕссе кăларнă; социалисăмла промышлĕннăç Совет Сойузĕнчи индустрин пĕртен-пĕр форми пулса тăчĕ.

Çаксем вĕсем пурте çакăн патне илсе пычĕç: пирĕн çĕршыв аграрлă çĕршывран индустрилĕ çĕршыв пулса

тăчĕ, мĕншĕн тесен промышлĕннăç кăларакан продукци виçи йалхуçалăх продукци çумĕнче пйатилеткă пуçламĕшĕ тĕлне (1928 ç.) 48 процент пулнинчен пйатилеткăн тăваттăмĕш çулĕ вĕçне (1932 ç.) 70 процента çитиччен ӳсрĕ.

Çаксем вĕсем пурте çакăн патне илсе пычĕç: пйатилеткăн тăваттăмĕш çулĕ вĕçне пилĕк çул хушшинче тултарма шутласа хунă промышлĕннăç производствин программине 93,7 процент таран тултарма пултартăмăр, промышлĕннăç кăларакан продукци хисепĕ вăрçăчченхинчен виçĕ хут ытла, 1928 мĕш çултинчен икĕ хут ытла ӳсрĕ. Йăвăр промышлĕннăç программине илес пулсан, ку тĕлĕшпе епĕр пилĕкçуллăх плана 108 процент тултартăмăр. Чăнах та епĕр пйатилеткă программине пĕтĕмпе илес пулсан 6 процент тултараймарăмăр. Анчах вăл çакăнтан килнĕ: хамăрпа кӳршĕлĕ патшалăхсем пирĕнпе пĕр-пĕрин çине тапăнмала мар тăвасси çинчен пактсем тăвассинчен пăрăннă пирки тата Инçетри Хĕвелтухăçĕнче ĕçсем шалала кĕрсе пынă пирки, пирĕн васкасах чылай савăтсене, хамăрăн сыхлăха вăйлатас шутпа хаљхи тапхăра тивĕçлĕ сыхлăх хатĕрĕсем тăвас ĕçе куçармала пулчĕ. Çакна кура савăтсене тепĕр ĕçе куçарнă пирки вара,— çĕнĕ ĕçе куçнă май хатĕрленмели тапхăр та кирлĕ пулнă,— ку савăтсем тăвата уйăх хушши ытти продукцине туса кăларма пултараймарĕç. Çакăн пек пулни вăл пилĕкçуллăх планăн пĕтĕм производствă программине 1932-мĕш çул хушшинче туса çитерес ĕçре палăрмасăр тăма пултарайман. Çак операципе вара епĕр çĕрщыв сыхлăхне тĕреклетес ĕçри çитменлĕхе пĕтĕмпех тултарса çитерме пултартăмăр. Анчах вăл пилĕкçуллăх план тăрăх тумали производствă программине тултарас ĕç çинче палăрмасăр иртме пултарайман. Сăмах та çук, ĕçсем çакăн пек килсе тухман пулсан, епĕр пилĕкçуллăх планăн цифрлă пайне туса çитереттĕмĕрччĕ çеç те мар, тата иртсе те кайнă пулăттăмăр.

Йулашкинчен тата, çакăн пек тунипе Совет Сойузĕ хăйне сыхлас йенчен вăйсăр, хатĕрленсе çитмен çершыв пулнинчен хăйĕн сыхлăхĕ тĕлĕшĕнчен вăйлă çĕршыв, ăнсăртран килсе тухма пултаракан пур инкеке хирĕç тăма хатĕр тăракан çĕршыв, хаљхи тапхăра тивĕçлĕ сыхлăх хатĕрĕсене йышлăн тума пултаракан çĕршыв пулса тăчĕ, вăл хăй çине тапăнас тăвас пулсан, çак хатĕрсемпе хăй çарне çителĕклĕ таран хĕçпăшаллантарма пултарать.

Çакăн пек ĕнтĕ пйатилеткăна промышлĕннăç йенĕпе тултарнине кăтартакан итогсем.

Ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатса кулътурлăхне ӳстерсе пырасси.

(Сталин йулташ партин XVII-мĕш сиесĕнче ПСК(б)П Тĕпкомĕн ĕçĕсем çинчен тунă отчотлă докладран).

Çапла ĕнтĕ епĕр пирĕн промышлĕннăçпа йалхуçалăхĕнче ĕçсем мĕнле пынине, отчотлă вăхăтра вĕсем мĕнле ӳснине, вĕсем халъхи вăхăтра мĕнле тăнине пăхса тухрăмăр.

... Кулак пусмăрĕ пĕтнĕ хыççăн, йалта чухăнлăх та пĕтрĕ. Кирек мĕнле хресчен те, колхозник йе уйрăм хуçалăхлă хресчен, вăл хăй ĕçлеме тăрăшат пулсан, найанланмаст, бродйагă пек çапкаланса çӳремест, колхоз пурлăхне çаратмаст пулсан,—çын пек пурăнма май илчĕ.

Експлоатацине пĕтерни, хулара ĕççĕрлĕхе пĕтерни, йалта чухăнлăха пĕтерни—çаксем вĕсем ĕçхалăх пурнăçĕнче тем пек „демократилĕ" буржуалă патшалăх вырăнĕнче шутланакан патшалăхри рабочипе хресченсем шухăшлама та пултарайман историлĕ çитĕнӳсем пулаççĕ.

Пирĕн пысăк хуласемпе промышлĕннăç центрĕсен сăнсăпачĕ улшăнчĕ. Буржуала патшалăхсенчи пысăк хуласен йаланхи сăн-сăпачĕ вăл—путăк-шатăклăх—хула хыçĕсене вырнаçнă рабочи квартăлĕсем пулаççĕ. Çак квартăлсенче тĕттĕм, чĕрĕ, пуринчен ытларах путвалсем, ишĕлсе аннă çуртсем пулаççĕ, кунта йаланхи пекех чухăн çынсем пылчăк ăшĕнче çăрăнса, хăйсен пурнăçне ылханса пурăнаççĕ. ССРС-че револъуци çакăн пек вырăнсене пĕтерчĕ. Вĕсен вырăнне халъ çĕнĕрен туса лартнă рабочи квартăлĕсем йышăннă, чылай чухне тата çак квартăлсем хула центрĕсенчен те лайăхрах курăнаççĕ.

Тата та ытларах йал сăн-сăпачĕ улшăнчĕ. Кивĕ йал, самăй курăнакан вырăнта чиркӳ, малти вырăнта уретник, пуп, кулак пурăнакан лайăх çуртсем пулнă йал, кайри вырăнта хресченсен ишĕлсе аннă пӳрчĕ ларнă йал—пĕтме пуçлат. Ун вырăнне çĕнĕ йал йышăнат. Ку йалти обчăлăхпа хуçалăх хуралчĕсем, ку йалта клубсем, радио, кино, шкулсем, библиотекăсем, йаçлисем, ку йалта трактăрсем, комбайнсем, молотилкăсем, автомобилсем. Хисеплĕ çын вырăнче шутланнă кулак-експлоататăр, ростовшчик-йунсăхан, купса-çпекулъант, пуп, уретник йышши кивĕ сăн-сăпатсем пĕтнĕ. Халĕ хисеплĕ çынсем—колхозсемпе совхозсенче, шкулсемпе клубсенче ĕçлекенсем, аслă трактористсемпе комбайнĕрсем, уйхир ĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх бригадирĕсем, колхоз уйхир ударникĕсемпе ударницăсем пулаççĕ.

Хулапа йал хушшинчи хирĕçӳ пĕтсе пыратӑ. Хула ĕнтĕ халĕ хресчен куçĕнче експлоатаци центрĕ пулма пăрахатӑ. Хулапа йал хушшинче хуçалăхпа куљтурăна çыхăнтарса тăракан çип ытларан та ытларах хыгатӑ. Хулапа унăн промышлĕннăçĕнчен йал—трактăрсем, йалхуçалăх машинисем, автомобилсем, çынсем, хатĕрсем илсе пулăшу куратӑ. Йалăн халĕ ĕнтĕ хăйĕн те промышлĕннăçĕ пур: машинăпа тракгăр станцисем, ремонт маçтерскойĕсем, колхозсенчи тĕрлĕрен йышши промышлĕннăç предприйатисем, пĕчĕкçеç електростанцисем т. ыт. те. Хулапа йал куљтурă тĕлĕшĕнчен уйрăм тăни пĕтсе пыратӑ. Çакăн пек ĕнтĕ ĕçхалăхĕн хăйĕн пурнăçне, йăлине, куљтурине лайăхлатас йенĕпе тунă çитĕнӳсем.

... Савăнтаракан йапала, йалта куљтурăлăх ӳссе пынине кăтартакан паллă пулса тăракан йапала вырăнне хурса, хĕрарăм колхозницăсен обчăлăхпа организацилĕ ĕçсенчи хастарлăхĕ ӳснине паллă тума тивĕçлĕ. Епĕр пĕлетпĕр хĕрарăм колхозницăсенчен хаљхи вăхăтра 6000 хĕрарăм колхоз председателĕсем, 60000 ытла колхоз правлени членĕсем, 28000 бригадирсем, 100 000 звено организатăрĕсем, 9000 колхозсен таварлă фермисен пуçлăхĕсем, 7000 трактористем пулса тăраççĕ. Çак цифрсем, паллах, пур çитĕнӳсене те кăтартса параймаççĕ. Анчах вĕсенче кăтартнă сахаллăшĕ те йалти куљтурăлăх пысăккăн ӳсни çинчен çителĕклĕ уççăн каласа паратӑ. Ку пысăк вырăн йышăнса тăратӑ, йулташсем. Вăл çакăн пирки пысăк вырăн йышăнса тăратӑ, мĕншĕн тесен хĕрарăмсем вĕсем пирĕн çĕршывра халăх йышĕн çурри пулса тăраççĕ, вĕсем калама çук пысăк ĕççарĕ пулса тăраççĕ, вĕсен пирĕн ача пăчасене, пирĕн çитес ăрăва, урăхла каласан, пирĕн малашлăха пăхса ӳстермеле. Акă мĕншĕн ĕнтĕ епĕр çак калама çук пысăк çара тĕттĕмлĕхре тата ним пĕлменлĕхре сĕнтĕркесе пурăнма пама пултараймастпăр. Акă мĕншĕн ĕнтĕ ĕçхĕрарăмĕсен обчăлă хастарлăхĕ ӳссе пынине тата вĕсем йертсе пыракан вырăнсене тухса пынине, çаксене пурне те пирĕн куљтурă ӳсĕмне кăтартакан ним иккĕленмеле мар пысăк паллăсем вырăнне хурса хĕрӳлĕн саламламала. (Н у м а й ч ч е н а л ă ç у п а ç ç ĕ).

Тĕнчери капиталисăмăн тăсăлса пыракан кризисĕ тата Совет Сойузĕ.

(И. В. Сталин партин XVII-мĕш сиесĕнче тунă докладран).

Иулташсем! 16-мĕш сиес пулнăранпа виçĕ çул ытларах иртрĕ. Пысăках та тапхăр мар. Анчах вăл ытти хут хăш гапхăртан та туллирех. Ман шутпа, йулашки вунă çул хушшинчи тапхăрсенчен пĕри те ĕçсем тĕлĕшĕнчен çак тапхăр пек пуйан пулман.

Економикă тĕлĕшĕнчен çак çулсем тĕнчери економикăлă кризис малала тăсăлса пынă çулсем пулчĕç. Кризис промышлĕннăçа анчах мар, йалхуçалăхне те пĕтĕмĕшпех çавăрса илчĕ. Кризис производствăпа суту-илў ĕçне çеç мар кисрентерчĕ. Вăл кредитпа укçа-тенкĕ çаврăнăçĕ таврашне те куçса ўксе, кунта патшалăхсем хушшинче кредитпа валута тĕлĕшĕнчен пулнă çыхăнусене ўпĕнтерсе йачĕ. Иртнĕ вăхăтра хăшпĕр çĕрте: тĕнчере економикăлă кризис пур-и, çук-и тесе тавлашнă пулсан,—хал ĕнтĕ ун пирки тавлашмаççĕ, мĕншĕн тесен кризис пурри тата унăн çĕмĕренле ĕçĕсем ытла та уççăнах палăрса тăраççĕ. Хал ĕнтĕ урăххи çинчен тавлашаççĕ—кризисран тухма пур-и, çук-и, тухма пулат пулсан,—мĕнле майпа тухма пулат.

Политикă тĕлĕшĕнчен çак çулсем капиталисла çĕршывсем хушшинчи хутшăнусемпе çак çĕршывсем ăшĕнчи хутшăнусем малалах çивĕчленсе пынă çулсем пулчĕç. Йапонипе Китай хушшинчи вăрçă тата Йапони Манчжурийе çавăрса илни,—вĕсем Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи хутшăнусене çивĕчлентерсе йани; Германире фашисăм çĕнтерни тата çавăнтах ĕлĕкхишĕн тавăрас шухăш (реванш шухăшĕ) çĕнтерсе илни,—вĕсем Йевропăри хутшăнусене çивĕчлентерсе йани; Йапонипе Германи Нацисен Лигинчен тухни,—вăл хĕçпăшалланассине ўстерес ĕçе тата империалисăм вăрçине хатĕрленес ĕçе çĕнĕрен хавхалантарса йани; Испанире фашисăм айала пулни,—çак вара революцилĕ кризис çывхарса килнине тата фашисăм ĕмĕрĕ нумайа пырас çуккине ытлашшипех кăтартса пани,—çаксем пулаççĕ ĕнтĕ çак отчот тапхăрĕнчи чи паллăрах фактсем. Çавăнпа буржуалă пацифисăм сывлăшĕ тухса кайасси патнех çитнинчен, хĕçпăшалсăрланас шухăшсем выранне вара пушшех те хĕçпăшалланас, хĕçпăшалланассине вăйлатас шухăшсем ўссе пынинчен нимĕн тĕлĕнмели те çук.

Çакнашкал економикăла кисренўсен тата вăрçăлă политикăлă катастрофăсен тăвăллă хумĕсем хушшинче Совет

Сойузĕ уйрăмăнах çирĕп чулту пек тăрса, хăйĕн ĕçне— социалисăм тăвас ĕçпе лăпкă саманашăн кĕрешес ĕçе туса пырат̆. Унта, капиталисла çĕршывсенче, хаљ те економикăлă кризис хирсе тăрат̆ пулсассăн, Совет Сойузĕнче вара промышлĕннăç йенчен те, йалхуçалăх йенчен те ӳсĕм пырат̆. Унта, капиталисла çĕршывсенче, пусмăрти çĕршывсемпе пĕтĕм тĕнчене çĕнĕрен валеçсе илессишĕн хыпăнса ӳксех вăрçа хатĕрленеççĕ пулсассăн, Совет Сойузĕ вара тăтăшах вăрçă хăрушлăхне хирĕç, лăпкă пурнăçшăн çине тăрсах кĕрешсе пырат̆; ку тĕлĕшпе Совет Сойузĕ тăрăшни пĕртте ăнăçлă пулмарĕ тесе калама çук.

Çакнашкал ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчери лару-тăрун хаљхи вăхăтри сăн-сăпачĕ.

Тĕнчипех, пролетарисем, пĕрлешĕр.

(Йурă).

Тĕнчипех, пролетарисем, пĕрлешĕр!
Пирĕн вăй вăл, пирĕн ирĕк, пирĕн влаç.
Пур вăйранах, коммунарсем, кĕрешĕр—
Тăшмана хĕрхенмешкĕн йурамаст̆.
Ĕççыннисем, хĕçпăшалсем алла илĕр,
Тăпăлтарăр палачсене тĕпренех.
Тĕнчипех, пролетарисем, пĕрлешĕр,
Кар тăрсассăн хĕвел пăхĕ хĕрӳрех.
Тĕнчипех, пролетарисем, пĕрлешĕр!
Пирĕн вăй вăл, пирĕн ирĕк, пирĕн йĕрке.
Татăклăнах çĕнтермешкĕн кĕрешĕр.
Пирĕнпе марĕ—вăл тăшман, вăл пĕтмелех.
Харампырсем çине тĕллĕр хĕçпăшала,
Ленин панă йалав пирĕн алăра.
Тĕнчипех, пролетарисем, пĕрлешĕр.
Пĕр коммуншăн çапăçмашкăн малала!
Тĕнчипех, пролетарисем, пĕрлешĕр!
Пирĕн вăй вăл, пирĕн ирĕк, пирĕн влаç.
Пур вăйранах, коммунарсем, кĕрешĕр—
Тăшмана вĕт хĕрхенмешкĕн йурамаст̆.
Ĕççыннисем, хĕçпăшалсем алла илĕр,
Тăпăлтарар палачсене тĕпренех.
Тĕнчипех, пролетарисем, пĕрлешĕр,
Çĕнӳ кунĕ хĕвел пăхĕ хĕрӳрех!

ТУПМАЛИ

Стр.

1. Елĕк. Хаљ (сăвă). А. Отачкин 3
2. Уделни хресченĕсем. П. Йевграфăва. 3
3. Удел хресченсен йурри 5
4. Куланайшăн Ç. В. Елкер 6
5. Куланай пуçтарни. И. Вољнăв 8
6. Улпут хресченĕ (сăвă) 10
7. Турă йачĕпе, патша хушнипе. Иван Мучи . . . 11
8. Улпут çыннипе улпутăн йытă çурисем. В. Г. Короленко 12
9. Атăл йурри (сăвă) 14
10. Ĕлĕкхи пурнăç 14
11. Чăвашсен ĕлĕкхи пурнăçĕ 16
12. Кам пахчи? А. Çерафимович 17
13. Трахомă çинчен мĕн астумала 18
14. Пупсем халăха йепле улталаççĕ. А. Çерафимович . 19
15. Пуппа унăн тарçи балда. А. С. Пушкин 21
16. Пĕрлешни çĕнтерчĕ 25
17. Майăн пĕрремĕшĕ. А. М. Горйки 27
18. Шуçăм килнĕ чух. Ç. В. Елкер 30
19. „Пире ес хаљ кирлĕ мар“ 32
20. Май уйавĕ (сăвă). И. С. Тукташ 34
21. Земски начаљникпе паллашни 34
22. Халăх патне. В. И. Ленин 36
23. Шуррисемпе çапăçни. В. И. Краснов (Асли) . . 38
24. Ĕпхӳ патĕнчи çапăçу. В. И. Краснов (Асли) . . 40
25. Ирĕклĕхшĕн çапăçакансем 42
26. Хĕрлĕ часовой (сăвă). Уйăп Мишши. 44
27. К. Й. Ворошилăв 45
28. Пĕтĕм Раççейри Тĕпĕçтăвком президиумĕн 1919 ç. нойаберĕн 27-мĕшĕнче пулнă ларăвĕн 68 № протоколĕнчен çырса илни. 46
29. Шанчăклă хурал 47
30. Контрибуци. Паймен 49
31. Бољшевик Марйе. А. Неверăв 51
32. Наçтук. И. П. Пинер 54
33. Октабĕр хĕрарăмĕ (сăвă). Уйăп Мишши. . . . 56
34. Ленин 57
35. 1924-мĕш çул, йанварĕн 21-мĕшĕ. 58
36. Иоçиф Виссарионович Сталин 59

37. Ленин (сăвă) 60
38. Ударниксен маршĕ (сăвă). А. Гидаш. 60
39. Пирĕн çĕршыв 61
40. Автобуспа. Уйăп Мишши сăвви тăрăх . . . 63
41. Пирĕн çывăхри задачă—пур колхозниксене те тĕреклĕ пурăнакан тăвасси. И. В. Сталин. 63
42. Кўршĕсем. В. Рзай 66
43. Колхоз пухăвĕнче. Н. К. Патман 70
44. Йурă. Савкай 73
45. Такăр çул. Ç. Шăпчăк 73
46. Кахалăн ернере миçе ĕçкунĕ? А. Григорйĕв . . 74
47. Тракторискă Кĕтерне. И. Ваçилйĕв, К. Минайĕв . 75
48. Урине инке чăххисем 77
49. Колхоз çаранĕнче 78
50. Йурă 78
51. Ĕне вити утă перекетлени 79
52. Илйин йулташпа Хĕритун çинчен. Ç. Шăпчăк . . 79
53. Револуци пуличчен 82
54. Револуци пулсан 83
55. Чăваш арăмне (сăва). Çеçпĕл М. 85
56. Ĕçхĕрарăм йурри 86
57. Хĕрлĕ улах. Л. М'аркăв 86
58. Вĕçне çитиччен, татăклăнах çĕнтериччен . . . . Дорошенкă Маŷрунĕ. 89
59. Тырпул маршĕ (сăвă). А. Петтоки 93
60. Асап витĕр. В. Алагĕр 93
61. Коминтерн (йурă). Ваçанкка куçарнă 96
62. Икĕ гигант. А. Таҥков. 97
63. Магнитогорск. Безбородăв çырни тăрăх . . . 97
64. Тăвата çулта тултарнă пйатилеткăн промышлĕннăç йенĕпе тунă ĕçсен итогĕсем. И.В. Сталин . . . 99
65. Ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатса култтурлăхне ўстерсе пырасси. И. В. Сталин докладĕнчен 102
66. Тĕнчери капиталисăмăн тăсăлса пыракан кризисĕ тата Совет сойузĕ. И. В. Сталин 104
67. Тĕнчипех, пролетарисем, пĕрлешĕр (йурă) . . . 105

Отв. редактор Н. Т. ВАСЯНКА.
Техн. редактор Н. С. СТЕПАНОВ.

Сдано в набор 4/XII—34 г. Подписано к печати 7/II—35 г.

Формат бум. 62×94/16. Тираж 20000 экз. Печ. листов 6 3/4. В печ. листе 38.016 знаков.
Чувашгиз № 194. Индекс У—3. Заказ № 3029. Чувашлит № 1498.

Типография № 2 Чувашского Государственного Издательства в гор. Алатыре, Чувашской АССР.

Хакĕ 1 тенкĕ
Цена 1 руб.
Переплет 30 коп.

А. С. ОТАЧКИН

КНИГА ДЛЯ ЧТЕНИЯ

УЧЕБНИК ДЛЯ ШКОЛ МАЛОГРАМОТНЫХ

ЧУВАШГИЗ 1935 ЧЕБОКСАРЫ